К 83.3(2)
А 86
30985-чув

Критика
Литература тёпчевё

Юрий АРТЕМЬЕВ

ЫТАРАЙМИ ПУРНĂÇ ТЁСЁСЕМ

Ур 30985 чув

Возвратите книгу не позже
обозначенного здесь срока

кф
К
83.3(2)
А86

Критика
Литература тĕпчевĕ

Юрий АРТЕМЬЕВ

ЫТАРАЙМИ ПУРНĂÇ ТĔСĔСЕМ

20

Статьясемпе
тĕрленчĕксем

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1988

ББК 84. Чув 7
А 86

83.3(2=чув)7
8С(чув)

ПРОВЕРЕНО
20 01

А/х 30985-чув
Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

А 4702650000—036 54—88
М 136 (03)—88

ISBN 5-7670-00-47-6

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1988 ç.

ТАЛАНТ ВИÇИ — ГРАЖДАНЛĂХ

Кашни талантлă произведениех хăйне евĕрлĕ илемлĕх тĕнчипе танлаштарма май килет. Ку пурте пĕлсе тăракан чăнлăх тейĕпĕр. Анчах та талант тенине тĕрлĕ çын тĕрлĕ ăнланнине тĕл пулатăн. Пĕри ăна писатель ăсталăхĕпе çыхăнтарать, тепри куçа шартаракан илемлĕхре курать, виççĕмĕшĕ автор эрудицийĕпе интеллектне пăхса хаклать. Эпир вара хăрахьенлĕх сулăмне лекесрен пĕртте шикленмесĕр çапла каланă пулăттăмăр: гражданлăхсăр талант пулма пултараймасть.

Чăваш литературин классикин «ылтăн фончĕ» чăнчăн гражданла кăмăл-туйăм таппиллĕ произведенисенчен тăрать. Кунта кашни пысăк талантăн тӳпи пур. Паянхи чăваш çыравçисемшĕн К. Иванов, Çеçпĕл Мишши, С. Элкер, Митта Ваçлейĕ, П. Хусанкай çырнисем — гражданин пулма вĕрентекен пысăк пĕлтерĕшлĕ ырă тĕслĕхсем. Анчах та çав традицисене пур чухне те асра тытса, кирлĕ пек аталантараятпăр-ши эпир?

Чăваш çырулăхĕ мĕн авалтан кӳршĕлле вырăс литературин пуянлăхне ăша хывса, унран вĕренсе, малалла кайса пынă. Поэта «тухиччен» маларах Гражданин пулма чĕнекен вырăс поэчĕ Н. Некрасов, сăмахран, К. Иванов поэзине хăватлă витĕм кӳнĕ. Çакна эпир чăваш сăвăçин «Хальхи самана» ятлă публицистикăлла поэминче витĕр куратпăр. Автор позицийĕ уçăмлă кунта: вăл чăваш культурин улăпне, ун пархатарлă ĕçнехĕлне тивĕçлипех мухтать. Çак «ырă чăваш» çĕнĕ ĕмĕр пуçларĕ, тет. Тинех «шухăш ӳкрĕ пуç çине», вара эпир те, чăвашсем, хамăр çине тиркевлĕ куçпа тимлесе пăхрăмăр. Анчах та «халăх ĕçне тăвакансемпе» юнашарах чунĕ хытнă çынсем те тапаланма пуçланă иккен:

Тĕрлĕ çутă тӳмешĕн
Тинки тухать ав лешĕн;

Чăвашла та калаçмасть,
Тăванне те астумасть.

Пĕтĕм чăваш халăх культурин масштабĕпе шухăшлать автор, ун малаш çул-йĕрне тишкерет. Анчах та мĕн чухлĕ чăрмав-йывăрлăх çав çул çинче?!

Е çĕнĕ саманапа пĕрле килнĕ Çеçпĕл Мишшин пултарулăхне аса илер. Йĕри-тавра ирĕклĕ пурнăç чĕрĕлсе вăй илнĕ вăхăтра поэт, пуласлăха çирĕп шанса, ăна хăватлă гимн халаллать. Çав вăхăтрах вăл, чăн-чăн Гражданин, çакăн пек йĕркесене чун-чĕререн сăрхăнтарса кăларать:

Чăваш! Чăваш!
Чăваш! Чăваш!..
Сан ыйхăллă уюсене,
Сан лăпкă, кăмăллă, ачаш,
Йăваш-айван ялусене
Савмашкăн манăн халăм çук.
Чăваш тĕнчи çывхарнă чух
Чăвашăн чунĕ йăваш-ши?
Анаслă ыйăхăн ăшши —
Вырăнлă-ши?.. Вырăнлă-ши?..

Кунта революцилле демократи çулпуçĕ Н. Чернышевский хăйĕн тăван вырăс халăхĕ пирки каланă сăмахсем ирĕксĕрех аса килеççĕ: «Мĕскĕн наци, чурасен нацийĕ, чи çӳлтен пуçласа, чăн аяла çитиччен — пурте чурасем». Ленин çак сăмахсенче писатель тăван çĕршыва чăннипех те юратнине, халăхăн революцилле шухăшкăмăлĕ вăйсăр пулнăран чунне ыраттарса пăшăрханнине курать.

Чăн та ĕнтĕ, кунашкал йĕркесене Чернышевский хăш вăхăтра каланине манма юрамасть. Утопилле социализм классикĕ пĕтĕм чун-хавалĕпе революци тăвăлĕ килсе чуралăх никĕсне аркатасса кĕтнĕ. Анчах та унăн шанчăкĕ вăл вăхăтра пурнăçланма пултарайман-ха. Çакăн пекех Çеçпĕл те çак сăввине икĕ самана хаяррăн, уççăн, куçа-куçăн тăрса тытăçнă вăхăтра çырнă.

Классикăлла реализм сулмаклăхĕ ытларах чуралăха хӳтĕлекен социаллă йĕркесене, иртнĕ самана каяшăсемпе тӳнтерĕшĕсене яр-уççăн питленинче палăрнă пулсан, социализмла реализм паянхи пурнăçăн пĕтĕм ырă, паха, малашлăхлă пулăмĕсене хӳтĕлет, гуманизм идейисене аслăлантарать. Анчах та ку аталану çулĕ çинчи йывăрлăхсемпе чăрмавсене шăлса хурса, пурнăçа хитрелетсе, «пылаклатса» сăрламаллине пĕлтермест-ха.

Социализмла реализм эстетикинче тĕп вырăн йышăнакан пархатарлă герой пĕлтерĕшĕ кунран-кун ӳссех пырать. Çак геройăн сăнарĕ самана утăмĕпе пĕрле улшăнать, писательсен кашни ăрăвĕ ун сăн-сăпатне çĕнĕ йĕрсем хушать, пуянлатать. Çавăнпа та кулленхи критикăпа литература теорийĕн чи малтанхи тивĕçĕ — тăван çырулăх аталанăвĕнчи çĕнĕлĕхсене вăхăтра асăрхасси, тĕрĕс хак парасси, вĕсен малаш çул-йĕрне палăртасси.

Шел пулин те, юлашки вăхăтра пирĕн кулленхи тишкерӳ ĕçĕнче темĕнле хăрахьенлĕрех туртăм пурри уççăнах сисĕнчĕ. Критика статйи çыракансем ытларах пĕр авторсен кĕнекисем пирки калаçаççĕ. Уйрăмах ятлăсумлă прозаиксен хайлавĕсем куç тĕлне пулаççĕ — обзорсенче те, ахаль статьясенче те. Хăшĕсем, тен, çакна произведенисем çулсерен нумай пичетленнипе, çавна пула пурне те тишкерме май килменнипе тӳрре кăларма пăхĕç. Чăн та ĕнтĕ, юлашки пилĕк çул хушшинче кăна «Ялав» журнал вăтăра яхăн çĕнĕ повесть пичетлерĕ. «Тăван Атăлта» вăтамран тепĕр çавăн чухлĕ повесть кун çути курнă пулсан, кунта критиксем валли ĕç пайтах.

1985 çулхи июль уйăхĕнче СССР писателĕсен Союзĕ çумĕнчи критикăпа литературоведени совечĕн черетлĕ пленумĕ пулса иртрĕ. Пленумра тунă докладсенче тата сӳтсе-явура КПСС Тĕп Комитечĕн Апрельти (1985 ç.) Пленумĕ литераторсемпе ытти искусство ĕçченĕсен умне кăларса тăратнă пысăк задачăсем çинчен сăмах пычĕ. М. С. Горбачев пирĕн общество прогресĕнче хальхи вăхăтра **этем факторĕ** уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине пĕрре çеç мар палăртса каларĕ. Ку ĕнтĕ вăл чăн малтан писательсене — этем чунĕн инженерĕсене — пырса тивет, творчество ĕçĕнче усă курман е «уçман» резервсене çине тăрса ĕçе кӳлме хистет. Пленум хальхи нумай наципллĕ совет прозин ĕç-хĕлне, шыравĕсене тишкерчĕ, аталанма чăрмантаракан пулăмсене тимлерĕ. Сӳтсе явнă ыйтусенчен уйрăмах пĕрне палăртас килет. Критика витĕмне сулăмлатас тесен, ун çинчен сăмах ваклани çителĕксĕр, çине тăрса, çанă тавăрса ĕçлемелле текен шухăш ку. Чăн малтан критика стильне тĕпрен улăштармалла: тивĕçсĕр мухтани, юрăхсăррине чаплă хак пани е авторăн сумне кура ун кĕнекине пахалани калама çук сиенлĕ ĕç. «Халлĕхе критикăран çӳллĕрех тăракан, урăхла каласан «броньпа витĕннĕ» авторсем пур пулсан, ку вăл хăшпĕрисем «сăмахпа

взятка илнине» пĕлтермест-и вара?»—терĕ тутарсен критикĕ Рафаэль Мустафин.

Ятлă-сумлă писатель, пĕр-пĕр лауреат е пысăк вырăн йышăнакан автор романне мухтаса çырасси йывăр ĕçех мар, паллах. Анчах та ялан ырласа калаçни, инерципе пахалани писатель ятне хрестоматилентерсе яма е, урăхла каласан, хăй пурăннă чухнех «классика» тухас енне сулăнтарма пултарать. Нумай-нумай авторсемпе вĕсен произведенийĕсем вара çулсеренех критика куçĕ тĕлне пулмаççĕ, «манăçаççĕ». Çавна пула тăван литературăн сăн-сăпачĕ туллин палăрмасть, унăн паха енĕсем пĕтĕмпех куç умне тухаймаççĕ. Уйрăмах творчествăри çамрăксене ăсме чăрмантарать ку.

Акă, тĕслĕхрен, юлашки çулсенче пирĕн критика асăрхасах кайман ятсем пичетре час-часах курăнма пуçларĕç. Кунта Д. Гордеева, В. Енĕше, Н. Максимова, В. Петрова асăнмалла. П. Афанасьев, акă, поэзире те, драматургире те вăй хурса пăхнă автор, повеçсемпе калавсем çырать. Пĕр жанр аниче тĕпленсе ĕçлеме пуçличчен, хăйĕн тĕрекне туйса иличчен, çыравçăсенчен чылайăшĕ çапла сапаланарах ĕçлеççĕ, çулне-йĕрне шыраççĕ.

Литературăра кашни çыравçах çĕнĕ çул уçаймĕ. Ку — паллă. Чăн-чăн талант хăйĕн çĕнĕ сăмахне ыттисен орбитин вăйăм-туртăмне çĕнтерсе, унтан «хăтăлсан» анчах калама пултарать. Çĕнĕ сăнарсем, пач хăйне евĕрлĕ илемлĕх тĕнчи, гражданла темперамент пирки сăмах пырать. Çак енчен пăхсан, чăваш прозинче те юлашки çулсенче хăшпĕр шанчăк паракан туртăм-сулăмсем палăрнине асăрхатăн. Çамрăкрах авторсенчен хăшпĕрисем стильпе поэтикăна «çĕнетес» тĕлĕшпе çине тăрсах ĕçлени хытă сисĕнет. Виталий Енĕшĕн «Вучах çути» повеçне «Волга» журнал вырăсла куçарса пичетлесен, удмуртсен хальхи паллă критикĕ А. Шкляев, ăна çийĕнчех асăрхаса, пахаланăччĕ. Хамăр тишкерӳçĕсем вара çак повеçе тимлĕ вуласа тухса хак парăмарĕç курăнать-ха. Çавăнпа ку произведени пирки эпĕ кăштах чарăнса тăрасшăн.

В. Енĕш, ку таранччен ытларах сатирăпа юмор лаççинче ĕçленĕскер, шахвăртса йĕплекен е анекдотларах калавсемпе фельетонсем çыратчĕ. Тен, çавна пулах критиксем те «çĕнĕ» жанра куçнă авторăн хайлавĕсене тишкерсе татăклă сăмах калама тăхтасарах тăчĕç.

Чăн малтанах çакна калас килет: «Вучах çути» повесть пĕрре ларса, сюжета çеç йĕрлесе, вуласа тухмал-

лискер мар. Çиелтен пăхсан, конфликт таврашĕ те курăнсах каймасть-и, тен. Çав вăхăтрах повестьпе тĕплĕн паллашсан, хамăр проза чăн-чăн пысăк литература енне сулăннине лайăх туйса илетĕн. Ача чухнехине, пулни-иртнине аса илсе çырнă автобиографилле хайлавсем сахал мар ĕнтĕ халь пирĕн. Сăмахран, чи паллăраххисене çеç асăнăпăр, акă: Трубина Мархвипе Хумма Çеменĕн «Ача чухнехи» повеçĕсем е С. Асланăн «Куракка» калавĕ. Пур-и-ха апла пулсан Енĕш повеçĕнче мĕнле-тĕр хăйнеевĕрлĕх? Чăн малтан произведени фабулине ăсталама çĕнĕлле майсем тупнине палăртмалла. Пĕчĕк Вихтĕрĕн, тĕп сăнарăн, аталанăвне вăхăт шăвăмĕпе килĕшӳллĕ, кун хыççăн кун йĕрлесе ӳкерсе кăтартман кунта. Пирĕн умра паянхи Вихтĕр, хамăр саманташ, вăл тахçанхине чун куçĕпе тинкерсе пăхать. Пурнăç «ванчăкĕсем», мозаика пек, этем асĕнче упранаççĕ. Тăван «вучах çутинче» тахçанхи, асра юлни — ырри те, усалли те — витĕр курăнать. Тăван çĕршыв тăван килтен, ĕçе юратма, чыса упрама вĕрентнĕ аттеаннерен, пӳрт умне хăв лартнă тиреклĕнчен пуçланнине тарăнрах ăнкарса илме Вихтĕр кунçулĕ пулăшать. Кайăк чĕппи йăва ăшшипе тĕкленсе çирĕпленнĕ хыççăн çеç вĕçеве тухать. Çавăн пекех кашни çыннăн хăйĕн йăви, «пĕчĕк çĕршывĕ» е ачалăх сăпки пур. Ăна юратма, хаклама вĕренеймен этем Тăван çĕршывне те хисеплемĕ. Вихтĕрĕн «пĕчĕк çĕршывĕ» анлă пĕлтерĕшлĕ. Вăл тăван вучахпа çуралнă ял çеç мар, пĕтĕм чăваш çĕрĕшывĕпе чăваш халăхĕ те. Этем тăван вучах çутипе ăшшине чунĕнче упранăран, чăн-чăн патриот пулса ӳснĕ.

Вăхăтне кура Вихтĕрĕн, хăйĕн тантăшĕсем пекех, ĕçре пиçĕхсе ӳсме тивнĕ. Вăрçăн хăрушă та йывăр çулĕсем ун асне нихçан манăçми кĕрсе юлнă. Çапах та, калăпăр, Левен Микулккипе танлаштарсан, Вихтĕр телейлĕ ача — вăл вăрçăран таврăннă ашшĕн хӳтлĕхне туять. Кулăш ăсти Енĕш, «Капкăнри» пек, вулакана кăштах култарса илем-ха тесе тăрмашни сисĕнмест кунта. Темле чуна пăчăртакан, пыра каплантаракан шӳт стиль палăрăмĕ пек туйăнать. Акă, сăмахран, кунсеренех пӳртре пĕччен ларса йăлăхнă çытма йĕмлĕ пĕчĕк Вихтĕр хăйсем патне хĕрлĕ çăлтăрлă çĕлĕк тăхăннă, кутамккаллă салтак кĕнине курать. Лешĕ: «Кам ачи эс?»—тесе ыйтсан, «Çтаппан Кĕркурийĕн»,—тет вăл. «Аçу ăçта, хăçан килет?»—тесен, «нимĕçсем патĕнче, кĕçнерникун килет»,—тет. «Палламан» салтак куçĕнчен мĕн сăлтавпа куççуль шăпăртатса анни каламасă-

рах паллă. Пытармасть вăл ăна, чунне йӳле янă пек, савăнса, ачине ыталаса йĕрет. Çапла савăнăçпа хурлăх, телейпе инкек, йĕкĕрешсем пек, çума-çумăн çӳреççĕ. Инкекĕ çине-çинех килтен киле кĕрсе çӳрет. Çапах та çынсем пуçĕсене усмаççĕ, ăна парăнмаççĕ. Чирлĕ амăшĕпе çеç пурăнакан Микулкка патне кĕрсен, Вихтĕр курманнине асăрхать. Танлаштарса пăхать вăл хăй пурнăçне Микулкканнипе. Тен, пирвайхи хут çын хуйхине чĕрипе ăнкарса илет. Микулккапа амăшĕ улма аври çунтарса, мăян пашалăвĕпе йӳнеçтеркелесе çеç пурăнаççĕ иккен. Килне таврăнсан, Вихтĕр хăй çиес çăкăр татăкне чĕпкуçпе аптракан Микулккана валли пуçтарса чикет. Каярахпа, кăшт çитĕнсен, ăспа, тарăнрах ăнкарса илĕ-ха Вихтĕр: мĕнле пысăк, чăн-чăн телей вăл йывăр вăхăтра инкеке лекнĕ çынна пулăшасси, ун хуйхи-суйхине çурмалла пайласси. Апла пулсан, мĕншĕн-ха чылайăшĕ çакна ăнланса илеймеççĕ, ашшĕ калашле, «Мауглире тăрса юлаççĕ»? Теприсем ĕç çумне çыпăçма пĕлмеççĕ е вĕчĕх чунлă пулаççĕ, икĕ питленеççĕ? Çакăн пирки те нумай шухăшлать Вихтĕр çитĕннĕ май. Ашшĕ вĕрентни, вăхăтра ăс пани, ырă пил пек, ĕмĕрлĕхе чунра юлать. Çтаппан Кĕркури чăнах та хăйне майлă философ. Чăн чăвашла, кăштах шахвăртса, ытарлăн ăнлантарать вăл ывăлне пурнăçăн хура тата çутă енĕсем çинчен. Ана, пĕрехинче йăмра патне çавăтса пырать те: «Ак кунта хĕвел çути, кунта йăмра мĕлки,—тет.— Пурнăçра та çавах. Ыррипе усалли юнашар. Аçта çутă — унта мĕлке. Аçта пурнăç — унта вилĕм. Пурте юнашар. Чăн-чăн çынсем пур пурнăçра, çын мĕлкисем кăна пулса çӳрекенсем те çук мар. Мĕлке, хăй чунсăр-юнсăр пулин те, ялан Çынпа юнашар çӳрет. Хĕвеле çумăр пĕлĕчĕсем хупласа хураççĕ çеç — тарать хайхи Мĕлке Этем çумĕнчен. Çын пĕр-пĕччен тăрса юлать: шăнать, йĕпенет. Хĕвел çути ӳкет кăна — Мĕлке çитнĕ те. Çутçанталăк илемĕпе киленсе çӳрет юнашар».

Ун чухне пурнăçпа вилĕм, ырăпа усал, ăшпиллĕхпе чунсăрлăх пирки вĕрентни Вихтĕр ăсне, тен, ытлашши тарăнах кĕрсе вырнаçайман та-тăр. Мĕншĕн тесен ыйтăвĕсем çав тери кăткăсскерсем, вĕсене этем хăйĕн ĕмĕрĕ тăршшĕпех ăнкарма тăрăшса пуç ватать. Çапах та тĕрĕс çул кăтартакан малтанхи усăллă урок пулнă ку.

Енĕшĕн сăнарласа ӳкерес ăсталăхĕ хăйне евĕрлĕ. Акă, тĕслĕхе, çавнашкал темиçе «акварель ӳкерчĕкĕ»

илсе кăтартам: «Йывăрлăх нумай курнă алă пӳрнисем, хурама туратти пек, армак-чармакрах та хытă. Юн тымарĕсем, çăпата кантрисем евĕр, апла та капла явăннă алăсем тавра»; «Турат куçĕнчен тарланă шыв юхса аннă пек, палламан çын куçĕнчен куççуль шăпăртатса анать»; «Лере, анкарти хĕрринче, инке пек, лаштра çĕмĕрт саркаланса ларать. Пĕр ытам чечек йăтнă вăл» т. ыт. те.

Кунашкал вырăнсем повеçре татах та чылай. Паллах, хăйне тĕллĕн илсен, ӳкерчĕкĕн пĕлтерĕшĕ пысăк мар. Хитре деталь, куçа курăнакан танлаштару е сăнарлă ӳкерчĕк шухăша тарăнлатмалли, туйăма çивĕчлетмелли мелсем çеç вĕсем. Çавăнпа та кунта асăрханса, виçине пĕлсе ĕçлемелле. Сăнарласа ӳкерес ăсталăхпа шухăш-туйăм килĕшӳллĕ çыхăнура пулмалла.

Кунсăр пуçне, çакна та каласа хăварни вырăнлă пулĕ. Енĕш повеçĕнче хамăр прозăн вăраха кайнă чирĕ — пурнăçри пулăмсене мункун çăмарти хĕретнĕ пек хĕретсе е сенкер кĕренлетсе, ытлашши хитрелетсе ӳкерни пачах та çук. Вихтĕр, повесть геройĕ, пурнăçри йывăрлăхсем çине çырлахуллă куçпа пăхать, нăйкăшмасть, аллине те усмасть. Чун-кăмăлпа пиçĕхнĕ çын, вăл самана çилĕсем хăш енчен вĕрнине ăнкарма тăрăшать, этемĕн çынлăхĕ вак-тĕвекре те палăрнине асра тытать. Çакăнта курăнать уйрăмах автор позицийĕ уçăмлă пулни, геройĕ вара ун — пирĕн саманташ, чăнчăн Гражданин.

Пĕтĕмлетсе каласан, «Вучах çути» повеçе çыравçăн пирвайхи чи пысăк ăнăçăвĕ вырăнне хурса хаклас килет. Кунпа пĕрлех хамăр прозăн шыравĕсем тарăнланса, кăткăсланса пынине те пĕлтерет вăл.

Дмитрий Михлеев ятне чăвашла вулакансем пĕлсех те каймаççĕ пулас-ха. Çырма вăл ытларах вырăсла çырать. Темиçе çул каярах «Хатĕр пул» журналта унăн «Шур çилхеллĕ урхамахăм» повеçĕ пичетленнĕччĕ. Чăвашран тухнă çын вырăсла çырнинчен эпир тĕлĕнместпĕр ĕнтĕ халь. Хамăр çĕршыври ытти халăхсем хушшинче те пур ун пек авторсем. Тĕпчевçĕсем икĕчĕлхелĕхе самана палăрăмĕ тесе шутлаççĕ паянхи кун, çак пулăм малалла та аталанасса шантараççĕ. Д. Михлеев çырнисене пĕр иккĕленмесĕрех чăваш литературин шыравĕ-çитĕнĕвĕ тесе хаклас килет ман. Вĕсенче чăваш тĕнчи, чăваш çыннин психологийĕпе тĕнчетуйăмĕн паллисем яр-уççăн курăнаççĕ. Пур чухне те тенĕ пекех автор хайлавĕсенчи тĕп герой — чăваш. Хăй çуралса ӳснĕ

тăван енрен инçетре пурăнаканскер (шăпи çапла), вăл тăван халăх патне туртăнать, тунсăхлать, малашне ăна епле те пулсан усă кӳресси çинчен ĕмĕтленет. Вăтăр çула çитиччен пĕлсех кайман, сăмахран, Сергей Филин çакнашкал чуна канăç паман, чĕрене çуракан тунсăха («Несентиментальное путешествие» ятлă калав). В. Митта калашле, шухă пулнă, шухăшсăр çӳренĕ, тĕнче каснă. Филин, вĕренсе, кинорежиссера тухнă. Ку таранччен «кино çăпата сырмасть» текен айван шухăш хыçне пытанма тăрăшнă иккен вăл, çапла ĕнентернĕ хăйне. Тинех ăнланать: суя пулнă-мĕн çак ĕненӳ пĕтĕмпех! Филин тăван чăваш çĕршывĕн асамлă туртăмне тарăннăн туйса илет. Кулянать те куçĕ каярах уçăлнăшăн.

«Тахçан ĕлĕк, авалхи сĕм ĕмĕрсенчех çав çĕр çинче çуралнă пĕр юрра та пулин пĕлетĕн-и эс? Асаннӳ е аннӳ юрлаканнине? Çук. Шăпах çавсем, лăпкă çăлкуçсем пек, упраççĕ те ĕнтĕ тăван халăх ăс-хакăлне, ун чунĕн çутине». Çапах та кая юлман-ха Филин, пĕтĕм хастарлăхĕпе пултарăвне, чунри кăварне тăван халăхне тавăрса парасса шанма май пур. Чи кирли кунта — вăл хăй çакна лайăх ăнланса илни. Чăнлăхне ăна истори тахçанах тĕрĕсленĕ: халăх сансăр та пурăнать, эс вара тăван халăхусăр никам та мар. Тăван çĕр туртăмĕ Филина хăй патне туртса илессе шанатпăр эпир.

Михлеев прозинче ытти культурăсен витĕмĕ уçăмлă палăрать. Ку ĕнтĕ, ыттисен опытне ăша хывни, творчествăлла тавракурăма анлăлатма пулăшать яланах. Авторăн «Поле перейденное» ятлă кĕнекинчи «Круговорот» произведенийĕ çинчен те темиçе сăмах каласа хăварас килет. Автобиографилле хайлавăн геройĕ Ванюш хăйĕн вăрçă çулĕсенчи ачалăхне, каярахри кунçулне аса илет. Ун ачалăхĕн чи çутă саманчĕсем, чи йывăр кунĕсем пекех, Свечка ятлă лашапа тачă çыхăннă. Чĕлхесĕр янавар сăнарĕ Ванюшăн савăнăçне-ĕмĕтне, хуйхи-суйхине тарăнрах уçса пама пулăшать, ача характерĕ йывăрлăхра пиçĕхсе туптаннине кăтартма май парать. Чи драматизмла страницăсем вара кунта М. Алексеевăн «Карюха» повеçĕнчи уйрăм ĕç-пуçсене аса илтереççĕ. Ку вăл — çиелти, тема пĕрпеклĕхĕ кăна, паллах. Поэзипе пĕрле йӳççи те, чуна ыраттараканни те туллиех Ванюш асилекен хĕвеллĕ ачалăх тĕнчинче. Çапах та вăл кунсем, ытарайми хаклă вăхăт шунăçемĕн, татах та чиперрĕн, йăлттаммăн курăнаççĕ. Пĕрре çеç çавăрăнса çитсе килесчĕ унта вăхăт машини çине ларса. Анчах та май килеймĕ. Çавăнтах тăрса юлнă-шим

вара чун-кăмăл ачашлăхĕ, сенкер ĕмĕтсемпе черченкĕ туйăмсем, ырра шанни? Мĕншĕн Ванюш усăсăр калаçусемпе ирттерет халь хăвăрт чупакан вăхăта? Хăйпе хăй кăмăлсăр этем. Пĕр ӳсĕмри ăру ячĕпе калаçакан Ванюш сăмахĕсенче тĕрĕслĕх сахал мар. Эпир те, вулакансем, ку енĕпе çылăхсăрах мар-тăр. Пуш параппан çапса вăхăта ирттерни те, сехечĕ-сехечĕпе пухура е президиумра ларни те, кирлĕ марпа вакланса, вĕтелсе кайни те пулмасть мар пирĕн. Çав хушăра сехет йĕпписем пĕр чарăнми шăваççĕ, иртнин саманчĕ те каялла тавранмасть. Апла пулсан, вăхăта хакламалла, паян тумаллине ырана хăварма юрамасть. Суя чаппа карьерăшăн вăй-хала пĕтерни пустуй, ултавлă япала çеç. Тăван халăхшăн тăрăш, Гражданин пул, унсăрăн чĕрӳне çу илсе лартать, пĕр хăвшăн çеç вĕткеленме тытăнăн.

Повесть геройне илес пулсан, вăл хăйĕнчен хăй нумай ыйтнăран, тĕрлĕ чăрмава пула, ырă ĕмĕтсем пурнăçа кĕрейменрен пăшăрханса калать сăмахĕсене. Вулакан асăрхарĕ пулĕ: эпир çӳлерех асăннă авторсен геройĕсем пурте тенĕ пекех хăйсен кунçулне тишкереççĕ, çĕнĕрен те çĕнĕрен ача чухнехи кунсене аса илеççĕ. Паллах, ку вăл авторсем тахçанхипе йăпанса пурăннине пĕлтермест. Чăн-чăн этем хăй пурнăçĕн çул-йĕрне çаврăнса тинкеретех. Хăрушă ĕçсем сахал мар тунă çын, пĕр-пĕр преступник, тен, иртнине пачах манма хатĕр, анчах вăл та хăтăлаймасть унран. Çĕр варринче вăранса каять-тĕр, хура-хаяр тĕлĕксен тыткăнĕнчен çăлăнаймасть-тĕр. Çапла вăл çын кунçулĕ: иртсе кайни паянхи витĕр пуласлăха куçса пырать. Тӳссе ирттерни, пухăннă опыт, тĕве курпунĕ пек, мĕн çĕре кĕриччен, яланлăхах пирĕнпе. Мĕн акатăн — çав шăтать тенĕ. Акаканĕ хамăрах.

Михлеев повеçĕнче пире ытларах сюжет мар, калаçа параканĕн е аса илекенĕн сăнарĕ кăсăклантарать. Сăмах май каласан, çакнашкал туртăма çӳлерех асăннă ытти повеçсенче те асăрхама пулать. Апла пулсан, вăл стиль шыравĕсемпе çыхăнман-ши?!

Михлеев повеçне алла илсен, ăна вуласа тухмасăр пăрахаймастăн. Калавçă кăмăлĕн екки ăçталла сулăннине сăнаса пыратăн та, хăв та сисместĕн: вăл сан шухăшкăмăлна пĕтĕмпех тыткăнланă иккен, шанатăн ăна, унпа пĕрле савăнатăн, пăшăрханатăн, куççуль те кăларатăн. Кунашкал проза жанрĕ (лирикăлла исповедь тенекни) вырăс литературинче çирĕп тымар янă. Этем, çылăх каçарттарнă пек, ним те пытармасть вулаканран.

Ванюш, повесть геройĕ, çын кăмăлне каймалларах, хитререх курăнасчĕ тесе хыпкаланмасть. Чăнах та ĕнтĕ, кашнин хăйĕн кунçулĕ, шăпи, йăнăшасси-такăнасси те пулĕ. Анчах этем йăнăш утăм тусан та опыт туянать, мĕне те пулсан вĕренет. Тепĕр чух çакăн пекки те пулать. Автор хăй геройне ырă ĕçсем çеç тутарать, çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ патне аллинчен çавăтса пырать, сăн-сăпатне çап-çутă та хĕвеллĕ сăрсемпе анчах ӳкерет, суя хавхаланăва, пурнăç чăнлăхне пăсса кăтартнине пурпĕр пытарма çук. Чунра мĕн пуррине çеç пама пултарать-çке-ха автор хăй геройĕсене. Ку вăл çиеле лакмус пек тухать. Çак енчен пăхсан, Михлеевăн каламалли нумай пек туйăнать-ха. Ырăпа усал кĕрешĕвĕнче шырать вăл хăй темине. Сăмаха виççе (ун йывăрăшнехакне туйса) калаçма тăрăшать, çынсен сукмакĕпе каясран асăрханни те чыс кӳрет ăна. Сасси авторăн хăйĕн, «кивçен илни» мар.

Пирĕн паянхи прозăра повеçпе калав тĕпе кӳлĕннĕ пек туйăнать. Чăн та, калавсем çителĕксĕртерех çырни пирки чылайранпа сăмах ваклать ĕнтĕ критика. Сăлтавĕ те, тĕпрен илсен, пĕрре: престижсăр жанр тесе шутлать чылайăшĕ калава. Кунта гонорарсăр (тупăшсăр) тени тĕрĕсрех те пулĕччĕ. Терчĕ нумай вара. Шухăша кĕскен, пуш сăмах алламасăр, пĕрсе çырма чăн та пысăк ăсталăх кирлĕ-çке. Писатель пултарни, ун профессилле шайĕ-хавалĕ çакăнта уйрăмах яр-уççăн курăнать. Иртнĕ çулсенче ку тĕлĕшпе хăй тантăшĕсемпе пĕрле жанр ăсти Уяр сахал мар вăй хунăччĕ. Халь акă çамрăкрах авторсем çанă тавăрса ĕçлеме пикенчĕç калав «лаççинче».

Пĕчĕк лаптăк çĕр çинче хитре кермен хăпартакан архитектор ĕçĕ пекрех вăл калавçăн каçалăкĕ. Лирикăллă сăвă çырни евĕрлĕ, хĕрсе, хавхаланса ĕçлемелле унта.

Пĕчĕк жанра хисеплекен авторсенчен Д. Гордеев ятне асăнас килет. Ку енĕпе сахал мар вăй хучĕ вăл юлашки çулсенче. Автор пĕрешкелрех типсене асăрхать тейĕн пурнăçра: ватă çынсем, ури çине ĕне пусайман яш-кĕрĕм е мещенлĕх чирĕпе аптракансем час-часах тĕл пулаççĕ ун калавĕсенче. Сайра хутра калавçă позицийĕ уçăмлансах çитейменни е произведенири идея кăшт йăвашрах пулни те сисĕнкелет. Çапах та автор калавĕсен екки-туртăмĕ сюжетра мар. Калăпăр, ытларах чухне ним те пулса иртмест произведенире; пĕр-пĕр кăштăрти ватăпа, сăмахран, Никодим Фомич пекскерпе,

паллашатпăр эпир. Этем килте ларсах шухăшĕпе тĕнче тавра çаврăнать, ырăпа усал, пурнăç йĕрки-тĕрки пирки шухăшлать. Пĕртен-пĕр хĕрĕ Эмма, кĕтмен çĕртен хăй тĕнчине хупăнса, чунĕпе хавшанине ашшĕ сисмесĕр юлать. Мĕнле майпа, хăш самантра пулса иртрĕ-ха çак инкек? Эмма Никодимовна, Атăл бассейнĕн управлени инспекторĕ, йĕркеллĕ килĕшыра çитĕннĕ, таса чун-кăмăллă хĕр, взятка илес шуçлак çул çине тăрать. Паллах, килте кăштăртатса çӳресех кун кунлакан Никодим Фомич нумай япаласене ăнкараймасть. Çак пысăк инкекĕн сăлтавне те тавçăраймасть-ха вăл. Ватă çын çеç мар, эпир те, вулакансем, тĕпĕ-йĕрĕпе ăнланса илеймерĕмĕр: мĕнле хушăра Эмма Никодимовнăн чунĕ сӳсленсе кайрĕ? Калавçă фокусĕнче ытларах ашшĕпе хĕрĕн йăла-йĕркери пурнăçĕ. Шел, Эммăн производствăри ĕç-хĕлне, социалла çыхăнăвĕсене курмарăмăр эпир калавра. Мĕнле тĕллевсем, еплерех шухăш-ĕмĕтсем йăва çавăрнă-ши ун чун-чĕринче? Пĕтĕм хастарлăхĕпе кĕрешет-и Эмма? Эпир ăнланатпăр-ха: этем обществăра пурăнать. Такампа та хутшăнма тивет унăн: таса чун-чĕреллипе те, йĕксĕк е сĕмсĕр çынсемпе те т. ыт. те. Калав авторĕ, тен, юриех героиня пурнăçĕн чи кирлĕ енĕсем çине мĕлке ӳкерчĕ, кăтартмарĕ вĕсене. Çавăнпа та ун тĕп шухăшĕ ытлашши пĕтĕмĕшлерех, абстрактлăрах палăрать. Чи кăткăс пулăмсене ансатласа е сăлтавласа çитермесĕр каласа панăран, Эмма пек чип-чипер хĕр çапла çулран аташса кайнине йышăнас килмест.

Калав вĕçĕнче кăтартнă-иç пăтăрмахла ĕç-пуçсем мĕнрен пуçланса кайнине теме пултарĕç хăшпĕрисем. Чăнах та, автор хаçат чĕлхи-стилĕпе Эммăна институтра пĕрле вĕреннĕ юлташĕ ресторана чĕнсе хăналанине, инспектора хаклă парнесем панине пĕлтерет-ха. Анчах та ку пĕр-пĕр факта хроникăра пĕлтерни евĕрлĕ çеç курăнать. Пире çавнашкал кăткăс лару-тăрура Эмма мĕншĕн хăйне алла илейменни, пĕр самантрах шыв юхăмне парăнса, ăна май ишме тытăнни, мĕне пула усала хирĕç тăрайманни шухăшлаттарать. Чылай чух çапла пулать-ха пирĕн прозăра (тен, унта çеç те мар). Эрехпе кĕрешме геройсен чун-чĕринче иммунитет çителĕксĕр, эрехрен — «тĕнче патшинчен»—асли, хăватлăраххи ним те çук çĕр çинче тени евĕрлĕ «философи» самаях йăва çавăрнă илемлĕ литература хайлавĕсенче. Татăклăнрах каласан, инкек-синкеке, тĕрлĕ ултава (уйрăмах ялтан килнĕ вунçиччĕри хĕрсене хулари йĕк-

сĕксем улталанине), чуна сутнине, çылăха кĕнине эрех **мăнхавалĕпе** сăлтавлани час-часах тĕл пулать. Кунта ĕнтĕ Гордеев калавĕ пирки кăна сăмах пымасть. Этем вăй-хăватне, ун пуласлăхне ĕнентерекен гуманизмла искусство геройсен пуçĕ тăрринче явăнакан сирсе сирĕлми çак хура-хаяр инкеке хирĕç çыннăн хурçă пек çирĕп туптаннă характерне, ĕçре пиçĕхнĕ кăмăлне, шалти чун пахалăхĕсене кăларса тăратать, çĕнтеретех. Унсăрăн шанчăк та, пурнăçăн чĕрĕ илемĕпе илĕртĕвĕ те сӳнсе ларĕ.

Шахмат вăййине теоретиксем виçĕ пая пайлаççĕ: дебют, миттельшпиль тата эндшпиль. Çак ăнлавсемпе усă курса, сăнарлă чĕлхепе калас-тăк, Гордеев калавĕсен хăш чух вĕçĕ е эндшпилĕ çырлахтарсах çитереймест мана. Автор пĕр-пĕр ватă çын кăмăлĕн еккине тупма пултарнинче ăсталăх çук мар. Калăпăр, Якрав мучи («Якрав вăхăчĕпе») е Федор Кузьмич («Шăннă куççуль») йышши çынсен кăмăл-туйăм хусканăвĕсене васкамасăр, тĕплĕн, шаларах кĕрсе уçса памалли майлсене аван чухлать автор. Гордеев час-часах этем иккĕленнине е хăйпе хăй кăмăлсăр пулса канăçсăрланнине монологсем урлă витĕмлĕ палăртать. Кунта этем психологине пĕлни, пурнăçа сăнлама пултарни (**Ӳйрăмах килти** пурнăçа!) куç умĕнчех. Çапах та чылай чухне автор чи кирлине («тăварне») вулакана хăвăртрах тутантарса кăтартать. Кульминаци текенни çывăхра пулĕ тесе вулатăн калавсене. Анчах та çав «тăвар» ирĕлсе пĕтнине эпир сисмесĕрех юлнă, калавăн психологизмĕ чакса кайнă иккен. Ку тĕлĕшрен тин çеç çӳлерех асăннă икĕ калав çак сăмаха тӳрре кăларакан тĕслĕхсем пулаççĕ.

«Ванчăк чӳрече» ятлă пĕчĕкçеç калавра вара çав туртăм сисĕнсех каймасть. Конфликчĕ унта самаях çивĕч, çав хушăрах ним çукран сиксе тухать. Характер еккине туйса калăплать автор Мефодий Иванович сăнарне. Пур-çке-ха пурнăçра çавнашкал çынсем. Сăмахран, çĕркаç тахăшĕ ватнă подъезд чӳречине çын ирхине тăрса йăпăр-япăр лартса хурать. Çӳлтен-мĕнтен хушнипе мар, хăй ирĕкĕпе. Киленсе ĕçлет Мефодий Иванович, хамăр пурăнакан çурта хамăрăнах тирпей-илем кӳмелле, юхăнтарма юрамасть тесе шутлать вăл. Чунчĕри çапла этемĕн, мĕн тăвăн. Анчах çак ĕçпе тăрмашнă вăхăтра, кĕтмен çĕртен, инкеке, ăна кӳршĕри хваттерте пурăнакан Томна Матвеевна курать. Мĕнлерех этем-ха вăл, çак хĕрарăм? Эсир курнă унашкал çын-

сене, хисеплĕ вулаканăм. Кашни çуртрах тенĕ пек тĕл пулаççĕ вĕсем.

«Томна Матвеевна илтменни-пĕлменни, палламан çынни Шупашкарта çуках пулĕ теес килет тепĕр чухне. Кирек епле калаçуран та тăрса юлмасть. Хутшăнма сăлтав пулмасан та хутшăнать. Тĕл пулакан çынна пахаламасăр ирттерсе ямасть. Ырă хака тивĕçлисем сахалрах ун тĕллĕн. Ытларахăшне сумсăр ят тивет». Кунта кăштах сăрăсене çемçетсе ӳкернĕ-ха ун сăн-сăпатне. Пурнăçра, тĕрĕссипе, хăрушрах вăл çынсем, тата та нĕрсĕртерех. Çынсем сывлас таврари сывлăша наркăмăшласа çӳреççĕ тейĕн. Пурнăçăн çутă, таса, ырă енĕсене тӳсме пултараймаççĕ, хăйсенчен йĕркеллĕрех çын çук вĕсемшĕн, унашкаллине асăрхасан — самантрах тикĕтпе вараласççĕ. Калас сăмахĕ, ăшран мар, чĕлхе «хутаççинчен» тăкăнаканскер, хĕвелçаврăнăш хуппи пек сирпĕнет. Шăпах çавнашкал хĕрарăм куçĕ тĕлне пулать терĕмĕр кантăк лартса тăрмашакан Мефодий Иванович. Сăпайскер, нумай палкама хăнăхманскер, вăл, юратнă юрă кĕввине ăшра ĕнерсе, пĕтерсе те пыратчĕ ĕнтĕ хăй ĕçне. Анчах та шăп çак самантра хура хурт пек хĕрарăм ун çине хăйĕн наркăмăшлă сăннине тăрăнтарса хурать. Мефодий Ивановича кантăка хăех ватнă та, çын куриччен лартса хума васкать тесе айăплать вăл. Ун майлă хĕрарăмсем те, ăна ĕненсех кайманнисем те тупăннă ав, пĕр подъездра пурăнакансем хушшинче. Çапларах палăрать вăл тепĕр чухне ушкăн психологийĕ: ăçталла «кĕтӳç» хăвалать, çавăнталла сулăнать... Çук, тӳрре тухаймарĕ Мефодий Иванович, çăвар уçма та памарĕ ăна Томна Матвеевна, питлерĕ чунĕ каниччен, намăслантарчĕ, тăн пачĕ. Темле майпа самантрах ушкăна та хăй майлă çавăрчĕ çак путсĕр хĕрарăм. Чĕннинчен чĕнменни лайăхрах терĕ пуль кантăк ăсти çакнашкал лару-тăрура. Çапах та сăмах тĕшшине ярам мар тенĕ çĕртенех, тӳсеймерĕ юлашкинчен. «Мефодий Иванович хĕрарăмсем çине пăхса тăчĕ-тăчĕ те, пурне те шартах сиктерсе, хаяррăн кăшкăрса ячĕ:

«Эпĕ ватнă! Эпĕ ватнă! Ак çапла!—мăлатукне пуç тĕлне çĕклерĕ.—Курăр, ак çапла!—терĕ те пĕтĕм вăйран сулса çапрĕ — чăл-пар! саланчĕ чӳрече кантăкĕ».

Çапла вĕçленет калав, сасартăк салтăнать ун конфликчĕн тĕвви те. Паллах, кунта автора вĕрентсе: ак çапларах тумалла пулнă теме çук. Вăл пĕрре мар виçнĕ ĕнтĕ касиччен; вунă варианта пăрахăçласа, пĕрне

суйласа илнĕ-и, тен. Тӳррипе каласан, калав развязкинче (сӳтрĕмĕнче) психологизмла эффект пурри те сисĕнет. Çак хайлава Гордеев çырнисенчен чи ăнăçли шутне кĕртес килет. Усалпа йăх-яха, чунсăрлăха сивлес туйăмсене хускатни пуринчен те паха кунта. Чăн та ĕнтĕ, Томна Матвеевна йышшисем хăйсен сăмахне каялла илсе, айăпне йышăнасси пирки шутлама йывăрха. Пысăклатса тата ушкăнран уйăрса сăнланăскер, çак тĕлĕнтермĕш тип халь те куç умĕнчех тăнăн туйăнать пире. Тем тесен те, тепĕр кун ирхине урама тухсан, каллех хăйĕннех перет ĕнтĕ çак асран кайми чун: каларăмиç сире, хăех ватнă тесе. Çиллес куçĕсем те умрах пек, вĕтĕ шăлĕсем витĕр сăрхăнакан сăмахĕсем те илтĕннĕн туйăнаççĕ. Вăл юрĕ-ха, анчах та акă мĕскере шел. Мефодий Ивановичăн çынсене ырă тăвас хаваллă, ăшпиллĕ кăмăлĕ çеç ан хуçăлтăрччĕ. Çын чунне амантма нумай та кирлĕ мар-çке-ха.

Калавĕнче автор пĕр подъездра пурăнакан çынсен хутшăнăвĕн уйрăм самантне ӳкерсе кăтартнă. Кулленхи чĕрĕ пурнăçăн сарлака юхăмне илсен, унта та Тюммасем (Томна Матвеевнăна юлташĕсем çапла чĕнеççĕ) сахал мар ĕнтĕ. Анчах та вĕсем хĕвел çинче тем чухлĕ пăнчă шырасан та, ун çутине хуплаймаççĕ, ырри, таси, пархатарли, хăюллăн та патваррăн çĕкленсен, вĕсен, халăх каларăш, пăкки шанатех. Ку вăл урăхла пулма та пултараймасть.

Искусство пурнăç пулăмĕсене çивĕчлетсе, яр-уççăн палăртса ӳкерет. Сăмахран, шухăшласа ĕçлекен писатель этем характерĕнчи çитменлĕхсемпе хитремарлăхсене яланах асăрханса питлет. Кунта çăмăлрах çулпа кайсан, вĕсене куç умĕнчех «тӳрлетесси», этем психологине самантрах тĕпрен «çĕнетесси» патне пырса тухма пулать. Сахал-и унашкал произведенисем пирĕн. Çапла майпа писатель педагог тивĕçне пĕтĕмпех хăй çине илнине критика та хăй вăхăтĕнче ырланисем пулнă. Ман шутпа, çамрăкрах ăрури çыравçăсем çав йăнăш туртăм-сулăмран асăрханса ĕçлени шанчăк паракан япала. Вĕсем паянхи вулаканăн культурипе интеллекчĕн шайĕ çӳллĕ пулнине, ăна тивĕçтерме шутсăр çăмăл маррине те сисĕмлĕ туяççĕ. Вĕрентекен, тăн паракан, тĕлĕнтермĕш, астармăш туртăмлă проза хайлавĕсене вуласа йăлăхсан, пĕр вăхăт тĕнче классикин хам кăмăла каякан произведенийĕсене вулатăп эп. Хамăр чăваш çыравçисен те сахал мар унашкал хайлавсем. Çапла туни кăмăл-туйăма çĕнетет, çивĕчлетет. Кам

мĕнле-тĕр те, хам эп çĕнĕ сăмаха хĕрĕх-хĕрĕх пиллĕкри авторсенчен кĕтетĕп. Гордеев калавĕсенче те шыратăп çав тахçантанпа кĕтекен пысăк литература палăрăмĕсене. Сăмах май каласан, автор калавĕсенчи чĕлхе тирпейлĕхĕ кăмăла килет. Чылай чухне пĕр-пĕр вырăнти калаçу уйрăмлăхĕсене тимлени пулăшать автора. Ку тĕлĕшрен Гордеев туйăмсăр мар, хăшĕсем пек чĕлхепе выляни, поэт калашле, «сăмах жонглерĕлле» аппаланни пачах та çук ун.

Çĕнĕ сăмах тенĕрен, ăна тахçанах такăрлатнă çулпа кайса, калаймăн ĕнтĕ. Çав пĕрре хăнăхнă çул туртăмне çĕнтерме çăмăл мар, паллах. Ахаль мар каланă пулĕ: «Кĕтӳ иртнĕ çулпа çӳрекен хăй сукмакне хываймĕ»,— тесе. Хывма чăннипех те вăй çитерекен çынсем çĕртен пĕр виççĕшĕ пулсан та, ай-хай епле аван пулĕччĕ ку!

Пирĕн хальхи чăваш прозинче «тап-таса» калавçăсем çукпа пĕрех. Ытларахăшĕ повесть жанрĕ еннелле туртăнаççĕ, алхапăлах роман çырса пăрахни те сайра пулакан тĕслĕх мар. Çав романсем çинчен каланă чух критиксем вĕсен пайăр енлĕ пахалăхне палăртаççĕ часчасах. Пĕрин романĕн чĕлхи сĕтеклĕ те пиçĕ имĕш. Тепри сюжет йĕркелеме шутсăр ăста, виççĕмĕшĕн детальсем асра юлаççĕ т. ыт. те. Çав вăхăтрах «Таната» пек пур енчен те пиçсе, калăпланса çитнĕ романсем курăнмаççĕ-ха. Хальхи совет литературинче роман жанрĕ çав тери çӳллĕ шая хăпарнине сăнаса тĕлĕнетпĕр. Хамăр та пур пек вăйран çавăнталла кармашатпăр.

Çук мар пирĕн те шанчăк паракан тĕслĕхсем. Сăмахран, Н. Максимовăн «Тапă» романне илер. Пĕрремĕш пайне пăхса хакласан, ку хайлавран эпир нумай кĕтме тивĕçлĕ. Автор эпикăлла сулмаклăхпа уйрăм çын чун-чĕрин хусканăвĕсене, урăхла каласан, макротĕнчепе микротĕнчене килĕшӳллĕн шайлаштарма мехел çитернĕ. Шухăшлав историзмĕ тарăн, чăн-чăн наука шайĕнче пулнăран, романра пирĕн ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш пурнăçĕ, вăл вăхăтри самана сăн-сăпачĕ туллин те витĕмлĕн ӳкерĕннĕ. Пĕтĕмпех ăнăçтăрччĕ çыраканĕн ĕçпуçĕ, хамăр прозăна сулăм кӳрекен роман пултăрччĕ ку. Çапла ыр сунса калама çеç пултаратпăр эпир, вулакансем, пысăк ĕçе пикеннĕ çыравçа.

Кунпа пĕрлех тепĕр япалана та манма çук кунта. «Тапă» пирки сăмах хускатнă май Мранькка опычĕ аса килет. «Ĕмĕр сакки сарлака» романăн пĕрремĕш кĕнеки ыттисенчен чылай ăнăçлăрах пулса тухнăччĕ. Шел, чăн-чăн реализмла роман калăплама пуçланă автор,

30985 - чуб.
Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького

малаллахи кĕнекисене çырнă май авантюрăлла сюжет екки-туртăмне сулăнса, тĕллĕн-тĕллĕн пурнăçа натурализмла ӳкерме, çара ӳт культне-туррине «пуççапма» тытăнать. Тепĕр чухне критикăра, вулакан шухăшĕ-авторитечĕ çине таянса, вăл ыйтнине «тивĕçтерсе», эстетика картне ларман пулăмсене мухтани, илемлех мар япаласене ӳстерсе хаклани те пулмасть теме çукха. «Ёмĕр сакки сарлака» романра та сисĕнет çав вулакансен кăмăлне çырлахтарма тăрăшни, туйăмсене астарас тесе вăй хуни.

Мраньккa романне ăнсăртран мар эпир Максимов хайлавĕ пирки сăмах хускатнă чух аса илтĕмĕр. Калăпăр, «Тапă» романра (енчен те историлле событисене ытлашши сарлакан илсе, вуншар çула тăсса, тапхăр хыççăн тапхăр сăнласа пырас çулпа кайсан), ун психологизмла хĕрӳлĕхне çӳллĕ шайра тытса пыма шутсăр çăмăл мар пулĕччĕ. Хронологилле анлăлăх, паллах, произведение çĕнĕрен те çĕнĕ событисем кĕртсе, сюжета «чĕртме», йăлăхтармăш пĕрпеклĕхрен хăтăлма пулăшать. Анчах та хресчен ăсĕ авалтанпах тавçăрнă: кăмака хĕрӳсĕр пулсан, çурта тулашран илемлетни те, пĕрене хушшисене мăклани те çителĕксĕр. Кăмаки — шăпах ĕнтĕ вăл романăн шалти энергийĕ, ун психологизмĕ. Халлĕхе «Тапă» роман пирки татăклă сăмах калама иртерех-ха. Кăмаки çеç ăнăçлă пултăрччĕ.

Н. Максимов пысăк мар калавсенчен пичетленме пуçланине астăватăп. Халь те çырать вăл сайра хутра пĕчĕк калăплă хайлавсем. Акă «Ватă йăмра» ятлине илер. Шухăшĕ ун вĕр-çĕнех мар темелле. Вăрçă умĕнхи çул Севкепие юратнă Сахвун хăй савнийĕ ячĕпе йăмра лартнă пулнă. Фронтра пуçне хунăскерĕн йăмри тахçанах пĕлĕтелле кармашнă, ав, халь Севкепи пахчинчи ӳсентăрана çитĕнме чăрмантарать. Маннă иккен Севкепи çак йывăçа кам лартса хăварнине, çавăнпа та касса йăвантарас шутлăччĕ. Йăмрана ашшĕ лартни çинчен Сахвун ывăлĕ, Мишша, асилтерсен, ватă хĕрарăм кĕçех хăй йăнăш туса хума пултарнине ăнланчĕ. Епле ал çĕклентĕр-ха вунçичĕ çулта чи таса туйăмпа савнă çын лартнă йывăçа касма. Лартăр ватăлса çитсе хăриччен. Тен, Севкепин те пурăнмалли нумаях юлман. Йăмрапа йăпанса, Сахвуна аса илсе, пурăнĕ вăл çĕре кĕриччен.

Калавра сюжет çук тесен те юрать. Пĕччен кăштăртатакан карчăк пурнăçĕнчи пĕр саманта кăтартнă автор. Ман шутпа, кунта тĕп шухăша тарăнлатакан că-

нар Мишша. Этем, ĕçкеленине пула, хисепрен тухнă, тен, кăштах юхăнма та пуçланă. Култи пурнăçĕнче ун ним ăшăнки те çук. Çапах та, тимлĕрех пăхса ăнланма тăрăшса, Мишшан тĕрĕслĕх туйăмĕ мăкалманнине асăрхама пулать, ырă чунлă этем яланах çынна пулăшма хатĕр. Ĕçре йăпану тупать вăл, ӳркенмест; ачалăхĕ йывăр пулнăран, вĕренеймесĕр юлнă. Епле пулсан та, Сахвун юнĕ Мишшара, улми йывăççинчен аякка ӳкмест, теççĕ. Çавна Севкепи лайăх ăнланать. Ман шутпа, Мишша сăнарĕн илемĕ халăх характерне çывăх пулнăран килет. Çак иксĕлми çăлкуç Н. Максимов пултарулăхне малашне те чĕрĕ сăнарсемпе пуянлатасса шанма май пур.

Статьяна вĕçленĕ майăн çакна каласа хăварасшăн. Эпир хальхи чăваш прозин пĕтĕм каçалăкне илсе хаклас шухăш тытман кунта. Çавăнпа та паллăрах туртăмсулăмсене, стиль юхăмĕсене пĕтĕмлетессине те статья тулашне хăварăпăр. Хальхаççăнхи пысăках мар тĕллев пирĕн — критика асăрхасах кайман авторсен хăшпĕр хайлавĕсене кĕскен те пулин тишкересси терĕмĕр. Çĕклемне эпир кунта хамăра вăйçеммине анчах çĕклерĕмĕр-ха. Проза продукцийĕн чылай пысăк пайĕ çак çĕклеме кĕреймесĕр юлчĕ.

Ку вăл малашне тумалли ĕç.

1985

КАЙРИ МАЛА, ХУРКАЙĂКСЕМ...

Çак статьяна çырма ларас умĕн юлашки вăхăтра журналсенче пичетленнĕ критика материалĕсене тăрăшсах вуласа тухрăм эп. Кун çути куракан статьясемпе рецензисен шучĕ-хисепĕ чăнах та сахалах мар. Вунпилĕк çул ытла çак жанр анинче тăрмашнă май, пин хут та илтме тӳр килнĕ мана критика хавшак, шăлсăр тенине. Çапла каланинче тĕрĕслĕх те пурах, анчах та çав ярлăка критика çумне ĕмĕрлĕхех çакса янă тейĕн. Килĕшет те пек тата вăл ун çумĕнче. Хăнăхтарсан, теме те хăнăхма пулать иккен. Акă, курăр-ха: проза, поэзи е драматурги кĕрнеклĕ сăнарсем ăсталаймарĕç-тĕк, куншăн та критика айăплă теме пулать. Çапла тетпĕр эпир пĕр иккĕленмесĕрех. Кĕскен каласан, критика çыракана та, вулакана та çырлахтармасть текен шухăш паян çуралман.

Нумайăшĕ критика мĕнлерех пулмаллине те тахçантанпах лайăх пĕлеççĕ ĕнтĕ: юрăхсăр япалана юрăхсăр тетĕр вăл, ыррине, лайăххине паха тетĕр, кирек епле хайлава та объективлă хаклатăр т. ыт. те. Чăнчăн тишкерӳçĕн мĕнлерех пулмаллине, самана вĕсенчен мĕн ыйтнине çак жанр ăстисем хăйсем те аванах чухлаççĕ-ха. Апла пулин те, тĕрлĕ сăлтава пула, ĕçе кирлĕ пек йĕркелесе яма çав-çавах вăй çитереймеççĕ. Чăрмавсем чылай кунта, вĕсем пирки те чылайранпа сăмах ваклатпăр.

Партин XXVII съездĕнче критика пĕлтерĕшĕ ӳссех пынине, вăл кулленхи пурнăçра сывлăш пекех кирлĕ пулнине уйрăммăн палăртса калани çĕнĕ шанчăксем çуратрĕ. «Пирĕн общество пурнăçĕпе ĕçĕн кулленхи принципĕ — критикăпа самокритика. Вĕсемсĕр аталану çук. Илемлĕ литература критикин таса морале хавшатакан канăçлăха, чина пуç таяссине хăйĕн çинчен сирсе ывăтма вăхăт. Çакна асра тытас: критика вăл авторсен хăйсене юратас шухăш-туйăмĕпе мăнкăмăллăхне тивĕçтермелли ĕç мар, общество ĕçĕ». Тĕрĕс, влаçра ларнă хушăра кăшт-кашт çыркалакан (пуçлăх) е литература чиновникĕсен тарçи пулма тивĕçлĕ мар критика. Литература процесне вăйлă аталанма пулăшакан вăй, ăсхакăл хуçи — акă унăн хăйне тивĕçлĕ вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ. Çĕнĕ кĕнеке кăларакан кашни авторах хăйĕн ĕçне (ăна, тен, вăл темиçе çул хушши çырнă) тӳрĕ кăмăлпа, хисеплесе тишкерессе кĕтет. Анчах та чылай чухне вăл çав сăмаха кĕтсе илеймест. Вара çыравçă ирĕксĕрех тишкерӳçĕсен тимсĕрлĕхне кулленхи норма вырăнне йышăнать. Акă тĕслĕх илер. Вулакансенчен «пĕри те пулин: сирĕн романа эпĕ алăран вĕçертмесĕр вуласа тухрăм тени мана критиксен вунă статйинчен те хытăрах савăнтарать», тет Георгий Краснов. Паллах, кашни вулакан шухăшнех чăн хак теме çук, çапах та романçăн критиксене адресленĕ ӳпкевĕ шухăшлаттарать. Сăмах май каласан, Г. Краснов романĕсем пирки Ип. Ивановпа П. Львов хаçатра пысăк статьясем пичетленĕччĕ. Вĕсенче ытларах мухтанă пек туйăнчĕ писателе. Кунашкал материал автора витсех каймасть çав.

Критика кулленхи литература продукцине вăхăтра тишкерсе пырайманни аксиома тейĕпĕр. Анчах та критики хăй, писательсем калашле, чылайранпа сывалса çитейменскер, хăçанччен усрав ача вырăнĕнче пурăнĕ?! Лашана, сăмахран, патак çеç çитерсен, сĕлĕ е сĕтеклĕ утă памасан, вăл хавшать, ĕçлейми пулать. Акă мĕн

каласшăн эп: критика ӳсĕмĕсене те курмалла, ан тив, пысăк мар пулччăр вĕсем. Камăн çырмалла-ха çак жанр ĕç-хĕлне тишкерсе? Кăна никам та мар, критиксем хăйсемех пултарма тивĕçлĕ. Чăн та, сайра хутра Хв. Уяр, А. Артемьев, В. Алентей тата ытти хăшпĕр çыравçăсем хутшăнкалаççĕ ку ĕçе, ăсталăх пирки сăмах хускатаççĕ. Çак та шутсăр кирлĕ ĕç. Çапах та проза ăстисем критикăна мар, ытларах чухне хăйсен ĕçтешĕсен хайлавĕсене пăхса тухаççĕ, пĕр-пĕрин çитменлĕхĕсене асăрхаттараççĕ. Критиксем: «Пире хакламаççĕ, картмаççĕ, пирĕн кĕнекесене тишкермеççĕ»,—тесе нăйкăшнине илтмен эпĕ. Чăтăмлă та тӳсĕмлĕ пулас вăл критик текен халăх.

Критика продукцине пачах тишкермеççĕ тесшĕн мар эп. Вăхăтран вăхăта обзорлă статьясем те пичетленеççĕ-ха хаçат-журналта. Акă, тĕслĕхрен, Ип. Ивановăн «Паянхи чăваш критики» статйине («Тăван Атăл», 1985, 1 №) илсе пăхар. Еплерех курса кăтартать-ха автор хальхи чăваш критикин ӳсĕмĕсене. «Критикăна хисеплемелле те юратмалла теççĕ»,—пуçласа ярать вăл сăмахне. Такам (пускил çынни е пĕр подъездра пурăнакан) калама пултарнă та пуль кунашкал сăмаха, анчах та автор ăна халăхра çирĕпленнĕ (авторитетлă) шухăш пек илсе парать-çке-ха. Тĕрĕссипе вара, критик каласан та пăсмасть, каламасан та темех мар евĕрлĕ сăмахран тытăнать çырма. Апла мар-çке-ха, урăхла каланă тахçанах: «Критикăна юратмасан та пултарăн, анчах та вăл каланине хăлхана чикни усăллă пулĕ»,—тенĕ. Критикăна юраттарма ĕмĕтленни утопи-çке-ха вăл. Пулĕ-ши ун пекки хăçан та пулсан? Çак пĕчĕк кăлтăк пирки чарăнса тăмасан та юратчĕ-тĕр. Анчах хĕлĕхсене ĕнермесĕр сĕрме купăс калама пикеннипе пĕрех мар-ши ку? Шел, критика аниичe нумай ĕçлекен авторăн статйинче каласан та пăсмасть, каламасан та чăрмантармасть тенешкел шухăшсем çине-çинех тĕл пулаççĕ. Миçе хут асăрханă эп: критик чăваш литературин çинчен сăмахлама пикеннĕ чух чăн малтан Белинский, Чернышевский, Добролюбов, Писарев ячĕсене асăнать; сонет пирки сăмах хускатсан, вăл вăтам ĕмĕрсенче Италире «шăтса» тухнине асилтерет, критика авалхи Грецире çуралнине пĕлтерсе хăваратех. Ним те калаймăн, эрудицийĕ авторăн куç умĕнчех. Апла пулин те, пуçтарăнулларах, проблемăллăрах çырасси те шутсăр кирлĕ ĕç-çке-ха. Статьяна вуланă май эпĕ хальхи чăваш критикин сăн-сăпатне курма ĕмĕтленнĕччĕ, шел, кăлăхах

пулчĕ. Автор вырăс критикин чысне çĕкленĕ ятсене асăннă хыççăн, ĕлĕкхи вырăс критикипе хальхи чăваш критики хушшинчи уйрăмлăха ăнлантарса парать. Кун хыççăн критика методикипе ун задачисене асăнать. Кăшт аяларах типлă сăнар кам иккенне, логикăлла шухăшлавпа илемлĕ шухăшлав пĕр-пĕринчен мĕнпе уйрăммине калать. Популяризатор тĕллевĕ, вулакана çутта кăларам-ха тени ытла уççăн курăнать кунта. Вулаканĕ вара хăех те çак япаласене лайăх ăнланать. Çак анлă умсăмах хыççăн автор, пĕтĕмĕшле калаçма пăрахса, конкретлă ыйтусем патне çитрĕ пулĕ тетĕн. Мĕн-мĕн тунă-ха пирĕн тишкерӳçĕсем юлашки вăхăтра, камăн ĕçĕсем сумлăрах, пери çивĕчрех? Анчах та автор юриех хальхи пĕтĕм чăваш критикипе литератури историйĕн тĕпчевне пĕр хурана ярса пăтратнăн туйăнать. Пыр та кур кунта, кам мĕнле те пулин çĕнĕ шухăш каланă, хăшĕ пĕр вырăнтах хытса ларнă, малалла каяйман. Акă, критика хăйне калаçтарса пăхар.

«Чăваш ученăйĕсем иртнĕ çулсенче К. Иванов, Н. Шупуççынни, Ф. Павлов, С. Элкер, Çеçпĕл Мишши, Н. Шелепи, И. Мучи, И. Тăхти, М. Н. Данилов-Чалдун, Я. Ухсай, И. Ивник, М. Акимов, М. Федоров, Г. Кореньков, И. Юркин, Чăваш Хвети тата ытти писательсен пултарулăхне тĕплĕнрех тĕпчерĕç, çĕнĕ фактсем пĕлчĕç, вĕсене тĕрĕсрех хак пачĕç. Ку ĕç малалла пырать. Уйрăм писательсен творчество портречĕсем чылаях пичетленчĕç. Халĕ пирĕн вулакансем кĕнеке тăрăх Н. Шупуççынни, Н. Шелепи, Ф. Павлов, Я. Ухсай, Л. Агаков, А. Алка, И. Ивник, С. Михайлов, П. Осипов, И. Илпек пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен лайăхрах пĕлсе юлаççĕ». Акă, курсам, вулакан, çак пысăк хурана мĕн вырнаçни пĕтĕмпех куç умĕнче. Хисеплесе тухни ĕнтĕ ку е çӳп-çапĕпе хывăхне сăвăрачченхи (йĕтемри) тырă, вал, урăхла каласан. Тепĕр тĕслĕх çеç илсе кăтартам. Литературăна жанрсем тăрăх тĕпчесси вăйланчĕ тет те автор, вара каллех ятсене шутласа каять: «Поэзие халĕ ытларах — Н. Иванов, А. Васан, Г. Юмарт, В. Тимаков, А. Хусанкай, Г. Воронцов, прозăна — Н. Дедушкин...» тата ытти те. Çитĕ, вĕçне çитме çăмăл мар кунта, çавăнпа та цитатăна татар.

Статьяна малалла вуланăçемĕн, ун авторĕ вырăнĕвырăнĕпе хăй умне лартнă тĕллеве мансах кайнине асăрхатăн. Юлашки страницăра вăл, сăмахран, хальхи чăваш прози çинчен калаçма тытăнать кĕтмен çĕртен. Акă: «ветерансемпе пĕрлех çарпа патриотизм темати-

кине çамрăксем алла илме тытăнчĕç» (каллех ятсен речĕ); унтан рабочисен пурнăçне çырса кăтартас ĕçри йывăрлăхсем çинчен те, тата ытти пирки те калать. Автор тем чухлĕ ыйтăва пĕр ытама кĕртме хăтланать, пĕр япаларан теприн патне хăвăрт куçса пырать, çавна пула сапаланса каять е çиелтен шăйăрттарать. Ку статьяна паянхи чăваш критикин хăшпĕр туртăмĕ-сулăмĕсене палăртакан кăтартуллă тĕслĕх тейĕттĕм эп. Мĕн енчен кăтартуллă-ха вăл? Нимле проблемăсăр статьясем çырма вĕренсе кайнă эпир. Чылай чухне, вырăссем калашле, пĕр тăван йăмăксенчен кашнинех пĕрер хăлха çакки валеçме тăрăшатпăр, кӳрентересрен шикленетпĕр. Тӳррипе калас-тăк вара, хăйне хăй хисеплекен çын е хăй вăйне туякан автор, ятне çакăн пек ушкăнра асăнса хăварнăшăн кӳренме те пултарать. Хевтесĕрри савăнма çеç пултарĕ: тавах турра — сиктерсе хăварман, асăннă тейĕ. Çакнашкал кивелнĕ йăлана манма вăхăт çитнĕ ĕнтĕ тахçанах. Вырăссен журналĕсенче обзорсене те конкретлă ыйтусемпе «шăнăрлаççĕ».

Пĕтĕмлетсе каласан, «Паянхи чăваш критики» статьяра (ячĕ сулмаклă) авторĕ хăйĕн тĕллевне пурнăçлайман темелле. Ман шутпа, ун хальхи критикăри уйрăм стильсене палăртмаллахчĕ (вĕсем пур!), юлашки вăхăтра пичетленнĕ кĕнекесемпе статьясен пуххисене кĕскен те пулин тишкермеллехчĕ. Çамрăк критиксен ĕçĕсенче ыррине асăрхани те, вĕсене хавхалантарни те шутсăр пархатарлă ĕç пулĕччĕ. Çĕнĕлĕхсем, чăн-чăн чăрмав-йывăрлăхсем т. ыт. те — сахал-и хускатмалли ыйтусем.

Хамăр литературăна тĕпчес ĕçре тĕрлĕ стильпе жанр туртăмĕсем палăрнине асăрхамасăр тăма çук ĕнтĕ тинех. Анчах та малтан çакна каласа хăварни те вырăнлă пулĕ. Пирĕн журналсенче «Литература критики» текен уйрăм пай пур. Çав пайра чылай чухне чĕрĕ критика материалĕ вырăнне урăх япаласем пичетленеççĕ. Унта иртнĕ ĕмĕрти литература историйĕн тĕпчевĕсем те, литература теорийĕпе фольклор тишкерĕвĕсем те, писателĕн творчествăлла портречĕсемпе юбилей статйисем те, литература вĕрентĕвĕн методикипе асилӳсем те чăрмавсăрах вырăн тупаççĕ. Сăмах та çук, асăннă тĕпчев жанрĕсемпе формисем пурте кирлĕ. Анчах та мĕн-ма вĕсене «Литература критики» рубрика картине пухмалла-ха? Çавна пула мар-и пирĕн авалхи çырулăха тĕпчесе ĕмĕрне ирттернĕ çынсем те критиксен шутĕнче тăраççĕ. Тĕрĕссипе, кулленхи литература процесне

сăнаса-тишкерсе пыракансем, «чĕрĕ» критика каçалăкĕнче çанă тавăрса ĕçлекенсем çукпа пĕрех. Хамăра хамăр улталас темесен, çак сăмахсен чăнлăхне йышăнма тиветех пирĕн.

Çук-ха, кунта эпĕ литература тĕпчевĕн тĕрлĕ жанрĕсене пĕр-пĕринчен хŭме тытса уйăрма йыхăрмастăп, унашкал пуризмла хăтлану вырăнсăр пулĕччĕ. Литература историкĕсемпе теоретикĕсем те кулленхи процеса оперативлă тишкерччĕр, чăн-чăн критиксем те авалхи çырулăх аталанăвĕн саккунĕсене тĕпчеме ан манччăр. Çапла туни пĕрне-пĕри пулăшса пыма, тавракурăма анлăлатма, тĕпчев меслечĕсене тарăнлатма май парĕччĕ. Философилле шухăшлав тŭпине çĕклеме те, перспективăна курса тăма та пултарĕччĕç тĕпчевçĕсем ун чух. Литература тĕпчевĕн ĕçĕнчи тĕрлĕ жанрсен иерархийĕпе чиккисем пирки теорилле тавлашусем те паянхи кунченех пыраççĕ-ха, сăмахăма ман çав чăтлăха сĕтĕрес шухăш пачах та çук. Тĕп тĕллевĕм те çак çеç: «чĕрĕ» критикăна, кулленхи литературăна тишкернисене çул парăр, тархасшăн, хисеплĕр, тĕрлĕрен юбилей статйисемпе ан пăтраштарăр, хаçат-журнал ĕçченĕсем, тесшĕнччĕ эп. Отчетсемпе справкăсенче: çав-çав тапхăрта çавăн чухлĕ критика материалĕ пичетлерĕмĕр теме юрĕ-и, тен. Анчах та пиллĕк çыратпăр та виççĕ ăсра тенешкел, çав купара миçе процент чĕрĕ критика шухăшĕпе тŭпи пулнине асра тытманни вырăнсăр çеç мар, сиенлĕ те пулĕччĕ. Унсăрăн критика пирки калаçни те, яланхилле, ним пĕлтерĕшсĕр, пĕтĕмĕшле калаçу çеç пулса юлĕччĕ. Пурсăмăр та пĕлетпĕр, паянхи критика умĕнче шутсăр йывăр задачăсем тăраççĕ. Текех кĕтме çук ĕнтĕ, хăйĕн лавне вырăнтан хускатма пултарассипе пултараймассине халех кăтартса памалла ун.

Маларах каланăччĕ: кашни лару-пухурах критика вăйсăрлăхĕ çинчен калаçни (кăмăла килекен тема) çителĕксĕр, ун çитĕнĕвĕсене кăштах палăртни те çав тери кирлĕ. Кашни тĕпчеве уçăмлă та конкретлă хак парасси патне çитме вăхăт ĕнтĕ. Ку енĕпе хăшпĕр ĕçсем курăна пуçларĕç пирĕн. Сăмахран, юлашки темиçе çул хушшинче çеç-ха акă Е. Владимировпа Г. Хлебников литературоведсем иртнĕ тапхăрти чăваш литературин историне тĕпчесе кĕнекесем кăларчĕç. Çав кĕнекесене, ман шутпа, специалистсем объективлă тишкерсе хакларĕç, вĕсенче теорилле шухăш малалла аталаннине палăртрĕç. Филологи наукисен кандидачĕсем В. Родионовпа С. Александров каланă тăрăх, Е. Влади-

миров «Обретение традиций» кĕнекинче чăваш çыравçисем вырăс литературин çитĕнĕвĕсене ăша хывса, çĕнĕ традицисене аталантарнине, творчествăра пысăк утăмсем тунине пĕтĕмлетсе, туллин уçса кăтартнă («Молодой коммунист» хаçат, 1985 çулхи декабрĕн 7-мĕшĕ). Çав авторсемех Г. Хлебниковăн «Меслетпе ăсталăх» кĕнекине пăхса тухрĕç, унта автор социализмла реализм меслечĕн уйрăм принципĕсене тĕпчесе пĕтĕмлетнине, чăваш çыравçисен хайлавĕсенче нациллипе интернацилли мĕнле шайлашăннине çĕнĕлле куçпа сăнаса тишкернине палăртрĕç («Тăван Атăл», 1986, 1 №).

Е. Владимировпа Г. Хлебников иккĕшĕ те тăван литературăн маларахри утăмĕсене тĕпчес ĕçе ытларах тимлеççĕ. «Тĕпчев» ăнлавăн тӳрĕ пĕлтерĕшне асра тытсан, кунта ĕнтĕ литература историне теорилле тишкересси пирки сăмах пырать. Французсен литературовечĕсем хăйне майлă тепĕр тĕпчев меслетне уйăраççĕ, «университет критики» теççĕ çавна. Ман шутпа, çӳлерех асăннă литературоведсен ĕçĕсенче те çав туртăм вăйлă сисĕнет. Литература историне тапхăршарăн илсе, анлăрах пĕтĕмлетӳсем тума тăрăшни çеç мар-ха кунта, чăн малтан тĕпчев методики пирки сăмах пырать. Оперативлă критикăпа литература историне тĕпчес ĕçре пĕрпеклĕх те, уйрăмлăх та пур. Тĕллевĕ пĕрех, майĕшывĕсем раснарах темелле-и. Саперсем хыççăн пехота хускалнă пек, историлле-теорилле тĕпчев анлă каçалăкпа пырать. Эстетика категорийĕсем çинче никĕслет меслетне, наука аппарачĕпе сарлакан усă курать. Шел, тепĕр чухне литературоведсен ĕçĕсене вулама тăрсан, тĕрлĕрен терминсен чăтлăхĕнчен ишсе тухма йывăр пулать, хăйсен пысăках мар йышне адресленĕ ĕçсене вĕсем ăнланма йывăр та кăнттамрах чĕлхепе çыраççĕ. Уйрăмах çакă çамрăкрах авторсен тĕпчевĕсенче сисĕнет. Çапах та çак йывăр çĕклемрен пăрăнманни, такам тăвасса шанса тăманни паха. Литературовед литературоведах пулса юлать, ан тив, тин çеç пичетленнĕ калав-поэмăна рецензилетĕр вăл — пурпĕр палăрать ун хăйĕн стилĕ. Кунсăр пуçне, çакна та манма юрамасть: ученăй монографи чĕлхипе калаçма кăмăлласан, критик вара икĕ-виçĕ страницăнах хĕссе кĕртме пултарать калас тенине. Çавăн пек калани критика истори тĕпчевĕнчен кирлĕрех те хаклăрах тенине пĕлтермест-çке-ха. Тепĕр хут калатăп, харпăр хăй ĕçне тивĕçе туйса, ăнăçлă пултарса пыни нимрен те кирлĕрех, кашнин хăйнеевĕрлĕхĕ пуррине манма юрамĕ.

Унсăрăн тепĕр чух литература историне ӳпкелесе каланă сăмах чĕрĕ критикăна пырса тивме пултарать. Тĕслĕхрен, Г. Хлебников тĕпчевçĕ хăйĕн статйинче («Тăван Атăл», 1986, 8 №) темиçе хутчен акă хамăр критика вăйсăрлăхне ĕнентерес тĕллевпе пĕр факта асăнать. «Юлашки 15—20 çул хушшинче литературăна пĕтĕмлетсе паракан ĕç (кун пекки ВУЗра лекци вулакансене уйрăмах кирлĕ) ку таранччен те çук-ха. Ку вăл хальхи критикăн пысăк çитменлĕхĕ. Çавна пула та пирĕн дискуссисем ăнăçлă иртмеççĕ»,—тет вăл. Çак шухăшах кăçал «Тăван Атăл» ирттернĕ «Çавра сĕтелре» те пусăм тусах калать автор. Мĕн шухăшлама пулать-ха çак ӳпкев пирки? Чăн малтан, 15—20 çул хушшинчи пушăлăха Г. Хлебниковăн «Современная чувашская литература» кĕнеки тухнăранпа иртнĕ вăхăт тесе ăнланмалла иккенни пĕртте иккĕлентермест кунта. Сăмах та çук, кĕнеки авторăн паха, апла пулсан, татах çырмалла унашкал кĕнекесене, кирлĕ вĕсем. Ку вăл литература историкĕсен, тĕпчевçисен тивĕçĕ. Анчах халь тинех критикăна çакăншăн сăмах тивертни вырăнлах мар-тăр. Лайăх-и, начар-и — вăл хăй ĕçне вăй çитернĕ таран пултарса пынă. Çавăнпа та кунта литературоведсен, «университет критикин» çаврăнăçусăрлăхĕ пирки сăмах пымалла пек ĕнтĕ. Унтан вара тĕпчевçĕ: çак çитменлĕхе «пула та пирĕн дискуссисем ăнăçлă иртмеççĕ» тени тĕрĕсех мар пулĕ. Çакăн сăлтавне, тем тесен те, урăх çĕрте шырамалла (тĕпчевçĕ илсе кăтартнă аргумент кунта хура пиншак çумне чăлт-шурă тӳме çĕлесе лартнă пек курăнать). Дискуссилле ыйтусене хускатма шикленни, унашкал калаçăва хускатма пĕлӳ те, культура та çитейменни, çак ĕçе халь те йăлана кĕртейменни— çаксем вара пачах урăх япаласем. Ку енĕпе журнал таврашĕнче ĕçлекенсен ытларах шухăшламаллла ĕнтĕ. Çавсен «çăкăрĕ» ку.

Г. Хлебниковăн «Критика принциплă пулмалла» статйин пафосĕ мана шутсăр кăмăла килчĕ. Критикăри процессене çакăн пек, литературовед куçĕпе пăхса тишкерни, классификацилесе-системăласа тухни —вăхăтран вăхăта туса пымалли шутсăр кирлĕ ĕç. Пĕтĕмĕшле илсен, пирĕн умра обзор. Апла пулин те, популяризацилес тĕллевпе çырман ăна авторĕ. Нихăш пулăма та — пысăккине те, пĕчĕккине те — сиктерсе хăварман автор, ырă енсене те, çитменлĕхсене те хисеплесе тухнă. Статья ăшчикĕнче пур çĕрте те (талккишпех) пĕрешкел температура. Пахалăхсемпе çитменлĕхсене

виҫсе шайлаштарнă вырăнсенче тĕллĕн-тĕллĕн тĕпчевçĕ объективлăхран объективизм енне сулăнни те сисĕнет. Ку ĕнтĕ тӳрĕ сăмаха каланине вулакана систерем-ха тесе тăрăшнинчен килет-тĕр. Акă, сăмахран, автор критикăра чылай çул хушши пултарса вăй хуракан А. Васан статйин ырă енĕсене тивĕçлĕрен палăртнă хыççăн, епле хушса хурать: «А. Васан статйисенче те çитменлĕхсем çук мар (камăн çук мар-ши вĕсем!)...» Çак каламасăрах паллă сăмахсене каламан пулсан, эпир Г. Хлебников объективлăхĕ пирки иккĕленнĕ пулăттăмăр-ши? Çук, паллах. Тепĕр чухне сулмаклă ĕçĕн вак-тĕвек кăлтăкне асăрхамасăр иртни этемĕн пысăк чунне палăртать. Объективист вара хăйне страхлать: турă сыхлатăр та, такам темскер калĕ пĕр-пĕр вак-тĕвеке асăрхамасăр иртсе кайсан! Шел, чылай чухне çав вак-тĕвексем пысăккине курма май памаççĕ, хупласçĕ. Тепĕр тĕслĕх çеç илсе кăтартам. «Чĕрĕ критикăра, яланхи пекех, кăлтăксем пур пулин те (ах, çав мур илесшĕ кăлтăксене!), А. Хусанкай ĕçне, пĕтĕмĕшле илсен, ырламалла, унăн тĕп сулăмĕ вулакансене те, поэтсене те шухăшлаттарать, хăйсенчен ытларах ыйтма хистет»,—тет Г. Хлебников. Пилĕк баллă шкалапа хакласан, А. Хусанкай ĕçĕ пиллĕклĕхех туртаймасть тенĕ пулас кунта. Çапах та ку та паха. Кăшт çӳлерех вара А. Хусанкайăн «Молодой коммунист» хаçат ирттернĕ дискуссире каланă шухăшсенчен хăшпĕринпе килĕшмесĕр, Г. Хлебников çапла çырнăччĕ: «Анчах ячĕсене асăнмасăр, тĕслĕхсене конкретлă кăтартса тишкермесĕр питленин усси сахал. Тепĕр тесен тата историн анлă куçĕпе пăхсан тин кашни çĕнĕ ăрăвăн чăн сăмахне тĕрĕс хаклама пулать». Хаçатра çапăннă калăпăшĕпе чухрах çеç статья çине çавăн чухлĕ тиеме кирлĕ-ши? Тепĕр тесен, ячĕсемпе темăсене асăнса тухнин тĕшши виçĕ пуса та тăмашни куçкĕрет паллă-çке. Унтан тата, çамрăк критика хирĕçлесе, «историн анлă куçĕпе пăхмалла» тенине еплерех ăнланмалла-ши? Тен, **историзм** çитеймест тесшĕн вăл А. Хусанкай çырнисенче? Апла пулсан, аргументламасăр каланă вăл сăмаха. Е илемлĕ литература хайлавĕн чăн пахалăхĕпе пĕлтерĕшне вăхăт алипе аллламалла тесшĕн автор? Анчах та чĕрĕ критикăн проза, поэзи е драматурги утăмĕсенчен юлас мар тесен, васкамалла, истори тĕрĕслессе кĕтме вăхăт çук ун.

А. Хусанкай-критик ĕçне ырланинчен е хурланинчен ытларах, ман шутпа, унăн хăйĕн хальхи шайри тишкерӳ методикипе стильне, филологилле шухăшлав куль-

тури пысăк пулнине, литература процесне сăнаса пĕтĕмлетнисем эпир хальччен хăнăхнă чикĕсене шăнăçманнине курмалла пулĕ. Кун пирки Г. Хлебников та асăнать статйинче. Чăваш çыравçисен кĕнекисене ытти тăванла халăхсен литературисенчи пулăмсемпе танлаштарса тишкерес туртăм вăй илнине палăртса, вăл çапла калать. «Иртнĕ çул çак туртăм А. Хусанкай (маларах литературовед пирĕн ята та асăннă.—Ю. А.), Г. Юмарт, Ст. Александров çырнă уйрăм статьясенче ытларах палăрчĕ». Критикăн çулталăкри продукцийĕн обзорĕнче автор ансăр чикĕрен тухайман пулĕ. Анчах та хамăр статьяра хушса каламаллах ĕнтĕ: А. Хусанкай ĕçĕсенче çак вăйлă туртăм пĕлтĕр çеç мар, чылай маларах сисĕнчĕ. Критика хуçалăхĕнче ăçта мĕн-чĕн выртнине (опись тунă пек) хисеплесе тухнă чух ытти çамрăксен списокĕнче асăнни пăсмасть те пулĕ пултарулла критик ятне. Анчах та инерци сулăмĕнчен асăрханни кирлех кун пек чух. Ман шутпа, паянхи чĕрĕ критика çитĕнĕвĕсем çинчен каласа чух А. Хусанкай ĕçĕсене тĕсесерех пăхни ытлашши пулас çук. Каламан-ха вĕсем пирки пирĕн критика хăйĕн сăмахне. Тĕрлĕрен списоксенче тишкерӳçĕ ятне асăнаçççĕ, «çамрăк критик» тесе иртнине куратăн. Çав хушăра А. Хусанкай тăван литература ӳсĕм-тӳсĕмĕ çинчен Мускавра тухакан хаçат-журналта чылайранпа ĕнтĕ витĕмлĕ сăмах калать. Ун статйисенчи шухăшсемпе, тен, чылайăшĕ килĕшмеççĕ те пулĕ е тиркешекенсем те тупăнĕç.

А. Хусанкай «Вопросы литературы», «Литературное обозрение», «Дружба народов» журналсенче çине-çинех сулăмлă статьясемпе рецензисем кăларса тăрать. Критик хальхи поэзи аталанăвĕнчи пулăмсене ытларах тишкерет. Шăпах çав ыйтусем тавра шухăшласа çырнă статйисенчен пĕри унăн «Дружба народов» журнал премине тивĕçлĕ пулчĕ. Мĕншĕн савăнас мар-ха пирĕн хамăр тăван культура ячĕпе çӳллĕ шайра калаçакан критикăн ĕçĕсем ăнса пынăшăн. Хăй вăхăтĕнче А. С. Пушкин: «Пирĕн, чăвашсен, критика çук»... тенĕренпе пурнăçра чылай улшăнусем пулса иртнине манас пулмастех. Критикăра вунă çула яхăн çанă тавăрса вăй хураканшăн «çамрăк» эпитет килĕшӳллех те мар пек туйăнать ĕнтĕ. «Çамрăк автор» тенинче пултарулăх тĕшши пиçсе çитеймен, çырма пикенекен çын текен пĕлтерĕш чăн малта тăрать-çке-ха. Кун пирки «Литературная газетăра» В. Амлинский çапла каланăччĕ: «Тепĕр чух вулакансем лайăх пĕлекен писателех, 60

çула çитеймен пулсан, кунсăр пуçне, вăл главнăй редактор та мар тата вăрçăпа ĕç ветеранĕ те мар пулсан, издательсем ун çине ар çулне çитеймен ача çине (подросток тенĕ автор) пăхнă пек пăхаççĕ»,—теннĕччĕ вăл. Пирĕн вара «çамрăк» эпитета пĕр-пĕр автора кӳрентермелли урăх аргумент шухăшласа кăларма ăс çитереймен чух та сĕтĕреççĕ. А. Хусанкай пирки калас пулсан, критик хальхи чăваш поэзине пĕтĕм Союзри литература контекстĕнче курса тишкерет. Поэзири традицисемпе çĕнĕлĕхсен диалектики кăсăклантарать ăна, фольклор витĕмĕн пулăхлă е чăрмантаракан хăшпĕр енĕсене шĕкĕлчет вăл. Пĕтĕмлетĕвĕсем тишкерӳçĕн анлă — кӳршĕри тутар, пушкăрт поэчĕсен хайлавĕсемпе танлаштарать вăл хамăр поэтсем çырнисене, инçерех те тарăнрах пăхма тăрăшать.

Критик хăй стилĕн пĕр çитменлĕхĕпе кĕрешнине те асăрхатăп эп. Тепĕр чухне вăл хăйĕн анлă пĕтĕмлетĕвĕсене конкретлă фактсемпе тĕплесех пĕтереймест пек туйăнать. Ун пек чухне теорилле шухăшлавпа чĕрĕ поэзин пайăр пулăмĕсем пĕр килĕшӳллĕ тĕвĕпе çыхăнсах кайманни те пулкалать. Анчах та çакна палăртмалла: кашни çĕнĕ статйинче авторăн çав вăйсăр енĕсем сахалтарах та сахалтарах палăрса пыраççĕ.

Юлашкинчен «Тăван Атăлта» чртнĕ «Çавра сĕтел» материалĕсем пирки темиçе сăмах. Журналăн тĕп редакторĕ Л. Таллеров умĕн каланинче «сĕтел» тĕллевне çапла палăртнă: «Халь пурте, пур ĕçре те, çав шутра литературăра та, çĕнĕ, ырă улшăнусемшĕн хастаррăн çине тăнă чух, писательпе критикăн пĕр-пĕринчен уйрăмах хытă ыйтмалла, пĕр-пĕрин ĕçĕнчи кăлтăксем пирки именсе-хăраса тăмасăр каламалла...» «Кăлтăксем пирки калассине» ĕçе тĕпрен çĕнетессипе пĕр пекех ăнланас пулать тесен, журнал редакцийĕн программине эпир те ырлатпăр çеç. Мĕнле кураççĕ-ха парти съездĕнче кăларса тăратнă çак шутсăр йывăр та ответлă задачăсене пурнăçламалли май-мелсене, мĕнле çĕнĕ шухăшсемпе сĕнӳсем параççĕ «Çавра сĕтел» хушшине ларса калаçакансем тесе, кашнин сăмахне кăранташпа вуласа тухрăм эп. Тӳрех калатăп: ĕçе тĕпрен çĕнетмелли май-мелсене палăртни сахалтарах курăнчĕ. Пурха вĕсем, çук мар. Анчах та, пĕтĕмĕшле илсен, ашăм ашнă пек, каллех пĕр вырăнта çаврăнатпăр, вунă хут та ку таранччен каланă сăмахсене калатпăр. Ман шутпа, кивĕ сăхман çине çĕнĕ саплăк лартасси мар, çĕнĕ сăхман çĕлетесси — умри тĕп тĕллевĕмĕр. Мĕншĕн-ха,

сăмахран, журналсенчи критика пайĕсем çителĕксĕр ĕçленине, самана ыйтнине тивĕçтерес тесен, вĕсене те хăйсен лаççине хĕрӳрех çунтарма кирлине пĕри те татса каламан? Юрать-ха, çакăн пирки В. Родионов литературовед асăнса хăварнă пĕр тĕлте: «Хамран килестĕк, журналсенчи критика пайĕсен ĕçне тĕпрен çĕнетнĕ пулăттăм: комплиментлă рецензисене, вĕсенчи кашни эмоциллĕ сăмаха (питĕ шеп, вырăнлă, вăйлă т. ыт. те) фактпа çирĕплетсе панă пулсан çеç пичетлеме килĕшĕттĕм, критиксен ответлăхне ӳстернипе пĕрлех вĕсен ирĕклĕхне, прависене (рецензие еплерех çырас ыйтупа) анлăлатнă пулăттăм». Çак цитатăран «критиксен прависене» кам тата хăш вăхăтра ансăрлатнине пĕлме çук, анчах та литературовед мĕн каласшăн пулнине ăнкарса илме пулать: вăл критика пайĕн редакторĕсем ытлашши шикленсе ĕçленине, шăллăрах та çивĕчрех статьясенчен хăраса, тепĕр чух кĕрĕк пĕркеннине сивлесшĕн пулас. Кун пирки ман та кăшт темиçе сăмах каласа хăвармалли пур-ха. Малтан «Çаврă сĕтелри» кăранташпа палла тунă хăшпĕр вырăнсем патне тепĕр хут таврăнам-ха. Унта ларса калаçакансем, пурте тенĕ пекех, хальхи критика шайĕпе çырлахмаççĕ. Çав вăхăтрах критика витĕмне ӳстермелли çулйĕре те тĕрлĕрен курни сисĕнет. «Кирек хăш критикăлла статьяра та (пĕчĕк-и вăл е пысăк-и) тĕп вырăнта ăсталăх ыйтăвĕ тăмалла»,— тет Г. Орлов сăвăç. Çак шухăш хăрахьенлĕ, апла-тăк тĕрĕс мар иккенне Г. Хлебников тезисĕ яр-уççăн кăтартать. «Паянхи критикăн вăйсăр енĕсенчен пĕри — илемлĕ хайлавăн идейăлла содержанийĕпе форми пĕр-пĕрне тарăннăн витерсе, кăткăс диалектикăра çыхăннине уçса кăтартма пĕлменни, çавна пула произведение илемлĕх пулăмĕ пек тишкерейменни» (ку ӳпкев критикăра вуншар çул ĕçлекен хăшпĕр юлташсене те тивет),—тет литературовед. Чăн сăмахăн суйи çук, килĕшмелле кун пек каланипе: хайлавăн формине, ăсталăхне «тĕп вырăна» лартни тепĕр чухне содержанисĕр, пушă хитрелĕхе ырласа йышăнасси енне сулăнтарать. Хв. Уяр вара «критика вăл писательтен ытларах вулакансене кирлĕ пуль» тет. Хăйне ан чăрмантартăр çеç, вăл унпа та сапăр пулма хавас. Ăста прозаикăмăрпа критика хушшинчи çыхăнусем яланах хивре пулнине асра тытсан, çак сăмахсен пĕлтерĕшне тĕрĕс ăнланма пулать.

Литература таврашĕнчи пĕтĕмĕшле атмосферăна сыватма кирлине палăртса вырăнлă сăмах калать Н. Де-

душкин критик. Ман шутпа, çак енĕпе пурсăмăрăн та хытă шухăшласа пăхмалла. Шупка та вăйсăр хайлавсем «пирки сăмах тапратса тӳррĕн каласан, авторĕсем критика çилленсе те тарăхса, шăл хăйраса пурăнни те пур», тет ватă критик. Кам кам та, вăл пĕлме тивĕçлех кунашкал япаласене. Профессилле вăйсăрлăх çеç мар кунта, культурăпа этика каяшĕсем литературăри таса сывлăша наркăмăшлани пирки сăмах пырать ĕнтĕ. Çакнашкал вĕтĕ чунлă çынсем, пĕр-пĕр вырăна ларсан, уйрăмах пысăк сиен тума пултараççĕ. Мĕншĕн тесен унта майĕ-шывĕсем ытларах. Партин юлашки съезчĕ совет обществин пурнăçĕнче демократилле принципсене малалла аталантарма кирлине пусăм туса палăртрĕ. Çакна май кĕретлĕхе (гласность) çул парса пырассине съезд кулленхи саккун вырăнне çирĕплетсе хăварчĕ. Пурнăçри (е литературăри) çитменлĕхсене çиелтен шăлса тухни, пытарма тăрăшни пысăк сиен кӳрет терĕç. Çакăн пек тăвакансене, критикăна хĕсĕрлекенсене çирĕп ответ тыттарас тĕллевпе РСФСР Уголовнăй кодексне нумаях пулмасть ятарлă çĕнĕ статья кĕртнĕ. Çĕнĕлле ĕçлеме хăнăхас тесен, пичет органĕсен те çак принциппа уйрăмах анлăн усă курмалла, ăна çул пама тăрăшмалла. Илемлĕ литература журналĕсен редакцийĕсенче хальтерех çеç-ха акă ытлашши унталла-кунталла пăхкаласа ĕçлеме хăнăхни сисĕнчĕ. Фамусовăн юлашки монологĕнчи пек: «Пĕтрĕ пуç, Мария Алексеевна княгиня мĕн калĕ ĕнтĕ»,— тенĕ евĕрлĕ. Уйрăмах çивĕчрех, шăллăрах критика статйи илсе пырсан, унта пуçлăхра ларакан авторăн хайлавне тиркеме хăйрăн пулсан, редактор алăкне уçса кĕнĕ чух хăвна ху: шанчăкна коридортах хăвар теме пултаратăн (Данте комедийĕнче тамăка аннă чухнехи пек). Редактор кам пирки çырма юранипе юраманнине, кама ырламаллипе хăшне тиркемеллине критикран лайăхрах пĕлет имĕш. Тата çак та тĕлĕнтерет: пачах та пушă япалана мухтаса çырнисем, йĕрĕнтермĕш «пылак» рецензисем пĕр амаран çуралнă çурасем пек кĕшĕлтетеççĕ журнал страницисенче, çапах та вĕсем шиклентермеççĕ пичет органĕн штурвалне тытса пыракансене. Аплах мар пульт текенсене «Ялавпа» «Тăван Атăлăн» хальтерех тухнă номерĕсене тепĕр хут уçса пăхма сĕнетпĕр. Акă, «Ялавра» 1985 çулта пичетленнĕ рецензисене илер. П. Кузьмин А. Николаевăн «Полк анăçалла васкать» кĕнекине хак парать (5 №). Очерксемпе повесть тата калав унта. Пулса иртекен ĕçсене е сюжета йĕркипе каласа пани

ĕнтĕ ку пĕтĕмпех. Кĕнекере повеçпе калав та пур иккен, анчах та илемлĕ литература майĕ-мелĕсемпе сăнарлăх çинчен хускатнă сăмаха кураймастăн çак хайлавра. Рецензире çук япаласенчен тепĕрне тӳрех асăрхатăн: ку вăл кăлтăк-сăлтăксемпе çитменлĕхсем пачах та рецензент куçĕ тĕлне пулманни. А. Николаев — опытлă журналист, анчах ыр сунса асăрхаттарнисене, усăллă сĕнӳсене, ман шутпа, вăл та кӳренмесĕр йышăннă пулĕччĕ. Патшасене е вельможăсене юрас тĕллевпе, вĕсен кăмăлне çырлахтарас тесе классицизм литературинче ода текен жанра вăйлă аталантарнă пулнă. Паянхи кун çав жанрпа усă курни анахронизм çеç шутланать.

Ю. Романова Л. Алексеевăн «Чун туртăмĕ» кĕнекине («Ялав», 1985, 7 №), А. Иванов Г. Орлов поэмисен пуххине (9 №) çав жанрпа усă курсах хаклаççĕ. Уйрăмах кунта çамрăк автора Ю. Романовăна малашне çавнашкал çăмăл çулпа каясран асăрхаттарас пулать. Мĕншĕн тесен «Ялаври» критика пайĕ шăллă е шăлсăр пуласси ун ĕçĕпе тӳрремĕнех çыхăннă.

Çамрăк авторсен е çырма вĕренекенсен рецензийĕсене çеç суйласа илнĕ теме пултарĕç статьяна вулакансем. Шел пулин те, ку апла мар çав. «Тăван Атăлта» кун çути курнă рецензисенче те вăйлă сисĕнет çав каçса кайсах мухтас сулăм. «Тиркевçисене» вара çамрăк теме çук. Сăмахран, В. Долговăн «Вишенка на приплеске» кĕнеки пирки çырнă рецензи (1985, 10 №, авторĕ Л. Степанов) тӳсме çук шăлсăр, «пылак». Сĕнӳ таврашĕ е юлташла асăрхаттарса каланă çур сăмах та пулин курасчĕ çак рецензире иçмасса. Мухтамалли вара тем чухлех тупăннă. Кама усă парĕç-ши ĕнтĕ çакнашкал «мухтав юррисем»?

Çакнашкал рецензисене вулатăн та ирĕксĕрех çапла шутлатăн: пичетлекенĕсем вĕсенчен мар иккен хăрушлăх кĕтеççĕ, çивĕчреххисенчен, шăллăраххисенчен, имшер те хевтесĕр япаласене куçран каласа тиркекенсенчен сехре хăппи кĕтме пулать-мĕн.

...Кĕрхи кунсенче, тӳпере инçе çул вĕçевне тухнă çунатлă тусăмăрсене курсан (ăшра та пулин), ыр сунса: «Кайри мала, хуркайăксем!»—тетпĕр эпир. Çапла каласан, ăмрипе сывлăша çурса малта вĕçекенсене вăй килет тейĕн. Ылмашăнса пырсан, кăшт канса илнĕ пек пулаççĕ вĕсем. Хамăр литературăн тĕрлĕ жанрĕсен картине ылмашăнса, пĕрне-пĕри пулăшса пыракан хуркайăксен ушкăнĕ пек курас килет манăн. Шанатăп:

критика та йывăрлăхсене сирсе малти вырăна тухмаллах.

Статья вĕçне пăнчă лартма хатĕрленнĕ май ăшăмра çапла калатăп: «Кайри мала, хуркайăксем...»

1986

ВĂЛ ÇĔННИШĔН ХАСТАР КĔРЕШНĔ

Чăвашсен паллă çыравçин Илле Тăхти ячĕ — халăхра чи хисеплĕ ятсенчен пĕри. Ĕмĕрĕ вăрăм пулмасан та, вăл пĕтĕм вăй-халĕпе ăс-кăмăлĕн пуянлăхне тăван культура ĕçне хывнă.

1979 çулта пирвайхи хут Тăхти çырнисен тулли пухăхи тухрĕ. Çак кĕнекене кĕреймен паха алçырусем татах та чылай-ха архивсенче. Акă ĕнтĕ çыравçă çуралнăранпа 100 çул çитсе килет. Тăван чĕлхе ăсти, пултаруллă поэт тата прозаик паян кун та пирĕнпе алла-аллăн тăрса, малаш пурнăçшăн, çĕннишĕн хастар кĕрешет.

Паянхи писательсем хăйсен произведенийĕсенче çĕнĕрен те çĕнĕ проблемăсем хăюллăн хускатаççĕ. Тăхти пултарулăхĕнче ӳкерĕннисенчен пач урăхла вĕсем, çавах та пурнăçăн кашни сыпăкĕ пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса тăрать. Çирĕп никĕссĕр паянхи пултарулăх та ăнăçлăн аталанаймĕ. Илле Тăхти — çав никĕсĕн пĕр чулĕ тесе каласшăн эпĕ. Чĕлхене, сатира мелĕсене Тăхтирен вĕренмелли нумай пирĕн çыравçăсен (уйрăмах çамрăксен). Çавна май унăн пултарулăхĕнчи тĕп енсене кĕскен те пулин сăнласа тухасшăн эпĕ.

Илья Ефимович Ефимов (Тăхти) 1889 çулхи сентябрĕн 4-мĕшĕнче чухăн хресчен килйышĕнче çуралнă. Унăн тăван ялĕ Нӳшкасси (Хусан кĕпĕрнинчи Çĕрпӳ уесне кĕнĕ пулнă, халĕ Чăваш АССРĕн Тăвай районне кĕрет) сайра тĕл пулакан хăтлă тавралăхра вырнаçнă: илемне кура асамлă ят панă Элкӳл, аслă улăх-çаран, вăрман... Вырмара, сĕлĕ кĕлтисем хушшинче çуралнă ачана амăшĕ Тăхти тесе ят панă: «Васкаса çуралчĕ пулсан та, унăн ĕмĕрĕнче хыпаланмалла ан пултăр». Автобиографире палăртнă тăрăх, вăл, ултă уйăхра чухнех йывăр чирлесе, тăватă уйăхран тин сывалнă.

Тăхти ачалăхĕ çинчен каласа паракан материалсем нумаях мар. Хăй вăл, сăпайскер, ытларах вăхăтра самана тата çынсем çинчен çырса хăварас тесе хыпаннă.

Халь асăннă автобиографире (ăна 1908 çулта çырнă) хăй пирки калакан фактсене телеграф чĕлхипе кăна палăртса пынă: саккăрта Элпуçĕнчи чиркӳ прихучĕн шкулне кайнă, унта пĕр хĕл вĕреннĕ хыççăн Нӳшкасинчи тин çеç уçăлнă шкула куçнă. Кĕçех ашшĕ ăна Сĕве хулинчи мăнастир шкулне вырнаçтарнă. Кунтан вĕренсе тухсан, 1903 çулта, Илле Хусанти учительсен семинарине кĕрсе, унтан 1908 çулта вĕренсе тухнă.

Пултарулăх ĕçне вăл Хусанти семинарире вĕреннĕ чух пуçăннă. Малтанхи калавĕсене семинари вĕренекенĕсем алçыру вĕççĕн кăларса тăнă «Шурăмпуç» тата «Мыслитель» журналсенче пичетленĕ. Ку вăхăтра семинарире вĕрентнĕ Н. И. Ашмарин «чăваш ачисене хăйĕн хваттерне чĕнсе илсе калаçнă, ĕçтернĕ-çитернĕ, кĕнекесем панă»*. Тăхти те вăл хавхалантарнипех тăван чĕлхен пуянлăхĕпе янравлăхне тарăнрах чухлама пуçлать, халăх сăмахлăхне тĕпчет. Çамрăк вĕренекен тăван тавралăхра çырса илнĕ сăвă-юрăсемпе халапюмахсем «Чăваш сăмахĕсен кĕнекине» пухма хатĕрлекен ученăйшăн паха материал пулнă. Н. Ашмарин словарĕнче И. Тăхти çырса панă вырăнти калаçу тĕслĕхĕсемпе сайра тĕл пулакан сăмахсем пилĕкçĕр ытла.

Çырма пуçланă тапхăра писатель хăй çапла аса илет: «1905 çулта эпĕ хам валли чăвашла тата вырăсла сăвăсем çырма пуçларăм. Çав сăвăсене хăшпĕр юлташсене кăтартрăм та, манран тăрăхласа кулма тытăнчĕç, чылаях кӳрентерчĕç. Пĕри икĕ хутчен патакпа пуçран çапрĕ. Эпĕ çакăн çинчен семинари пуçлăхне кайса каланă пулсан, мана вĕлерес пекех хĕненĕ е семинарире вĕренме пăрахтарнă пулĕччĕç...»**. «Хам валли» тет писатель вĕренмелле çырнă малтанхи сăввисене. Пĕрре кăтартма хăюлăх çитернĕ хыççăн, тен, çамрăк сăвăç вĕсене никамах та вулаттарман. Вĕсем халиччен упранса та юлман.

Семинарире вĕреннĕ чух çырнă «Эпĕ çуралнă çĕршыв» сочиненире çамрăк авторăн сасси уçăлса пыни, вăл чĕлхе тĕлĕшĕнчен çивĕч туйăмлă пулни тӳрех сисĕнет. Çуралнă кĕтеспе тăван тавралăха тунсăхласа ӳкернĕ тĕрленчĕк çеç темелле вунçичĕ çулхи вĕренекенĕн çыру ĕçне. Çапах та унта художник куçĕ те, поэт

---

* Н. Романов. И. Ефимов-Тăхтие асăнса. «Тăван Атăл», 1958, 2 №.

** В. А. Долгов. Чăваш литературин сăн-сăпачĕ. Шупашкар, 1963, 109 с.

чунĕ те палăрать. Чи кирли — автор пурнăç сине ĕççыннни куçĕпе пăхни. Акă ăнсăртран çеç тенĕ пек пĕрик йĕрĕмпе палăртнă сăнар: «Пуп ун патне пырсан, пупа çăмарта пĕçерсе парас пулать, мĕншĕн тесен унăн хырăмĕ çăмах яшкине юратмасть, пултран шӳрпине ун таса тути сыпаймĕ». Тимлĕ вулакан çак йĕркесенче «Колчак» авторĕн «аллине» ансатах уйăрса илет.

Тăхти атеизмĕ пирки калас пулсан, вăл Сĕвери мăнастир шкулĕнче вĕреннĕ чухнех вăй илме пуçланă пулмалла. «Турă сыннисен» вăрттăн та «сăваплă» ĕçĕсене сахал мар курса тĕлĕннĕ ĕнтĕ вун-вуниккĕри ача. Каярахпа пупсене тăрă шыв çине кăларса çырнă сăввисем унăн çивĕч хĕçпех танлашаççĕ.

1908 çулта Тăхти Хусанта пуçламăш классенче вĕренекен чăваш ачисем валли арифметика кĕнеки кăларать. Ăна вăл И. С. Михеевăн тата ытти хăшпĕр авторсен задачникĕсенчен тĕслĕх илсе кăшкарланă. Çапах та кĕнекене вуласа пăхатăн та ку оригиналлăскерех пулса тухнине куратăн. Кил-çурт таврашĕнчи ăпăртапăр, çынсен ячĕсем т. ыт. те, выльăх-чĕрлĕхĕ таранах— пурте чăвашăн кулленхи пурнăçĕпе çыхăннăскерсем. Ӳкерчĕкĕсем йăлтах куç умне чĕррĕн тухса тăраççĕ, сăнарлăхĕпе конкретлăхне пула асра юлаççĕ. Мĕн чухлĕ çĕнĕ термин шыраса асапланман-ши тата автор çак кĕнекене çырнă май.

Çак çулах Илья Ефимович семинарирен вĕренсе тухать, 1908—1914 çулсенче хальхи Элĕк районĕнчи Тавăт ялĕнчи земство шкулĕнче вĕрентет. 1914—1915 вĕренӳ çулĕнче Перевозное ялĕнчи (хальхи Удмурт АССРĕ, Сарапул районĕ) икĕ класлă училищĕре ĕçлет. 1915 çулхи сентябрь уйăхĕнче ăна империализм вăрçине илсе каяççĕ. Анчах та алла пăшал тытса, хăйне камсен интересĕсене хӳтĕлеме çапăçу хирне илсе кайнине Тăхти аван чухланă. Вăл 1916 çулхи август уйăхĕн вĕçĕнче Ĕпхӳри тĕн семинарине вĕренме кĕрет, кунтан та ăна каллех патша çарне илсе каяççĕ.

Октябрь революцийĕпе хавхаланнă Тăхти халăха вĕрентес ĕçе çĕнĕ вăйпа пикенет. 1918—1919 çулсенче вăл Шăхранти (хальхи Канаш хули) учительсен семинарийĕ çумĕнчи кăтартуллă шкулта вĕрентет, 1919—1922 çулсенче Мускавра Çутĕç комиссариачĕн инспекторĕ пулать, 1922—1924 çулсенче Мускавра Чăвашран выçлăх вăхăтĕнче илсе пынă ачасене вĕрентсе пурăнать. 1928 çулта Мускаври Пĕрремĕш Патшалăх университетĕнче этнологи факультечĕн литература уйрăмĕнчен вĕ-

ренсе тухать, Шупашкарти педтехникумра чăваш чĕлхипе литературине вĕрентет. Кунта 1931 çулччен, сывлăхĕ хавшаса çитичченех, ĕçлет.

Илле Тăхти 1938 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче больницăра вилсе кайнă.

Университетран вĕренсе тухас умĕн çырнă заявление Тăхти хăйĕн пурнăç тĕллевне çапла палăртнă: «Занятие чувашской литературой, теоретическое и практическое изучение родного языка, литературно-переводческое дело для меня не случайность, а вопрос всей моей прошлой жизни и будущей моей работы. Вся моя сознательная деятельность с 1905 г. по настоящее время была посвящена родному народу. По окончании университета я должен ехать в Чувашскую республику»*. Писатель хăйĕн иртнĕ кунçулне те, пулассине те халăх пурнăçĕпе сыхăнтарать. Çак пархатарлă та çутă тĕллев витĕр пăхсан çеç Тăхтин ĕç-хĕлне тивĕçлипе хаклама май килет.

Писатель хăйне 1905 çултанпа халăх ĕçне кӳлĕннĕ тесе шутлани ăнсăртран пулман. Поэзире малтанхи утăмсем тунă вăхăталлах вăл халăх пултарулăхне тĕпчеме пикенет. Чăваш тĕрринче аваллăх йĕрĕсем упраннине ăнкарса илет. Тавăт шкулĕнче вĕрентнĕ чухне вирьял чăвашĕсен тум-юм тĕррипе интересленет, чăваш тĕррин тĕслĕхĕсене тĕрлĕ сĕрти музейсене ярса парать.

Тăхти пултарулăхĕ халăх поэзийĕнчен вăй илсе аталанма пуçланă. 1911 çулта вăл Хусанта «Тавăт, Мĕлĕш, Шураç юррисем» ятлă кĕнеке пичетлесе кăларать. Кĕнекери туй юррисене Етĕрне уесĕнчи (хальхи Чăваш АССРĕ, Элек районĕ) чăвашсем хушшинче пухнă.

Тăхти творчести анлă, вăл тĕрлĕ жанрлă тата формăллă произведенисемпе пуян. Тăхтин революциччен çырнисем пурте тенĕ пекех çухалса пĕтнĕ пулин те, çакă иккĕлентермест: çамрăк çыравçă ун чухне поэзие ытларах кăмăллана, ăна çивĕчрех туйнă. Кун пек калани, паллах, çак пысăк туртăм писатель пултарулăхĕн çунатне анлăрах сарма чарса тăнă тенине пĕлтермест. Тăхти прозăпа та ăнăçлă ĕçленĕ. Кунсăр пуçне, унăн эпикăлла поэзийĕнче (сăмахран, «Элихун» поэмăра) драма элеменчĕсем пурри те сисĕнет. Пурнăçăн тӳнтер енĕсене питлекен публицистикăлла хастар статйисене автор çунтаракан сăмахсемпе çырнă. Саманан çивĕч ыйтăвĕсене хускатма хăш жанр выраăнлăрах, çавна суй-

* ЧНТИ НА, V уйр., 214 упр. ед., 1412 инв. №.

ласа илнĕ вăл. Паянхи, халь тумалли ĕçсем писатель пултарулăхĕнче яланах малти вырăнта тăнă. Ку вăл Тăхти халăх пурнăçĕпе уйрăлми çыхăннине, писатель гражданла тивĕçлĕхне самантлăха та манманнине пĕлтерет.

Çакна та татсах каламалла. Патша çарĕнче алла пăшал тытса çапăçнă çамрăк Тăхтин политикăлла тавракурăмĕ анлăлансах пынă. Тăван халăха юратакан, унăн пурнăçне çăмăллатассишĕн çунакан писателĕн класла ăнкарулăхĕ малтанхи вăхăтра уçăмсăртарах пулнă-ха. Çавна пула Тăхти социалла сийсемсĕр пĕр пĕтĕмĕшле чăваш нацийĕ пирки те сăмах хускаткаланă. Çитменнине, ку вăл патша саманинчи революцилле кĕрешĕве çĕкленнĕ интеллигенцин хăшпĕр пайĕшĕн характерлă туртăм пулнă. Қăткăс лару-тăрура малашлăх çулне витĕрех курса çитерейменнисем ун чухне буржуалла националистсен серепине çаклаппă.

Илле Тăхтин февральти революци хыççăнах çырнă «Самана» ятлă сăвви поэт тавракурăмĕн çавнашкал хирĕçулĕхне чылай енчен палăртать. Поэт «кивĕ, йывăр самана» «çур шывпа» юхса кайнăшăн, «хальхи йĕрке лайăххишĕн» хĕпĕртет. Ун шухăшĕпе, малашне

Пуяннипе чухăнни
Пĕр хисепе кĕреççĕ,
Куштаннипе мĕскĕнни
Пĕр сак çине лараççĕ.

Патшана вырăнтан сирпĕтнипех халăх ирĕке çĕнтерсе илейменнине, буржуалла революци ĕççыннине ырлăх пама пултарайманнине «Самана» авторĕ ăнланайман-ха. «Ялти куштан чăвашсене» автор класлăх енчен хакламасть, «мăн кăмăла пăрахма» кăна чĕнет вăл вĕсене. Ку вăл — куштан-кулак таврашне ăс парса, вĕрентсе юсама пăхни. Автор юнĕçенсене мораль енчен питлет, чăвашсене ĕçе йыхăрать. Юлашкинчен çапла пĕтĕмлетсе калать:

Атăл шывĕ аслă вăл,
Кама шывне хутшăнсан;
Чăваш халăх вăйлă вăл,
Пĕр канашпа пурăнсан.

Чăваш халăхне пĕр канашпа пурăнма чĕнни Тăхти буржуалла националистсен сулăнчăкĕсене тивĕçлипе хак парайманнине пĕлтернĕ. Писатель пултарулăхĕн çак тапхăрĕ вăраха пыман. Революципе халăх телейĕ-

шĕн пынă граждан вăрçи вăхăтĕнче Тăхтин класла туйăм-ăнкаравĕ çивĕчленнĕ. Çакна «Колчак» поэмăра (1919) уççăнах курма пулать.

«Колчак» поэма — Тăхти пултарулăхĕн тӳпинчи произведенисенчен пĕри. Çĕршыври лару-тăру нихçанхинчен те кăткăсланса çитнине тарăннăн ăнланса илнĕ поэт хăйĕн хĕртнĕ тимĕр пек çунтаракан сăмахĕн хевтине çивĕч хĕçпе тан тунă.

Жанр тĕлĕшĕнчен пăхсан, поэмăна памфлет темелле. Кунта Тăхтин нумай енлĕ таланчĕ куçкĕретех: публицист хĕрӳлĕхĕ, чĕлхе çивĕчлĕхĕ, сăнарлăх, шӳтпе питлев туртăмĕсем — пурте пур. Кунсăр пуçне, памфлетăн плакатлăрах стильне те палăртмалла. Автор сăрпа пир çине ӳкернĕ пек уйăрса, абстрактлă типлăх мелĕпе ӳкерет сăнарсене.

Кулăшпа питлев жанрĕ вырăссен пĕрремĕш революцийĕ хыççăнхи реакци тапхăрĕнче кăштах тамалнăскер, çак памфлетпа пĕрле тăван поэзире çĕнĕрен амаланса, чĕрĕлсе каять. Ку вичкĕн хĕçпăшалпа Тăхти уйрăмах ăста усă курать. Акă курар-ха унăн геройĕсене. Чи асли, сăмах тытаканни кунта — Колчак.

Шĕвĕр сăмса, хурчка куç,
Типшĕм питлĕ Колчакĕ
Ларать сĕтел умĕнче
Бархат çапнă пуканпа.

Ретрен ларса тухнă вăр-хурахпа тĕрлĕрен юнĕçен таврашĕ. Колчакпа юнашар — «сылтăм енчен ыраш çĕмел пысăкăш тулли питлĕ мăн хырăм». Вăл, «хура риза тăхăнса, ылтăн хĕрес çакнăскер», «машлаттарса сывласа» ларать. Сулахай енче — «яка çӳçлĕ» те хĕсĕк куçлă хуçа-усламçă. Юнашарах — Дутов атаман. «Пуçне асла хывакан çăлтăр-çăлтăр генералран» пуçласа артиллерист-офицер таранах сĕтел хушшине «кашта çинчи чăхсем пек» ларса тухнă.

Мĕн çинчен каварлашать çак эшкер?

Çак улпутсем шут тăваç
Пролетара пĕтерме,
Чухăнсене тĕп тума,
Ирĕклĕхе хĕстерме,
Пуянсене пулăшма.

Колчакăн Микулай патша вырăнне хăйĕн ларас шухăш пур-мĕн. Паллах, вăл патша самани йĕркисене каялла тавăрасшăн. Çак ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ çитсен, ад-

мирал хăйĕн тарçи-тĕрçисене ырлăхра чăпăл тутарĕччĕ. Çеттуй атте аллине «рай алăкĕн уççипе» «тамăк хапхи питĕркĕчне» парасшăн вăл. Улпут таврашне Раççейĕн анлă уй-хирĕсемпе улăх-çаранĕсене тавăрса парасшăн Колчак. Усламçăсемпе купсасемшĕн те адмирал сăмахĕнче савăнмалли сахал мар: вĕсем тĕрлĕ тавар сутса каллех пуйма ĕмĕтленеççĕ.

Ватă генералпа полковника хыттăн кăшкăрса «командовать» тумашкăн» çар кирлĕ-мĕн. Ват шăмшакне кăштах хускатас тесен, вĕсем театра çӳреме, унта балеринăсемпе йăпанма пултарĕç:

Пăркаланса, авăнса,
Хуçкалашса, сарăлса,
Каркаланса, тăсăлса
Йăлтти-ялтти сикекен,
Кула-кула ташлакан
Балерина хĕрĕсем
Сирĕн алла лекеççĕ,—
Тесе калать адмирал.

Тăхти хутран-ситрен çеç хăй шухăш-кăмăлне тӳреммĕн палăртать. Акă тĕслĕх:

Çакă намăс ушкăна
Ăшшĕ, ывăль ячĕпе,
Çеттуй сывлăш хвачĕпе
«Аминь, аминь» каласа
Ларать пупĕ пиллесе.

Кунта автор вăрă-хурахла ушкăна шăпах хăй ятĕнчен «намăс ушкăн» тесе питлет. Ытларах чухне вара вăл геройсене хăйсене калаçтарса, вĕсен шухăш-кăмăлне, ăшчикне, сăн-питне шалтан кăтартса пырать. Çапла чăн малтанах каппайчăк та çăткăн адмиралăн хăтланăвĕсене гротеск мелĕпе çивĕчлетсе ӳкернĕ. Адмирал виçерен тухса кайсах сӳпĕлтетет: «сире çарă паратăп», «сире ирĕк паратăп», «сире вырăн паратăп», «сире шалу хушатăп» т. ыт. те. Анчах та çаксем вĕсем пĕтĕмпех хăмпăланса каланă пушă сăмахсем çеç пулнине вулакан питĕ лайăх сисет. Юлашкинчен ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ ушкăн Колчака урра! кăшкăрса çӳлелле ывăтма пуçлать:

Колчак пĕрре маччана
Хырăмĕпе сĕртĕнет,
Тепре çакă адмирал
Купарчипе маччана
Çитсе лексе перĕнет.

Ирони мелĕпе сăвăç анлă усă курать. Тăхти ытти сăнарсене те асра юлмалла детальсемпе ӳкерет, кашнийĕн — хăйĕн чĕлхи, хăтланăвĕ, социаллă-профессилле уйрăмлăхсем. «Вăрăм çӳçлĕ пуп тете» «атте турă ячĕпе» Колчака несĕпсĕр ĕмĕчĕсене пурнăçлама сывлăх сунса пехиллет. Е акă артиллерист-офицер. Ун шучĕпе, офицерсем юн тăкма тивĕçлĕ мар, вĕсен штабсенче лармалла е хăрушă вырăнсенчен аякра пулмалла.

Юлашкинчен «шурă кашкăр ушкăнĕ» пĕр саспа юрă юрлать:

Тарăхса та хурланса
Хура халăх ĕçлетĕр.
Ырă курса, савăнса,
Ĕçсе-çисе, юрласа
Ĕмĕр эпир пурнăпăр.

Чăн та, Тăхти фактсене ытлашширех çăратса кăтартас енне сулăнать; сăмахран, кам кăна çук пуль Колчак пухăвĕнче: ĕçхалăх юнне ĕçсе пурăннă классемпе социалла сийсен представителĕсем пурте пур кунта. Анчах та памфлетра пурнăç чăнлăхĕпе искусство чăнлăхĕ пĕртте хирĕçлемеççĕ. Тăхти-публицист карикатурăлла стильпе ӳкерет Колчак ушкăнне. Ку вăл — реализмла ытарлăх, революцичченхи чăваш литературинче çак мелпе Тайăр Тимкки анлă усă курнă, анчах вăл романтизм ытарлăхне ытларах кăмăллланă.

И. Тăхти революцичченех амаланма пуçланă питлевпе кулăш лаççине тепĕр хут йăлкăшса та хĕм сирпĕтсе çунмалла чĕртсе ярать. Çапла вара, Çеçпĕл Мишши сăввисем пичетленме пуçланă вăхăтрах Тăхти пысăк калăплă формăна алла илет.

«Колчак» памфлет, 1919 çулта Хусанта пысăк тиражпа уйрăм кĕнекен кăларнăскер, Хĕвелтухăç фронтĕнче шуррисемпе çапăçакан чăваш салтакĕсем хушшинче çиçĕм пек хăвăрт саланать. Вăхăтлăха сухапуçран уйрăлса пăшал тытнă салтаксене вăл вăрçă тĕллевĕсене лайăхрах ăнланса илме пулăшать; унта тăшмана тӳрех тĕллесе кăтартнă. Ялпа хулари чăваш çыннисем те памфлета юратса вуланă, пăхмасăр каланă, клубри сценăсем çинче ун тăрăх инсценировкăсем лартнă.

Çирĕммĕш çулсен малтанхи çурринче И. Тăхти ытларах поэзи жанрĕпе ĕçлет-ха. Çакна писатель таланчĕ поэзие çывăхрах тенипе çеç ăнлантарни çителĕксĕр. Кунта В. В. Маяковский сăмахĕсене аса илни вырăнлă. «Революци литературин сăвăран пуçланнă»,—тенĕ вăл.

Илле Тăхти çеç мар, Çеçпĕл Мишши те, С. Элкер те, Хумма Çеменĕ те — пурте тенĕ пекех, сассисене малтан поэзире тĕрĕслесе пăхаççĕ, пултарулăх ĕçне сăвăран пикенеççĕ. Совет саманинчи çĕнĕ поэзи халăх сăмахлăхĕн хŭттинче вăй илсе амаланать. Малтанхи тапхăрта халăх юрри-сăввин виçипе форми тата эстетикипе поэтики чăваш сăвăçĕсен пултарулăхне вăйлă витĕм кŭрсе тăраççĕ-ха. Тăхти сăвви-поэмисем пирки те çакнах каламалла.

Тăхтин пĕтĕм поэзине тенденциллĕ поэзи теме юрать. Ку вăл пиисатель пĕтĕм вăй-халĕпе талантне пурнăçа çĕнетсе улăштарас ĕçе парасшăн çуннине лайăх кăтартать. Тăхтипе юнашар тăрса социализм çуртне купалама пикеннĕ сăвăçсем хушшинче «таса поэзие» кăмăллаканнисем те пулман мар-ха. Çирĕммĕш çулсен çурринче хăшпĕр поэтсем, интимлă лирика картине хупăнса, шăпчăкпа савнин хĕсĕк тĕнчинчен тухайман.

Çĕнĕ чăваш поэзийĕн нумай саслă хорĕнче Тăхти сасси хăйне майлă кĕвĕллĕ илтĕнет. Поэта социализмла пурнăç пуçламăшĕн кашни палăрăмĕ, кашни хунавĕ савăнтарать. «Ĕçлекенсен сасси» журнал тухма пуçланă кăна — Тăхти çийĕнчех çавăн пĕлтерĕшне уçса пама васкать («Эпир куçни Çĕпĕре...», 1924). Хут вĕреннипе кĕнеке усси çинчен те чылай çырать поэт. Акă «Хальхи çĕнĕ пурнăçра...» сăвăра (1924) чăваш ĕççыннисене кĕнеке, хаçат-журнал çырăнса илме çапла чĕнсе калать:

Ним пĕлмесĕр тĕттĕмре
Хупăрланса пурăнсан,
Çĕнĕ пурнăç хĕвелĕ
Сирĕн çине пăхаймĕ.
Аслăлăхăн чăнлăхне,
Вĕренĕвĕн мухтавне
Сăра курки вĕрентмест —
Кнеке-хаçат вĕрентет.
Хальхи пурнăç хăватне
Чĕлĕм тĕтĕм кăтартмасть,
Çĕпре курка палăртмасть—
Хаçат-журнал пĕлтерет.

Шутласан, сăввăн содержанийĕ хаçатра куллен пичетленекен пĕр-пĕр усăллă сĕнŭ паракан статья валли вырăнлăрах пек курăнать. Çапах та кун йышши сăвăсенче те Тăхти-художник ăсталăхĕ сисĕнет: витĕмлĕ чĕлхепе, сăнарлă та ансат каласа парать автор хăй шухăшне.

Куллен-кунах ураланса пыракан ял пурнăçĕнче

кивелнине, çĕнĕ хунава ӳсме чăрмантараканнине те витĕрех курса тăнă писатель. Ĕçхалăхĕн ăстăнне ĕмĕрсем тăршшĕпех минретсе, тамăкпа хăратса, улталаса пурăннă пуп таврашне пĕр хĕрхенӳсĕр сатира çулăмĕпе çунтарнă Тăхти. Писателĕн тĕне хирĕçле çырнă сăвăсем хăйсене майлă пĕр ярăм пулса тăраççĕ.

В. И. Ленин «О значении воинствующего материализма» ятлă статйинче (1922) тĕне хирĕç кĕрешес ĕçе уйрăмах тимлесе тумаллине палăртнă. Ильич чĕнĕвĕпе хавхаланнă Тăхти, умлă-хыçлă темиçе сăвăпа статья çырса, хаçат-журналта пичетлет. «Пупсене» (1922), «Çав-çав çĕрте, çав çĕрте» (1923), «Пуп таврашĕн мункунĕ» (1924) тата ытти сăвăсенче поэт «мăн хырăмлă», «вăрăм кăтра çӳçлĕ», «хура пупăн» ултавçă сăн-питне тăрă шыв çине кăларать. Ку сăвăсем — чăваш литературинчи тĕне хирĕçле произведенисен антологийĕнче тĕп вырăнта тăмаллискерсем.

Тăхти чиркӳ таврашĕнчи çынсен сăн-сăпатне уçса кăтартнипех çырлахмасть, вăл тĕн-тĕшмĕшĕн социалла тымарĕсене кăклама та хăюллăн чĕнсе калать. «Патшасен, улпутсен, пуянсен, пупсен вăхăтĕнчен юлнă пăсăклăхсем те çав тилпĕрен тымарĕ пек»,—тет писатель. Хăш чух тарăхса питлет, вăхăчĕпе шахвăртса йĕплет е тăрăхласа кулать.

Тăхти кулли адрессăр та тĕлсĕр йăваш кулă мар. Акă епле кăтартать пире поэт мункун эрнинче ял тăрăх хĕреспе килтен киле çӳрекен кăтра пупа. Турра ĕненекенсене çылăхпа хăратаканскер, вăл хăй те çылăхсăр мар иккен: «Христус турă чĕрĕлнĕ, чăн-чăнах та чĕрĕлнĕ!» текелесе сăра куркисене пушаткаланă пуп «çынсен куçĕ умĕнчех таçта кайса çухалнă».

Шемертенти Юс Митюк
Арлан Иван патĕнче,
Вите хӳми çийĕнче,
Çинчĕк улăм айĕнче
Иван кинĕ Плакипе
Кăтра пупа картара
Сисмен хутран курнă, тет.

(«Пуп таврашĕн мункунĕ»)

Кулăшпа питлевĕн çивĕч хĕçпăшалĕпе Тăхти халăх пурнăçĕнчи, йăла-йĕркери тĕрлĕ çитменлĕхсене часрах пĕтерес тĕллевпе меллĕ усă курать. Совет влаçĕ халăх культурин шайне çĕклеме пур майсем те туса панă пулин те, нумайăшĕ хут вĕреннин пĕлтерĕшне ăнланса

çитеймен-ха. Хăйне нихçан та халăх шăпинчен уйăрман поэта çакă, паллах, савăнтарман:

Сĕм вăрманта тунката
Кăмпаланса, мăкланса,
Çĕрсе ларать, теççĕ-çке.
Эпир ĕнтĕ çавăн пек —
Мĕн ватăлса виличчен
Пурăнатпăр çавнашкал,
Кăххăм-кăххăм ӳсĕрсе,
Чире-чĕре йыхăрса,
Кĕсен-çăпан юхтарса.

Поэт чунĕнчи нихçан пирчеми сурансене курман сисĕмсĕр ăçтиçуксем Тăхтие айăплама пăхнă: художник пурнăçăн тӳнтер енĕсенче чакаланать имĕш, социализм ӳсĕмĕсене курмасть-мĕн. Паллах, халь çакă пирĕншĕн кулăшларах туйăнать, анчах та кирлĕ-кирлĕ мар çĕртенех турткалани Тăхтие нумай чăрмав кӳнĕ. Эпир пĕлетпĕр: Тăхти çĕнĕ пурнăçăн кашни хунавĕшĕн савăннă, хăрса ларнисене пĕр шеллемесĕр кăкланă.

Тăхти пултарулăхĕн анлăхĕпе сулмаклăхне çакă та кăтартать: поэт истори темипе çырнă чи малтанхи чăваш писателĕсем хушшинче тăрать. Истори тематики литературăна сюжетсемпе пуянлатнă, паллă çынсен ĕçĕхĕлĕпе пурнăçĕ çинчен калакан материалсем панă. Кунсăр пуçне, халăхăн иртнĕ пурнăçĕпе кунçулне ӳкерсе кăтартас ĕçĕн политикăлла тепĕр пысăк пĕлтерĕшĕ те пур. Вырăс мар халăхсем пирки патша чиновникĕсем аваллăхсăр та пуласлăхсăр халăхсем, вилсе пĕтме тивĕçлĕскерсем тесе паврана.

Октябрьте ирĕке тухнă халăхсен наци туйăмĕ мăнаçланнă. Çакна чăваш писателĕсем харăссăнах истори темипе темиçе произведени çырма пуçлани те лайăх кăтартать. 1918 çулта Тăхти «Элихун» поэма çырма пикенет. 1918—1921 çулсенче Г. Тал-Мăрса «Силпи» трагеди çырать. Кĕçех Н. Шупуççыннин «Еркĕнĕпе» С. Элкерĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэмисем пичетленеççĕ. Н. Шелепи халăхра илтнĕ тăрăх сăвăланă «Уксах Тимĕр Пӳлере илни» тата «Эссепе» халапсене те асăнмалла. Истори тематики пысăк формăллă произведенисем çуратать: поэма, роман т. ыт. те. Çапла вара поэзи жанрĕн чиккисем анлăлансах пыраççĕ.

«Элихун» поэмăна Тăхти пĕтĕмпех çырса пĕтерейменн. Унта чăваш халăхĕ хăй ирĕкĕпе Вырăс патшалăхĕпе пĕрлешнĕ тата вырăссем Хусан ханлăхне çĕнтерсе илнĕ тапхăра çырса кăтартас тĕллев лартнă. Анчах автор уйрăм сыпăксене пĕр пĕтĕмлетӳллĕ шухăшпа çых-

са тĕвĕлеймен. Андрей Курбский, Туксар, Элихун, Селиме сăнарĕсем асра юлаççĕ пулин те, вĕсем реализмла типизаци йĕркипе ăсталанăскерсем мар-ха. Тăхти хăй геройĕсене идеализацилесе кăтартать. Поэмăн пысăк ситменлĕхĕ вăл — халăх сăнарне, унăн пурнăçне кăтартайманни.

Тăхти историлле документсемпе те паллашманни сисĕнет. Поэма пĕтĕмпех тенĕ пек халăхра сарăлнă юмах-халап çинче никĕсленет. Ку вăл историксем чăваш халăх историне тарăн тĕпчеме ĕлкĕреймеппинчен нумай килнĕ. Çавна пула илемлĕ сăмах ăстисем, халăхра упраннă легендăсене тĕпе хывса, истори вăрттăнлăхĕсене уçма тăрăшнă. Апла пулин те, çак малтанхи произведенисем реализмла искусствăра наука историзмĕн принципĕсене аталантарма пулăшнă.

1935—1937 çулсенче Тăхти «Самана сăвви» ятлă лиро-эпикăлла произведени çырать. Поэт çĕнĕ пурнăçăн, саманапа вăхăтăн сăн-сăпатне ӳкерсе кăтартас тĕллевпе хĕрсе ĕçлет. Кунта хальхи эпос паллисем сисĕнеççĕ, сăвăçăн ăсталăхĕ ӳсни те, шухăш анлăхĕ те, гражданла туйăм таппи те уççăнах палăрса тăраççĕ. Пурнăç юхăмне айккинчен сăнаса çырман автор хăй произведенине; вăл яланах ĕç вĕресе тăракан çĕрте, халăхпа пĕрле. Халăх культури ӳссе пыни те, çамрăк ăру сывă çитĕнни те, нумай нациллĕ çĕршыври халăхсем хушшинчи туслăх çирĕпленсе пыни те, наукăпа техника çитĕнĕвĕсем те — пурте савăнтараççĕ Тăхтие, пурин çинчен те каласа пама васкать вăл. Поэт хальхипе ĕлĕкхине контрастлă танлаштарса кăтартать. «Ачам, эсĕ курас çук эпир тӳснĕ хурлăха»,—тет пусмăртĕсмĕре пайтах тутанса çитĕннĕ икĕ самана çынни.

«Вичкĕн пероллă» публицист тĕнчери фашизм ертӳçисене — Гитлера, Муссолинине, Франкона питлет, çак юнĕçсенсен карикатурăлла сăн-сăпатне ӳкерсе кăтартать.

Тăхти пултарулăхĕнче партилĕх принципĕ кунран-кунах çирĕпленсе пынă. Марксизм-ленинизм вĕрентĕвĕнчен, çав çулран «аслă çул та çук» тенĕ поэт «Самана» сăввинче. Вăл кашни япалапа ĕç-пулăма партилле çивĕч куçпа пăхса хаклапă.

Çирĕммĕш çулсен çурри тĕлнелле Тăхти ытларах калавсемпе очерксем çырнă. Ку тапхăрта шăпах чăваш литературинче проза вăй илме пикеннĕ. Публицистла чун-хавалăлă Тăхти поэзире хăйне тăвăртарах туйма пуçланă. Вĕресе тăракан шухăш-туйăма вулакан чун-

чĕри патне ирĕклĕн çитерме кĕске калав жанрĕ питĕ меллĕ. Тăхти калавĕсенче кăткăс характерсемпе «авкаланчăк» сюжет çук темелле. Ытларах чухне кунта тĕпри сăнар — калавçă. Тĕрĕссипе каласан, писатель калавĕсенчен нумайăшне очеркран уйăрса илме те йывăр. Тăхти унта-кунта е çулçӳревре тĕл пулнă çынсен ĕçĕхĕлĕпе шухăш-кăмăлне çырса кăтартать, пурнăçри таса, сывлăхлă пулăмсене асăрхаса савăнать, йăла-йĕркере культура çитейменни писателе пăшăрхантарать. «Çанталăк» калавра (1925), сăмахран, Тĕрлемес станцийĕнче паллашнă çынсен хуйхи-суйхи çинчен каласа парать вулакана автор. Кам кăна çук пуль кунта, кашнин хăйĕн тĕнчи, пурнăç опычĕ: пĕри Çĕпĕре кайса юра ерсе килнĕ, халь çул çинчи пăтăрмахсене кулянса пĕлтерет; тепри, ав, типтерлĕрех пурăнма вĕренейменнине пулах суккăр пулса юлнă. Виççĕмĕшĕ, чылай вăхăт хушши тĕнче каснăскер, тĕрлĕ халăхсен пурнăçне сăнанă. Финсем, сăмахран, ăратлă лашасемпе ĕнесем усраççĕ иккен, çĕрĕçне машшинпа туса пыраççĕ. Чăвашсен те пурнăçа ăслăлăх вĕрентнĕ пек йĕркелесе пымалла тет автор.

Писатель калавĕсенче яланах вĕрентсе калани, дидактика пур. Ятарласа сăнамасан, ăна асăрхама та хĕн. Тăхти пурнăçри пулăмсене шур сухаллă çын куçĕпе те кăтартма пултарать, тепĕр чух ача чĕлхипе шăкăлшăкăл пуплесе каласа парать. Чун кукринче чакаланса тĕтреллĕ туйăмсемпе йăпаннине вăл хăйшĕн ют тесе шухăшланă. Ун калавĕсене вулама пикеннĕ-пикенменех автор еккине ӳкетĕн те вара çав асамлă туртăмран вĕçне çитмесĕр те хăтăлаймастăн. «Ураскасси» калавах илер. Çак ялти пĕр çын патне илсе кĕртсе кăтартать пире автор. Пӳрт-çурчĕн тулашĕпе ăшчикне, килкартишĕпе пахчине т. ыт. те кăтартса çаврăнать. 20-мĕш çулсенче йăла-йĕркери тирпейлĕхшĕн, хутпĕлменлĕхе пĕтерессишĕн кĕрешнĕ тапхăрта ку калав вулакана уйрăмах шухăшлаттарнă. Юлашкинчен автор хăй курнине çапла пĕтĕмлетсе калать: «Çав Ураскассинчи хресчен пек пурте тăрăшсан, тирпейлĕх режимне пур çын ăнланса, ĕçе тирпейлĕ, тăрăшса ĕçлесен, пирĕн пурнăç çак вăрман пек пуян пулĕ». Калав вĕçленнине вулакан сиссе те юлаймарĕ, автор ăна чĕрĕ ӳкерчĕксем урлă мĕн чухлĕ çĕннине, хальччен илтменнине пĕлтерчĕ, усăллă сĕнӳсем пачĕ. Купăста лартса ӳстересси («Купăста», 1927), электричество вăрттăнлăхĕ («Çиçĕм çăмахĕ, 1927), витаминсен усси («Витаминсем», 1927),

стена хаçачĕн пĕлтерĕшĕ («Мĕн ку?—Япала ку», 1927) пурнăçри тата ытти нумай-нумай çĕнĕлĕхсем çинчен каласа парать вулакана автор. Писатель витĕр куçлă, час-часах авалхи пурнăçа асилет, ăна хальхипе танлаштарса кăтартать. Çеннине яланах публицистла хастаррăн хŭтĕлет.

Социализмла пуçарулăх, çĕнĕ йăла-йĕрке çĕнтерсе, çирĕпленсе пынă май этем психологийĕ те улшăнать. Витĕр куçлă писатель çак процеса вак-тĕвек çинчен калаçнă хушăрах тенĕ пек куçа курăнмалла сăнласа парать. Ĕмĕрне кĕтŭре çŭресе ирттернĕ Шерхулланах илер («Шерхулла», 1925). Çиелтен пăхсан, камитçĕ евĕрлĕрех çын пек курăнать çак этем. Анчах ун шалти тĕнчи вĕçĕ-хĕррисĕр анлă, вăл сисĕмлĕ чунлă. Çавна пула ĕнтĕ ялта хăна-вĕрле пухса сăйланă чух нихçан та Шерхуллана чĕнмесĕр хăвармаççĕ. Выльăх-чĕрлĕхпе çутçанталăка та çынна юратнă пекех юратать вăл, вĕсен «чĕлхине» ăнланать.

Шерхулла (ун аслашшĕ те кĕтŭрех ĕмĕрне ĕмĕрленĕ пулмалла) нумай çŭренĕ, хурапа шурра сахал мар курнă. Кивĕ саманара çитĕннĕ çын характерĕн паллисем те сисĕнеççĕ унра. Апла пулин те, Шерхулла социализм тивлечĕпе ура çине тăнă, хăй тивĕçне тарăн ăнланса илнĕ этем. Класс туйăмĕ çивĕчленнĕ Шерхулла хăйĕн пурнăç çулĕ Юс Митюкĕ пек ял куштанĕсеннипе (пусмăрçăсен юлашкийĕсеннипе) пĕрле маррине нихçан-хинчен те уççăн кура пуçлать.

Е Ярмуша илсе пăхсан («Ярмуш», 1926), ун психологийĕнче те çĕнĕлĕхсем асăрхама пулать. Акă хăй пирки аса илет Ярмуш. Ĕлĕк вăл ял куштанĕ пулнă:

Эп вулăснăй суда çветитле çŭреттĕмччĕ.
Курни-курман-и— эпĕ курнă пулаттăм.
Çветитле кайнăшăн ĕçтеретчĕç, укçине те чикеттĕм.
Пĕрре çавăн пек кантура старшина суйларăмăр.
Çавна суйласшăн хам та хытă кĕрлерĕм пухура.
Суйласан, хисепсĕр ĕçкĕ, закуска лартрĕ старшина.

Çĕнĕ йĕркесем килĕшсех каймаççĕ-ха Ярмуша. Хăй ачисемпе те килĕштереймест вăл: пĕр ывăлĕ, авă, комсомола кĕресшĕн çŭрет. Халь те-ха, авалхилле, çĕре тара панă ятпа ĕçес шухăша пăрахаймасть. Çапах та ял пурнăçĕнчи улшăнусем Ярмуш ăнланăвĕсемпе тавракурăмне çĕнетсех пыраççĕ. Çур ĕмĕрне хусахăн ирттернĕскер, вăл арлă-арăмлă, ача-пăчаллă пурăнма пуçлать. Пухусене çŭрет, халăх ирĕкĕнчен текех иртеймест. Хулленех йĕркене кĕрсе пырать.

Этемĕн кăткăс психологийĕнче тымар янă кивĕ самана юлашкисене кăкласа тасатасси — йывăр ĕç.

Тăхти, патша саманинчи наци пусмăрĕн ирсĕрлĕхĕпе тискерлĕхне мĕн ачаран тӳссе çитĕннĕскер, социализмлă çĕршыври пĕртан халăхсен туслăхне хавхалануллă мухтать. «Ваçкă, Ванькă, Ахмет» калавра (1926) писатель пĕр ĕмĕтпе тата пĕр туйăм-кăмăлпа çунатланнă виçĕ каччăн — вырăс, чăваш тата тутар çыннисен савăнăçĕпе хуйхи-суйхине уçса кăтартать:

«Халĕ Сормово заводĕнче, вырăс рабочисемпе юнашар тăрса, пилĕкçĕр çын ытла чăваш рабочи ĕçлет; вырăс хресченĕ — вырăс рабочи, чăваш рабочи — чăваш хресченĕ алла-аллăн çавтăннă — Сормово заводĕнче вĕсем, пурте тăван пек, юнашар тăрса ĕçлеççĕ,

Вырăс, тутар, чăваш, мари, мăкшă Союзри тата ытти ĕçлекен халăх халĕ пĕртăван, пĕр хисепре».

Паллах, кунта Тăхти Совет Союзĕнчи халăхсен хутшăнăвĕсен çиелти паллисене, малтанхи утăмĕсене кăна кăтартса парать-ха. Социализмлă общество çирĕпленнĕçем çак туслăх, тĕрекленсе, çĕнĕ интернационалла пĕрлĕхе куçать.

Тăхтин прозăлла япалисем пахалăх тĕлĕшпе пурте пĕр шайра мар. Чылайăшне писатель, пĕрре ларсах çырса пĕтернĕ хыççăн, якатса та аппаланман. Очерксарах е ахаль калаçу формипе çырнă калавсем те чылай писателĕн. «Крымра» (1927) ятлă калава пĕтĕмпех диалог мелĕпе йĕркеленĕ. Крымран таврăннă этем çĕр чĕтренни çинчен каласа парать. Автор çак çыннăн ятне шывне те, характерне те палăртмасть. Герой хаçатра вуласа пĕлме май пур хыпарсене пĕлтерет. «Çыру» калавра та герой характерĕн хăйевĕрлĕхне кăтартайман. Автор пахчаçимĕç ĕрчетес тĕлĕшпе усăллă канашсем панипех çырлахать. Сăмах май каласан, Тăхти çыру формипе час-часах усă курнă. Пĕр герой теприн патне çыру çырать, курни-илтнине каласа парать. «Йысна» (1928), «Салам» (1928), «Чипер Альтюк» (1935) калавсем шăпах çавăн йышшисен шутне кĕреççĕ.

Этемĕн пĕтĕм хуйхи-суйхипе усрав ĕмĕчĕсене, кулленхи ĕçне-хĕлне куç умне кăларса тăратать писатель «Йысна» калавра. Ача Çĕпĕре куçса кайнă аппăшĕпе йыснăшĕ патне çыру çырать. Ун хăйĕн тавракурăмĕ, психологийĕ, шалти тĕнчи. Çырма та йĕркеллĕ вĕренеймен-ха вăл: «Пуквăсем, саспаллисем хам пек туратлăрах пулаççĕ пулас та, йысна уншăн ятламĕ-ха»,—тет. Çапах та кӳршĕри куштан Хĕветĕр ывăлне çыру çырса

пама йăлăнмасть вăл, мĕскĕнленмест. Пĕчĕк хресчен психологийĕ çирĕпленет ачара. Тăлăх-турата пурнăç ачаранпах хăй тĕллĕн пурăнма вĕрентет. Кăшт чееленесси те çук мар унăн. Акă инçетри тăванĕсемсĕр тунсăхланăскер, епле майпа чĕнет вăл хăнана: «Йытă çăвăрласан, çыру çырса пĕлтерĕпĕр сире. Çул укçи, расхут, чылай тухĕ те, çав йытă çурисене те пулин илме килсе каймăн-ши, йысна!» Пурнăçпа вилĕм çинчен те хурапа шурра пайтах активнĕ çын пек шухăшлать вăл. Ашшĕпе амăшне пытарни çинчен пĕлтерет: «Йысна, аппа! Çапла ĕнтĕ вăл пурăнăç, пĕри вилет, тепри чĕрĕлет, ӳсет, çӳрет»,—тет. «Вăтамсемпе чухăнсем пĕрлешсен, куштан Хĕветĕр пеккисене пĕтерме май килмĕ-ши?»—тесе шухăшлать ача. Иккĕленӳрен ытлаларах пуласлăха ĕненни вăй илсе пырать ĕнтĕ ача чĕринче. Пурнăç çĕнелĕвне сăнаса хăй ăсĕпе ерипен çывхарать хресчен ачи «кĕрешӳре — вăй» текен шухăш патне.

Тăхтин пĕчĕк формăллă прозинче калавçă сăнарĕ уйрăмах палăрса тăрать терĕмĕр. Чылай чухне писатель пĕрремĕш сăпатран, хăй ятĕнчен каласа парать. Шӳтлесерех те юптарса тата иронилле куларах ӳкерет Тăхти хăй портретне. «Самана сăвви», «Тăхти тени çавнашкал...» тата ытти сăвă-поэмăра та куратпăр эпир поэт хăйне хăй йĕпленине. «Иптеш» калав пĕтĕмпех ирониллĕ. Вырăнĕ-вырăнĕпе ăнланма та çăмăл мар: те чăнласа калать писатель, те шӳтлет. Тăхти сăн-сăпачĕ курнăçлану мар. Вăл, алă кăнтарса хăлаçланакансене е менторла сасăпа вĕрентекенсене тӳсме пултараймanскер, хăйне те шеллемест: «Çавах куратăп эпĕ: çынсем пурнан пурнăçрах уçăлса, çивĕчленсе, вĕренсе пыраççĕ. Эпĕ ун пек мар çав. Хам măштăрккине хам та сисетĕп те, анчах çынсем пек çивĕчленме пултараймастăп-çке-ха»,—тет. Паллах, пĕртте иккĕленме кирлĕ мар: чавсапа шăтарса «çĕкленекен», «халăх кукăльне» (М. Е. Салтыков-Щедрин сăмахĕ) пайланă çĕре чăн малтан сăмсине чикекен çивĕч çынсем пирки калать кунта автор. Амсанмасть те вăл çавсен шăпине. Хăй вара, Тăхти, пурнăç хистенĕ самантсенче калама çук çивĕч пулса та сахал мар тĕлĕнтернĕ саманташĕсене. Поэта астăвакансем кун пирки пĕрре çеç мар çырнă. Хветĕр Уяр каланине çеç илсе кăтартам:

«Вăл çулсенчи Шупашкар пек пĕчĕк хулара пурин çинчен те пурте пĕлеççĕ. Тепĕр чухне çуккине те пур тăваççĕ. Тăхти пирки те темĕн те илтнĕ эп. Ыррине,

усаллине те. Вăл çунатсăр вĕçекенсене юратмасть, тетчĕç. Пĕр хĕрсе кайсан, пухура-мĕнте тепĕр артистран ирттерет, чăн-чăн импровизатор, çырса пырас пулсан, статья е калав хатĕр, тетчĕç». Çав импровизатор пултарулăхĕ пирки хамăрăн ватă писательсем пуç тайса калаçнине эп хам та темиçе те илтнĕ. Вăл легендăсене пĕтĕмпех чăн теме май килмест, паллах. Анчах та писатель характерĕн уйрăм енĕсем çине ӳкекен çутă пайăркисем теме пулать-тĕр вĕсене. Акă, сăмахран, чăваш çыравçисен пĕр шавлă пухăвĕнче (çирĕммĕш çулсен вĕçнелле) Тăхти тăрса сăмах каланине илер-ха. «Эп пултарусăр, сахал вĕреннĕ, сахал пĕлекен çын,—терĕ, тет поэт хăй пирки.—Гомер ятне илтмен те, Шекспира пĕлместĕп, Толстоя нихçан та вуламан...» Çапла юптарса-шахвăртса калаçнине çăвар карса итлекен çамрăксенчен чылайăшĕ ĕнер çеç суха кассипе утнă пулнăха, паян вĕсем литературăпа пуçласа паллашма пикеннĕ. Тĕлĕнтермĕш оратор хăйсене мистификациленине чылайăшĕ ăнкарайман та пулĕ. «Пĕлместĕп», «вуламан» текенĕ, Мускав университетĕнче ăс пухнăскер, паллах, тĕнче литературине лайăх пĕлнĕ, тарăн тишкерсе тĕпченĕ. Апла пулсан, мĕн тума кирлĕ пулнă-ха поэта çавнашкал хăтланса тĕлĕнтерни? Çакăн тупсăмĕ пирки шухăшланă май, çирĕммĕш çулсенчи вырăс литературинче палăрнă хăшпĕр туртăм-сулăмсене аса илни вырăнлă пулĕ. Вĕсен варкăшĕ хамăр чăваш литературин çав тапхăрти аталанăвĕнче те аванах сисĕннĕ. Сăмахран, пролеткульт лозунгĕсемпе перкелешни, традицисене кăкласа çĕнĕ культура никĕсĕ хывма йыхăрни, «попутчик» текен писательсене саманапа пĕрле аталанакан литературăн анлă çулĕнчен «уйăрма» хăтланни т. ыт. те. Тăхтие те пирĕн критиксем тĕрлĕрен хакласа пăхнă. «Хастарлă, хыт утăмлă» çамрăксенчен нумайăшĕ тин пĕлӳ керменне килсе кĕнĕ, вĕренмелли, ăс пухмалли вĕçĕ-хĕррисĕр-ха вĕсен. Теприсем сахал пĕлнĕ çĕртенех тем те пĕлнĕн тыткаланă хăйсене. Çавăнпа марши пысăк культурăллă интеллигент Тăхти, энциклопедилле ăс-хакăл хуçи, пĕлмĕше персе, хăшпĕр «шакла пуçсенчен» (ашшĕ пек) ăшшăн тăрăхлать, кулса та илет. Чăвашра авалтан сарăлнă йăлапа, шахвăртать, шӳтлесе чĕпĕтет.

Писатель палитрине ку таранчченех тĕплĕн сăнаса пăхман-ха. Тăхти хăй хайлавĕсен сăнарлăхĕпе курăмлăхне чĕрĕ сăрсемпе вăйлатать. Чĕрчун е пĕр-пĕр япала таврашне писатель сăркăçпа пир çине ӳкернĕ

пек ӳкерсе хурать. «Уйӑх тухать пӗлӗте, хаяр сыннӑн куҫӗ пек»,—тесе калама Тӑхти çеç пултарнӑ ахӑр.

Çутçанталӑкри тӗрлӗрен сас-чӗве писатель евӗрлев сӑмахӗсемпе уçӑмлатать: мӑррӑк-мӑррӑк кушакки, шӑри-шари ачи-пӑчи, лӑнкки-ланкки вӗркелекен йытӑсем т. ыт. те. «Кранки-кранки Франко пур»,—тет поэт, Испанири фашистсен пуçлӑхне çӑханпа танлаштарса. «Çил ачийӗ пӳрт çумне, кантӑк айне пытанса, хашӑлтатать, шӑхӑрать»,—тесен, кам асӗнче чӗрӗлсе тӑмастьши çил-тӑманлӑ хӗл кунӗ.

Тӑхти халӑх сӑмахлӑхӗн эстетикипе поэтикине тӗплӗн сӑнаса тӗпченӗ, çак иксӗлми пуянлӑхпа вырӑнлӑ усӑ курнӑ. Корреспонденци е пӗр-пӗр заметка çеç пултӑр — вӑл çырнисенче тӑван чӗлхе хевти тапса тӑрать. «Колчак» авторӗн чӑн чӑваш чӗлхи, сӑвӑ ӑсталӑхӗ, сӑмах пуянлӑхӗ, халӑх пурнӑçне тӗплесе пӗлни тӗлӗнтерчӗ мана»,—тет Петӗр Хусанкай «Чӑваш поэтсене» ятлӑ сӑвӑ пирки калана май. Чӑннипе илес-тӗк, халь те шалт тӗлӗнтерет вулакана çак сӑвӑ. Мӗнле ӑсталама мехел çитернӗ ӑна автор? Камран та пулсан тӗслӗх илнӗ-ши вӑл? Мӗн хистенӗ ӑна чун ӗсӗклевне шур хут çине ӳкерме? Тӑхтин юлашки кӗнекине хатӗрленӗ чух хӑшӗ-пӗрисем çак сӑвӑ пирки унталла-кунталла пӑхкаласа илсе, пӑшӑлтатса каласшине астӑватӑп. «Сыхӑраххисем» сӗннипе, сӑвва кӗнекен çум пайне те пулин (хыçала) кӗртнӗччӗ. Паянхи шайпа пӑхсан, çирӗммӗш çулсем варринче çырнӑ япалана тӗрӗс хаклама та, ӑнланма та тивӗç эпир. Авторӗ калашле, «сӑвва ӗлӗк тӳссе курнӑ сыннӑн тарӑхӑвӗ, варне витнӗ ӑшхыппи, тумхахлӑ çул-йӗрӗ темелле». Тепӗр тесен, халӗ çав вӑхӑтри литература çул-йӗрне çип çапнӑ пек тӳрӗ ӳкерсе кӑтартма хӑтланни те истори чӑнлӑхне пӑснине пӗлтерӗччӗ. Йывӑрлӑхӗсем ун чух сахал мар пулнӑ, тӳсейменнисем тӳсеймен те вӗсене. Çакна Тӑхти пултарулӑхӗн кӑткӑс çулӗ те çирӗплетсе парать. Лермонтов пӗр сӑввинче «питне çуман Раççейпе», «чурасемпе господасен» çӗршывӗпе сывпуллашнине асилетӗн сӑвва вуланӑ чух:

Чӑваш поэт пуличчен
Хура çӗлен пулас-мӗн:
Вӗчӗх-кӗвӗç чӑвашсем
Харлаттарса ыйхӑпа
Çварне карса выртнӑ чух,
Вӗсен вӗчӗх çӑварне
Шуса кӗрес майӗпе...

П. Хусанкайăн «Тилли юррисенчи» е Митта Ваçлейĕн сăввисенчи евĕрлĕ шалтан тапса тăракан хăват пур Тăхти йĕркисенче.

Публицистикăлла статьясемпе очерксем Тăхти пултарулăхĕнче пĕртте уйрăммăн тăмаççĕ. Сăвă е проза чĕлхипе калайман сăмахсене писатель вĕресе тăракан темпераментлă статья урлă та вулакан патне çитерме тăрăшнă. Кирек-мĕнле жанрпа çырсан та, Тăхти кивви не йывăр кĕрешӳре çĕнтерсе пырса утăм хыççăн утăм тăвакан социализм ӳсĕмĕсене кăтартса пама васканă. «Шкул, кĕнеке, хаçат», «Тырă-пулă уявĕ», «Учительсем», «Шăнкăл-шăнкăл шыв юхать...», «Атăл та куна халиччен курман» тата ытти статьясенче çакна лайăх курма пулать. Тăхти хаçат-журнала тăтăшах статьясемпе фельетонсем, тĕрлĕрен заметкăсем çырса тăнă.

Тăхти эткерĕнче вырăсларан куçарнă произведенисем те пур: В. Бианкин «Кайăк çурчĕсем» калавĕ, Е. Полонскаян «Часси» кĕнекинчи калавпа сăвăсем т. ыт. те. Вĕсене илемлĕхе тарăн туйса куçарни сисĕнет. Куçаруçăн чĕлхи таса та уçăмлă. Вырăс чĕлхин пуянлăхне поэт Мускаври университетра вĕреннĕ вăхăтра нумай тĕпченĕ. Вулакан писателĕн вырăсла çырнă хăшпĕр произведенийĕсемпе те паллашма пултарать.

Тăхти пултарулăхĕ, унăн пĕтĕм ĕçĕ-хĕлĕ 20—30-мĕш çулсенчи чăваш литературин аталанăвĕпе уйрăлми тачă çыхăннă. Вăл çырнă сăвă-поэмăсемпе калавсем чăваш литературинче социализмла реализм меслечĕн тĕп принципĕсем палăрса, уçăмланса тата çирĕпленсе пынине йĕрлесе пĕтĕмлетме май паракан паха тĕслĕхсем пулса тăраççĕ. Чăвашсен илемлĕ çырулăхĕнчи тĕрлĕрен жанрсемпе формăсен аталанăвне тĕпченĕ чух Тăхти çырнисем сине анлăрах таянни пит усăллă пулĕччĕ.

«Колчак» авторĕпе юнашар тăрса ĕçленĕ чăваш писателĕсем çырнисенчен нумайăшĕ литература историйĕшĕн çеç кирлĕ фактсем пулса юлчĕç ĕнтĕ. Тăхти хайлавĕсене вара эпир паян та киленсех вулатпăр, унпа пĕрлех вĕсем çамрăк çыравçăсемшĕн пултарулăх шкулĕ пулса тăраççĕ. Тăван сăмах ăстин, таса чунлă гражданинăн — Илле Тăхтин çутă ячĕ чăваш чĕлхи хăвачĕн символĕ пек ĕмĕр-ĕмĕрех халăх чĕринче пурăнĕ.

1978, 1986

ЧĔРЕПЕ СУЙЛАНĂ СĂВĂСЕМ

Петĕр Хусанкай куçарнă сăвăсен кĕнеки пичетленсе тухрĕ. (Туслăх ытамĕ. Шупашкар, Чăваш кĕнеке издательстви, 1985). Ăна А. Хусанкай критик пухса хатĕрленĕ. Тӳрех калас пулать, хамăр чăваш культурипе пысăк пĕлтерĕшлĕ, савăнтаракан событи пулчĕ çак кĕнеке кун çути курни.

Петĕр Хусанкай тăлмач ĕçне яланах хисеплĕ те ответлă тенĕ. Хăйĕн пĕр статйинче кун пирки вăл акă мĕн каланă: «...Куçару ытахальтен тумалли çăмăл ĕç мар, чылай çынсемшĕн вăл — пĕтĕм пурнăç шăпи. Мĕншĕн тесен тата вăл — пысăк культура ĕçĕ, патшалăх ĕçĕ, политика ĕçĕ». Чаплă сăвăç куçарнă произведенисем çак сăмахсен чăнлăхне тӳрре кăлараççĕ.

«Туслăх ытамĕ» кĕнекене хамăр çĕршыври тата чикĕ леш енчи халăхсен вуншар поэчĕн сăвви-поэмисем кĕнĕ.

«Пысăк культура» тенĕрен, поэт куçарăвĕсен кĕнекине ăнсăртран кĕрсе кайнă сăвăсем çук. Поэт куçару урлă та калама пултарать-çке-ха хăйĕн шухăшĕсене. Акă, сăмахран, карелофинсен эпосне «Калевалăна» илер. Унăн сыпăкĕсене П. Хусанкай Юман Мĕтрипе пĕрле куçарнă. Ку ĕçе тăлмачсем чăваш эпосĕ (Улăп) çинчен пичетре хĕрсе каласа вăхăталла пикеннĕ пулас. Çав калаçăва С. Элкер, С. Лашман тата ыттисем те хутшăннă, чăваш эпосне çырас ĕмĕтпе хĕмленнĕ. Çак енчен пăхсан, вăл вăхăтра «Калевала» чăваш эпосне йĕркелесе çырмалли тĕслĕх пулма пултарнă ĕнтĕ.

Хусанкай вырăс классикин тĕнче культуринчи тӳпипе пĕлтерĕшне витĕр курса тăнă. А. Пушкин, М. Лермонтов, А. Блок, А. Ахматова тата ытти чаплă поэтсен пултарулăхĕ Хусанкая яланах хавхалану кӳнĕ. Поэзин йăлттам тĕслĕхĕсене куçарнă май Хусанкай хăй пултарулăхĕн хăват-мехелне те тĕрĕсленĕ. Пушкинăн «таса» лирикине вăл авторĕпе ăмăртса тенĕ пек куçарнă, чăваш чĕлхин пиçĕлĕхпе çепĕçлĕхĕ, ун ытарайми кĕвви-çемми ытти чĕлхесенчен кая пулманнине çĕнĕрен çирĕплетсе панă. Акă çав куçарусен тĕслĕхĕсем: «Чаадаева», «А. П. Керн патне», «Сăрт-туллă Грузире каçхи тĕтре выртать...», «Арион», «Тăван çĕре ытараймасăр...»

А. Пушкин хыççăн М. Лермонтов сăввисен таса кĕмĕл сасси пек кĕввипе киленетпĕр. Ку кĕнекере — икĕ ăмăрт çунатлă поэт, расна поэзи тĕнчи, стиль туртăмĕсемпе тĕсĕсем... Анчах та хăшĕ вĕсенчен Хусанкая

çывăхрах? Пушкин сăввисенче гармониллĕ тĕнче туйăмĕ, киленĕçлĕ çутă вылявĕ, ырра шанса, ун патне туртăнни тытăнлаççĕ. Лермонтов сăввисене вара чĕрене касакан тунсăх витернĕ, кăнтăрлахи хĕвел çути мар, чĕркĕмĕл сапакан уйăх çутиллĕ каç хуçаланать тейĕн кунта; поэт пурте йышăннă чăнлăха чун витĕр кăларса тепĕр хут тĕрĕслет, иккĕленет е пăрахăçлать. Уйрăмах туслăхпа юрату лирикин йĕркисенче сисĕнеççĕ çав хĕрӳ кăмăл-туйăм палăрăмĕсем. Этемĕн чи сăваплă тивĕçĕ— Гражданин пуласси, тăван халăхăн кунçулĕпе пĕрлешесси, ун ирĕкĕшĕн кĕрешесси.

Хусанкай оригинал кĕввипе ритмне тĕп-тĕрĕс, вырăслинчен пĕртте чакармасăр куçарма мехел çитернĕ. Чăваш поэчĕн творчествăлла тавракурăмĕ анлă, уншăн Пушкин поэзийĕн илем тĕнчи те, Лермонтовăн кăткăс стилĕ те пĕр пекех çывăх.

А. Блокăн «Вуниккĕн» поэмине куçарнă май, Хусанкай хăй пултарулăхĕн эпикăлла сулăмне туллин палăртнă. Кунта В. Маяковский шкулĕ çеç мар, пĕтĕм тĕнче поэзийĕн опытне ăша хывни те сисĕнсе тăрать. Калама çук пысăк поэзи культурине чăваш чĕлхипе, чăваш сăввин тытăмĕпе пĕр кĕвве килтерет вăл, кивĕ тĕнчене тĕпрен кисрентернĕ революци тăвăлне, ун чĕрĕ сывлăшне туйтарать вулакана.

Эпика пирки калас пулсан, Грузи поэчĕн Шота Руставелин «Тигр тирĕ тăхăннăскер» поэмин сыпăкĕсене куçарнинче лайăх палăрать поэт хевти.

Хусанкая чăннипех те хамăр чăваш культурин элчи темелле. Тăван çĕршывăн кашни кĕтесĕнчех унăн çывăх тусĕсем пулнă, вăл вĕсемпе çыру çӳретнĕ, çитсе курнă, çырнисене куçарнă. Çавăнпа та ĕнтĕ кĕнекери куçарусен географийĕ тĕлĕнмелле анлă. Çак пĕр пысăк ушкăн çăлтăр картинче украинпа белорус, Кавказпа Балтика тăрăхĕнчи халăхсен поэчĕсен сăввисем хăйне май илемлĕ тĕспе çиçеççĕ. Хусанкай али витĕр пулса çитнĕ поэзи тĕслĕхĕсем çеç сăрхăнса тухнă темелле — шутсăр тиркевлĕ куçпа суйланă вĕсене Европа культури шайĕнчи поэт. Çеçпĕлĕнни пек интернационализмла тарăн шухăштуйăмпа вуншар поэта пĕр-пĕринпе çывăхлатнă вăл.

Поэзи — халăх чунне упракан сӳнми вучах. Паллах, тăван чĕлхене çĕршер çул хушши шăрантарса пиçĕхтерекен, туптакан ăстасем те чăн малтанах поэтсем. Ăнсăртран мар пулĕ тăван сăмах, тăван чĕлхе теми кĕнекере пĕр пысăк темăсенчен пĕри пулса тăрать. Украина поэчĕ Павло Тычина калашле, «чĕлхе вăл — ĕç,

паллă ятсем: Виктор Гюго, Адам Мицкевич, Юлиан Тувим, Иржи Волькер, Назым Хикмет, Николас Гильен тата ыттисем те.

«Туслăх ытамĕнчи» тепĕр хитре ярăма авалхи тустăванăмăрсен — пăлхар поэчĕсен — сăввисем кĕнĕ. Поэтсенчен чылайăшĕпе Хусанкай туслă пулнă, пĕрре çеç мар хамăрпа (чăвашсемпе) пĕр тымартан тухнă пăлхарсем патне кайса çӳренĕ. Пăлхар чĕлхине те çине тăрсах вĕреннĕ. Çавна пула ĕнтĕ вăл Христо Ботев, Пейо Яворов, Димитр Осинин, Элизавета Багряна, Ламар, Ангел Тодоров, Младен Исаев, Никола Вапцаров сăввисене тӳрех чăвашла куçарма пултарнă. Димитр Осининăн «Кĕреке сăмахĕ», Ламарăн «Атăл», Младен Исаевăн «Асаттесем» сăввисене вулатăн та çак поэтсем тăванлăх туртăмне пысăка хурса хакланине, çав туйăм мăн асаттесен юнĕнче пулнине тепĕр хут ăнланса илетĕн. Акă епле ăшшăн пуç таять Ламар авалхи пăлхарсен чĕлхипе культурине упраса хăварма пултарнă чăваш çĕрне-шывне, халăхне:

Пăлхар аслашшĕсем çак Атăл урлă
Каçса сиктернĕ йышлă урхамах,
Хула туса хăварнă,—тет юмах,—
Пăлхар хули, ун ячĕ Болград пулнă.
Ун пек хула кунта та пулнă, теççĕ,
Вăл тĕлĕкри пек тĕрленет асра.
Чăваш юрри ун тӳсĕмне усрать.
Пинçуллăх кĕввисем халь илтĕнеççĕ...
Легенда пĕлтерет: чăваш—
пăлхар вăл,
Эпир пĕр халăх пулнă ĕлĕкрен;
Хаваслăх, хурлăх, юрă — пĕр тĕпрен.
Салам сана, Тăван çĕршывăм — Атăл!

(«*Атăл*».)

Куçару ăсталăхĕ, пысăк культурăллă поэт алли «Туслăх ытамне» кĕнĕ кашни сăвăрах сисĕнсе тăрать. Кĕнекене вуласа тухсан, кулленхи куçару практикипе çыхăннă çивĕч ыйтусем тавра шухăша каятăн. Илемлĕ литература журналĕсем, «Тăван Атăлпа» «Ялав», тăтăшах куçарса пичетлеççĕ ытти халăхсен поэчĕсене. Чылай чухне пĕр-пĕр юбилей е культура кунĕсемпе тĕл килет çак ĕç. Анчах та темшĕн-çке çав куçарусем, подшивкăра упранмалли черетлĕ материал пек, йĕрсĕр çухалаççĕ, хамăр çырулăх аталанăвне витĕм параймаççĕ. Хусанкай тăван культура шайне, халăх кăмăл-туйăмне шута илсе, вăл ыйтнине чĕрипе ăнланса, суйласа куçар-

нă тăванла литературăсен тĕслĕхĕсене. Халь пăхатăн та, поэт куçарнисем чăваш культурин ылтăн çӳпçине кĕме тивĕçлĕ. Вĕсем чăваш чĕлхи хевтипе, ун хавалĕпе çуралнă тейĕн малтанах. Хальхи хаçат-журналта куçарса пичетлекен кашни произведени пиркиех çапла калама май килсен, епле аван пулĕччĕ! Шел пулин те, çапла калама пултараймастпăр-ха эпир халлĕхе. Ку ĕçе çиелтен, васкаса тунине, куçармалли материала тимлĕн суйламаннине час-часах асăрхатпăр-ха эпир. Çавна май Хусанкай сăмахĕсем каллех аса килеççĕ: «Куçару ĕçĕ — пысăк культура ĕçĕ, патшалăх ĕçĕ, политика ĕçĕ». Çакна манни пысăк йăнăш тунине пĕлтерет.

Паянхи кунпа, çак самантпа, вăхăтлăха пыракан виçепе кăна мар, хăй пултаракан кашни япалана ĕмĕрлĕх шайĕпе хаклама тăрăшнă Хусанкай. Унăн канăçăр чун-чĕри малашлăха ăнтăлнă, çав малашлăхра иртнĕ тапхăрсен пĕлтерĕшне туйса тăнă. Тутар сăвăçин Хасан Туфанăн ак çак йĕркисем чăваш поэтне уйрăмах çывăх пулнăн туйăнать мана:

Ĕмĕрлĕхĕн ак çак тĕлĕнче
Расна тĕспе çиçет кашни ир,
Вăл хăварать çутă ылтăн йĕр
Çĕршывăмăр çулĕ çийĕнче,
Ĕмĕрлĕхĕн ак çак тĕлĕнче.

Хусанкай пек поэтсем хальхипе пуласлăх хушшинчи кĕпере хываççĕ. Пысăк поэтсен шăпи çавнашкал.

1985

ТĂВАН ХАЛĂХА ЮРАТСА

(Хветĕр Уяр 70 çул тултарнă май)

Чăвашсен хальхи вăхăтри паллă писателĕн Хветĕр Уярăн сасси тăван литературăра вăтăрмĕш çулсен пуçламăшĕнче илтĕнме тытăнать. Аслă çул пуçламăшне писатель хăй акă епле аса илет: «Капкăн» журналта иквиçĕ калав пекки пичетлесе кăларнă хыççăн, 1931 çулхи çулла, эпĕ «писателе кĕме» Шупашкара килтĕм. Писателе кĕресси те, тухасси те пулмарĕ манăн, унта кĕме хăтланса та пĕр утăм тумарăм, Шупашкарти Садвинтрест совхозне ут пăхма кĕтĕм».

Тин çеç çырма пикенекен авторăн пирвайхи калавĕ-

семпе фельетонĕсем паллă сатирик Иван Мучи кăларса тăнă «Капкăн» журналта кун çути курăççĕ. Çакăн умĕн кăшт çеç маларах вăл Самар хулинчи икĕ сыпăклă текен чăваш шкулĕнче вĕренет-ха. Çураласса вара пулас писатель 1914 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче халĕ Куйбышев облаçне кĕрекен Исаклă районĕнчи Сухари-Матак ялĕнче хресчен килйышĕнче çуралнă. Унăн авалхи несĕлĕсем кунтан, Чăваш çĕршывĕнчен куçса кайнă пулнă.

Çапла вара вăтăрмĕш çулсен пуçламăшĕнче Хветĕр Уяр тĕп чăваш çĕрне таврăнать. Хăй калашле, «писателе тухиччен» нумай тар юхтарма тивет ун кунта, тĕрлĕ ĕçре ĕçлет вăл: кăмака та купалать, ут кĕтĕвĕ те кĕтет. Қанăççăр чунлă çамрăка çул йыхравĕ илĕртет, часах вăл Инçет Хĕвелтухăçне тухса каять. 1933 çулта Хабаровскри педагогика техникумĕнче вĕренме пуçлать, каярахпа Благовещенскри педагогика институтне вĕренме кĕрет. Хăйшĕн пачах çĕнĕ тĕнче уçать яш каччă Инçет Хĕвелтухăçĕнче. Хăнăхиччен йăлтах урăхла кунта: çутçанталăкĕ те, çыннисем те, чĕрчунĕсем те. Анчах та пĕр хăнăхсан, пурте чуна çывăх иккен, илĕртӳллĕ, асамлă. Малтанхи вăхăтра «тĕнче хĕрри» пек туйăнакан çĕршывпа ĕмĕрлĕхех туслашать писатель. Çак çĕрсене халалласа темиçе кĕнеке те çырать каярахпа. Кунтах чăвашран тухнă чаплă художникпе паллашса туслашать.

1936 çулта Чăвашъене каялла куçса килсен, Хветĕр Уяр Шупашкарти педагогика институтне вĕренме кĕрет, вăтам шкулта ĕçлет, каярахпа вăл — Чăваш радиокомитет сотрудникĕ. Çакăнта ĕçленĕ вăхăтра Уяр «Колчак» поэма авторĕпе Илле Тăхтипе паллашать. Кун çинчен писатель каярахпа «Тăхтипе паллашни» очеркĕнче асра юлмалла çырса кăтартать. Хисепе хурса, ун чăннипех те пысăк талантне картса аса илет Уяр пултарулăх ĕçĕнчи аслă юлташне. Çамрăк çын чĕринче Тăхти тарăн та пархатарлă йĕр хăварнă. Уяр Тăхтирен çыру ăсталăхне нумай вĕреннĕ. Ăсталăха Тăхтирен вĕренни Уяр çырнисенче лайăх палăрать.

1941 çулта Хветĕр Уяр çырнă калавсен пуçламăш пуххи пичетленет. Çав çулах вăл вăрçа тухса каять. Тăван çĕршыва хӳтĕленĕшĕн вăл III-мĕш степеньлĕ Мухтав орденне тата медальсене тивĕçлĕ пулать.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче Хветĕр Уяр пысăк калăплă произведенисем çырма тытăнать. Пĕрремĕш романĕн малтанхи варианчĕ «Шурча таврашĕнче» ятпа уй-

рăм кĕнекен 1952 çулта пичетленет. Каярахпа ăна автор, çĕнетсе, «Таната» ятпа кăларчĕ. Халĕ Уяр — нумай кĕнеке авторĕ ĕнтĕ. Çавах та писатель таланчĕн пĕтĕм сулмакĕпе хăватне «Таната» роман лайăхрах кăтартса пачĕ. Кĕнекери тĕп ĕç-пулăмсем иртнĕ ĕмĕр варринче чăваш тăрăхĕнче пулса иртнĕ Шурча вăрçипе çыхăннă. Тĕттĕм, хавшаса çитнĕ чăваш ялĕ, ĕмĕрсем тăршшĕпех пусмăрта асапланнăскер, ерипен куçне уçма пикенет. Вуншар çул хушши капланнă чăваш хресченĕн çилли. Чухăнăн çичĕ тирне сӳнĕ Яка Иллесемпе Салакайăк пупсем, Шахрун йышши тара кĕрĕшсе пуç касакансемпе Ивуксем — унăн ĕмĕрхи тăшманĕсем. Социалла хирĕçӳсем хĕрсе пынине, класс кĕрешĕвĕ амаланса, хĕçпăшаллă çапăçăва куçса кайнине автор чăнлăха пăсмасăр ӳкерсе кăтартнă. Чăваш халăхĕ нихçан та чухăн пулман иккен патвар та хăюллă, Улăп пек яш-кĕрĕм тĕлĕшĕнчен. Салтакра чĕрĕк ĕмĕрне ирттернĕ Григорьев, чухăнсен шанчăкĕпе тĕрекĕ, кĕрнеклĕ те сăпай каччă Ухтиван, Касьян тимĕрçĕ хăйсен класс тăшманĕсене витĕр кураççĕ ĕнтĕ, кĕрешӳре çул кăтартса пыраççĕ. Хивре явнă автор роман сюжетне, сăнарĕсем вара ĕненмелле, чĕрĕ те кĕрнеклĕ.

«Таната» романа хамăр хутлăхра çеç мар, вырăссен паллă писателĕсем те, Мускав литературовечĕсем те тӳрех асăрхарĕç, пахаларĕç. Вĕсен йышĕнче — Георгий Ломидзе, Евгений Федоров, Валентин Оскоцкий т. ыт. те. Паллă прозаик Николай Евдокимов каланă тăрăх, роман пирĕн вăхăтри совет литературин чи паха тĕслĕхĕсемпе юнашар тăрать. «Роман геройĕсем хăйсене чăн чăвашла тыткаланине, чăвашла тĕнчетуйăмлă пулнине эпир тӳрех туйса илетпĕр»,—тет вăлах. Вырăс писательне Уярăн психологизмла ăсталăхĕпе тарăнлăхĕ тĕлĕнтернĕ. Кунашкал сумлă хака пирĕн прозаиксен кĕнекисем час-часах тивĕçеймеççĕ-ха.

Автор чылай çул хушши ĕнтĕ романăн иккĕмĕш кĕнекипе ĕçлерĕ. Чăвашла вулакансем унăн уйрăм сыпăкĕсемпе паллашрĕç ĕнтĕ. Прозаик çак пысăк ĕçе ăнăçлă вĕçлессе шанас килет.

50—60-мĕш çулсенче Хветĕр Уяр сахал мар повесть тата калавпа очерк çырчĕ. Ялпа хула пурнăçĕ, творчество интеллигенцийĕн ĕçĕ-хĕлĕ е çамрăксене воспитани парас ыйтусем шухăшлаттараççĕ писателе. Кашни çĕнĕ хайлавĕнчех вăл çак çивĕч ыйтусене хăй пултарнă пек, çĕнĕлле çĕклеме тăрăшать. Яланах ăна пурнăçăн шалти, çиелтен курăнса тăман енĕсене кăтартса

парасси илĕртет. Этем чун-кăмăлĕн тĕнчине кĕме шутсăр йывăр. «Шахтер пек тăрмашать вăл, кирлĕ мар сăмахсене, суя эрешсене аяккалла ывăтать... Пĕтĕм вăя хурса чакалансан çеç таҫан пĕрре ылтăн пĕрчисем тухакан сие чавса çитетĕн». Çапла калать Уярăн пĕр геройĕ писателĕн йывăр та тертлĕ ĕçне палăртса. Танлаштарăвĕ вара чăнахах та витĕмлĕ, сăнарлă. Сăмах май каласан, писатель ĕç-хĕлĕ патне чылай хайлавĕнче Уяр çĕнĕрен те çĕнĕрен тавраҫнать. Писатель сăнарĕ уйрăмах ун повеҫĕсенче час-час тĕл пулать. Акă, сăмахран, «Пиччĕшĕпе шăллĕ» повеҫе илер. Ун тĕп геройĕ Александр Яковлевич, темиҫе кĕнеке авторĕ, кăштах ял сывлăшĕпе сывласа кăмăл-туйăмĕсене çĕнетем тесе, тăван ене тавраҫнать. Тăван пиччĕшĕпе инкĕшĕ патĕнче хăнара темиҫе талăк пурăнать вăл. Тӳрех калас пулать, автор паянхи ялăн социалла пурнăҫне, культурăлла сăн-сăпатне пĕтĕм анлăшпех илсе сăнлас çулпа каймасть. Уйрăм çынсен психологине, вĕсен шухăшĕ-туйăмне тарăнрах уҫса парас тĕллев лартнă пулас вăл хăй умне. Çакнашкал сăнав валли килти пурнăç, йăлайĕрке кулленлĕхĕ уйрăмах меллĕ. Акă Александр Яковлевичăн пиччĕшне Уҫăпах илер. Мĕн кĕҫĕнрен пĕрле выляса, йывăр кунсене çума-çумăн тӳссе ирттернĕ пулин те, шăллĕ пиччĕшне тĕпĕ-йĕрĕпе ăнланса çитеймен-ха. Чун-кăмăлĕ темле хупăнчăк та чăлханчăкрах унăн. Яш чухне турра ĕненнĕ Уҫăп. Пĕрлешӳллĕ хуçалăха чи кайран çырăннă. Авланма та ыттисем пек мар, çынна култарсарах авланнă. Халь акă «колхозра ĕçлеме чирлĕ вăл, хăйшĕн çывăрмасăр ĕçлеме те хатĕр».

Уяр стилĕн тахçанах палăрнă вăйлă енĕсенчен пĕри вăл — этемĕн шалти, чун тĕпĕнчи туйăм хусканăвĕсене витĕмлĕ пайрăмсемпе (детальсемпе) яр-уççăн палăртас туртăм. Пĕр-икĕ йĕр сăнара чĕртсе тăратать е пурнăçри пулăмсене витĕртерех курма май парать. Акă темиҫе тĕслĕх.

«Уҫăп кушака нихçан та апат памасть-мĕн. Ун шухăшĕпе, кушак та, йытă та хăйсене хăйсем тăрантарма пĕлмелле».

«Вăхăт-вăхăт çеç куçĕ патĕнчи пĕчĕк тымар чăлтчăлт сиксе илет» (Нина портретĕнчен).

«Лав умĕнчен туй çĕленĕ сĕтĕрнĕ хура кушак каҫса кайрĕ» т. ыт. те. Уяр пултарулăхĕн çак енне асăннă чухне унăн сырас ăсталăхĕнче Л. Толстой, А. Чехов, И. Бунин витĕмĕ пуррине палăртса хăвармалла.

Тĕлĕнет Александр Яковлевич пиччĕшĕнчен: мĕнлеха вăл паян кунччене харпăрлăх психологийĕн каяшĕсенчен хăтăлаймасть? Кашни самантрах пурлăх пухма тăрăшать Уçăп. Пĕр аллă тĕп кĕреш юман касса, киле турттарса хурсан пăсмĕччĕ тесе хурать вăл шăллĕпе сăмахланă хушăра. Вара мĕн тăвăттăн вĕсемпе тесе ыйтсан, çăкăр ыйтмаççĕ вĕт тет. Умри пахчине те çур урама яхăн ярса илсе тытать.

«А, тен, пурнăç инстинкчĕ çавнашкал?—тесе шухăшласа пырать Александр.—Çын юлашки сывлăшĕ тухичченех малаллине ĕмĕтленет. Чирли эп вилмелле тесе, ватти пурăнса çитрĕ тесе ĕçлеме пăрахсан е ĕçке ярăнсан, мĕн пулса тухĕ? Пурнăç чарăнса ларĕ». Çакăн йышши шалти монологсемпе çын чун-чĕрине, ăшри туйăмĕсене тарăннăн уçса парать автор. Пĕр-пĕр персонажăн илемлех мар енĕсене кăтартнă чух та ытарлăнрах е систерсе калама тăрăшать вăл. Примитив мелĕсенчен, ытлашши тӳртĕн е ярлăк çакса этеме хак парассинчен асăрханать чăн-чăн ăста.

Уçăпа илсен, унăн çав пурнăç инстинкчĕ текенни вак-тĕвек чеелĕхпе суя-ултавра курăнать. Шупашкара таврăнсан, Александр Яковлевич харăсах темиçе çыру илет. Колхоз председателĕ Басовпа вăрман хуралçи çырăвĕсене вуласан, вăл пиччĕшĕ ун ячĕпе, писатель ячĕпе хӳтĕленсе, илемсĕр ĕçсем тума та вăтанса тăманнине пĕлет. Çак тепĕр хут тарăн шухăша ярать ăна, пăшăрхантарать те.

«Виçĕ кун, виçĕ каç» повеçре те темле пысăк ĕç-пулăмсемех курмастпăр эпир. Кунта пĕтĕмпех Роман Петров писатель асилĕвĕсем, каласа панисем, курнилтнисем. Калавçă вăтăр çул ĕлĕкрех хăйпе пĕрле институтра вĕреннĕ Якур патне çитсе курма шухăш тытать. Лешĕ хăй йыхравлать-ха ăна. Мĕн тери хитре пулнă иккен вăл, Якур, тахçан яш чух! Талант тенĕ ун пирки пурте. Художник пулма ĕмĕтленнĕ çамрăк. Тантăшĕсем ăна ăмсаннă, хĕрсем, Якур куç хĕссен, ун хыççăн таçта кайма та хатĕр пулнă. Анчах та кĕтмен çĕртен ун чухне Якур, пурне те тĕлĕнтерсе пăрахса, çуллаппă хĕрарăма, Катерина Ивановнăна, качча илнĕ. Тĕрĕссипе, ун патне киле кĕнĕ. Апла пулсан, темиçе пӳлĕмлĕ хваттер те, ĕçлемелли условисем те çителĕклех пулнă унăн. Мĕнле-ши, çак вăхăт хушшинче пысăк художник пулайнă-ши вăл? Çак шухăшсемпе персе çитет Петров яшлăхри пĕлĕшĕ патне. Çук, пĕрре те шутламанччĕ вăл хăйĕн юлташне капла курăп тесе. Юхăн-

нă-мĕн Якур, мĕскĕнленнĕ, хавшанă. Вăтăр çула яхăн пурăннă вăл çума-çумăн çак мещенленсе кайнă, ултавлă та сăхă чунлă хĕрарăмпа! Акă мĕне пула пĕтернĕ вăл талантне, лешĕ ĕмсе илнĕ ăна пĕтĕмпех, эрешмен пек. Творчество валли чун ирĕклĕхĕпе çути кирлĕ. Çакă Якурăн юлман, сӳннĕ. Анчах та тинех кама айăплăн? Чуна сутма, совеçе çывратма юрамасть иккен. Пурнăçра йĕри-тавра ултав сереписем, асăрханаймарăн-тăк — самантрах çакланан. Акă епле уçăмлă каланă кун пирки Петровăн шалти монологĕнче: «Хăвна ирĕк парсан, кахалу сана çут тĕнче илемĕсемпе астарма тытăнать. Мĕн кăна çук пулĕ çынна илĕртмелли! Хитре хĕрсем, ĕçкĕ-çикĕ, пуш сăмах çаптарса ларни... Хăвна ху алла илеймерĕн иккен, ĕçлеме хистеймерĕн— куллен-кунах кăмăлу сивĕнсе пырать, ĕçлес хевтӳ пĕтет. Ун пек чухне çын тĕрлĕ сăлтавсем шыраса ларать— хваттер пĕчĕккĕ-мĕн, çемье пысăк... Чунĕ пĕчĕкки çинчен çеç вăл никама та шарламасть. Художник сӳнет çапла». Шăпах çавнашкал пулса тухман-и вара Якурпа та. Автор художникăн, искусство çыннин, халăх уменчи сăваплă та пысăк тивĕçĕ пирки вырăнлă сăмах хускатнă.

Писатель сăнарĕ «Кĕрхи çумăр» повеçре те тĕпре. Анчах та автор унччен каланă сăмаха тепĕр хут каласран асăрханни, çĕнĕ çулпа утма тăрăшни лайăх курăнать кунта. Пирĕн прозăра çыракан çыннăн сăнарне çакăн евĕрлĕ сăнлани пулманччĕ-ха. Сахал курнă-и эпир ятлă-сумлă, яланах малта пыракан, пурнăçри йывăрлăхсене туххăмрах çĕнтерсе тухакан писательсен сăнарĕсене. «Кĕрхи çумăр» повесть геройĕ Эрне Хĕлипĕ чылай енчен çак калăпа ларман, урăхларах этем. Чăн малтан ун сăнарĕнче хирĕçӳллĕ енсем нумайăи тӳрех куçа тирĕнет. Ĕç каймасăр чăлханса ларнă самантсенче вăл таврари çынсемпе те, килти çывăх мăшăрĕпе те, хăйпе хăй те пĕр чĕлхе тупаймасть иккен, çĕтĕлме пикенет, вырăн тупаймасăр хăшкăлать. Çапла чылайччен асапланать этем сăмах тĕшши шыраса, чун-кăмăл чăлханчăкĕпе кĕрешсе. Уяр ытти писательсенчен малтан илсе кĕрсе кăтартрĕ пире çыракан çыннăн лабораторине, унăн «хура ĕçне» те пытармарĕ. Уйрăмах пултарулăх ĕçĕнче пӳлĕнсе ларнă самантсенче йывăр туять Хĕлип хăйне. Çавнашкал «пӳлĕнсе ларнă» тапхăрта вăл Атăл леш енне, кану çуртне каять. Акă Хĕлип хăйĕн вулаканĕсемпе пĕрле пĕр вăхăт канма тытăнать. Паллаççĕ иккен ăна кунта чылайăшĕ. Ав пĕр хĕрарăм

ăна сăнаса, паллакан çынна курнă пек пăхса иртет. Чĕрĕ писатель-тет-ши? Тен, çынсем хушшинче ăнсăртран килсе лекнĕ турă вырăнне хурать? Мĕнпур япалана витĕр курса, пурне те пĕлсе, çынсене ăçта килчĕ унта тăн парса çӳрекен этем вырăнне картмасть-ши писателе? Тен, ытти çынсенче пур вăйсăр енсене, кăлтăксемпе çитменлĕхсене тупасшăн? Вара калĕччĕ: эс те пирĕн пек çынах, ытлашши пуçна ан каçăрт. Çук иккен, ку писательре хăйне пысăка хума тăрăшни, хăйне мăнаçланса тыткалани пачах та çук. Хрестоматилле сăнар картне лармасть темшĕн ку писатель сăн-сăпачĕ, хăйне хăй тыткалани. Пĕр сăмахпа каласан, пур енчен пăхсан та ахаль çынах Хĕлип. Унăн «сивĕ кăмăлĕ хӳтĕленмелли маска иккенне Рина килнĕ кунах сисрĕ-ха. Хуппи кăна вăл. Аялта (шалта) çав вĕри юнах юхать пулмалла. Хăй сисмен хушăра сăнакаларĕ те ăна Рина — аптрамалла унпа. Иккĕленсе утать, сăнĕ мĕскĕн». Апла пулсан, вăл та пирĕн пек çынах, шутлать хĕр.

Эрне Хĕлипĕ икĕ туртăм хушшинче асапланать. Пĕр енчен, пĕччен, çынсенчен уйрăм, хăйпе хăй çеç куçакуçăн юлас туртăм ку. Çав вăхăтрах çынсем те илĕртеççĕ ăна, пурнăç таппи унта-çке-ха. Вăрманти пушара сӳнтернĕ самантра, кĕтмен çĕртен, хăй çынсемпе уйрăлми пĕрле пулнине çĕнĕрен туйса илет Хĕлип. «Йышпа пĕрле вилме те çăмăлрах». Мĕн тери хитре чунлă вĕсем — инкекпе кĕрешме кар тăнă çынсем! Харпăр хăйшĕн ăшталанса мар, çутçанталăк илемне, ун пуянлăхне çăлассишĕн тухнă вĕсем пĕр ĕмĕт-тĕллевпе. Пирĕн прозăри хăшпĕр произведенисенче чылай чухне пушарсăр ниепле те сюжет йĕрĕ малалла тăсăлмастчĕ. Çак тахçанах кивелнĕ, хытса ларнă схемăран хăпайман авторсем сисмесĕрех хăйсене хăйсем пародилесси патне çитсе тухни те, ытти кулăшла самантсем те сахал мар пулнăччĕ пирĕн прозăра. Пушарĕ хăй вара персонажа «паттăра» кăлармалли меслет, унăн хастарлăхне пит ансаттăн, яр тӳреммĕн кăтартма май паратчĕ. Уяр геройĕ вара çакнашкал хăрушла лару-тăрура çынсемпе пĕрлешсе, пĕр-пĕр ирĕлекен япала пек, куçа «курăнми пулать» тейĕн. Нимле чап та, хăй тавра шăвшав кăларни те кирлĕ мар иккен ăна: пушар сӳнтерес ĕçе йĕркелесе, хастар ертсе пынăшăн ăна вăрман хуçалăхĕ укçа пама йышăнать. Укçине илмест сăпай çын, ытти сенчен нимпе те уйрăммăн палăрман вăл, хăй шухăшĕпе. Тепринчĕн çакнашкал лару-тăрура шăв-шав

кăларса тусан вĕçтермешкĕн мĕн чухлĕ май тупăннă пулĕччĕ!

Уяр хăйĕн геройне юратура та тĕрĕслесе пăхать. Ашкăнчăк е çăмăлттай туйăмсен сукмакĕпе çӳреме кăмăллакан этем мар Хĕлип. Ринăна саваканскер, вăл, канăçа çухатса, çывăрайми пулать. Хĕрӳ туйăмсен вутĕнче çунакан Хĕлип, ниме те пăхмасăрах, Рина хыççăн Атăл урлă каялла каçать — мĕнле пулсан та унпа тĕл пулмаллах ун. Унтан пĕр тăхтамасăр Ишлее вĕçтерет, Ринăсен килне. Анчах та тепре тĕл пулма пӳрмен иккен Хĕлиппе Ринăна.

Акă ĕнтĕ тинех юратупа пĕрле Хĕлип патне хавхалану та таврăнчĕ, çырас кăмăлĕ хĕрсе çитрĕ ун. «Чунĕ тулли ун. Пĕве татса кайнă». Анчах та кану çуртне каялла, ĕç сĕтелĕ хушшине талпăнакан Хĕлип ăнсăртран шыва кайса вилет. Çакнашкал вилĕм повеçре характер логикипе çыхăннă теме йывăр. Автор этем шăпин пĕтĕм кăткăслăхне кăтартас тĕллевпе çапла вĕçленĕ ĕнтĕ хайлавне. Анчах та манăн, вулаканăн, кунпа килĕшес килмест.

Çитмĕлмĕш çулсен пуçламăшĕнче Уяр хăйĕн чи лайăх повеçĕсенчен пĕрне «Ăçта эс, тинĕс?» ятлине пичетлерĕ. Унта кăтартнă ĕç-пуçсем тайгара пулса иртеççĕ. Икĕ ача — пĕри чăваш, тепри эвенк, Амикан, тайгана ним хăрамасăр çулçӳреве тухаççĕ. Тен, шăпах çакă вăл «хастаррисен ăссăрлăхĕ» (Горький калашле)? Ан тив, пултăр, анчах та илĕртӳллипе хавхалантараканни те, шанчăк кӳрсе кĕрешĕве йыхăраканни те тем чухлех çакнашкал утăмра. Темтепĕр тӳссе ирттерметивет ачасен, темле кĕтмен инкекпе те куçа-куçăн тăраççĕ вĕсем, анчах парăнмаççĕ. Пурнăçа юратни, тĕнче çине тăп-тăрă куçпа, шанчăкпа пăхни тĕрек парать вĕсене, çавах вилĕмрен те çăлать. Яланхи пекех, автор критика асăрхаттарнисене шута илсе, повеçе юсарĕ. Ун хыççăн «Дружба народов» журналта вырăсла та пичетленнĕччĕ вăл.

Хăйĕн юлашки çулсенче çырнă хайлавĕсенче Уяр психологизмла çĕнĕлĕхсем шырани, ăсталăхне туптани уççăнах курăнчĕ. Пысăк темăсем, ялхуçалăх е производство аталанăвĕнчи ак халь татса памалли кăткăс ыйтусем курăнсах каймаççĕ пек писатель çырнисенче. Вăл этем чун-чĕрин таппине тăнлать, ырăпа усалăн шалти кĕрешĕвне сăнлама тăрăшать, философилле ыйтусем тавра ытларах шухăшлать. Çавăнпа Уяр хайлавĕсенчен чылайăшĕ актуаллă тема шыракан критиксен

куçĕ тĕлне пулмасăрах юлчĕç пулмалла хăй вăхăтĕнче. Сăмах май Юрий Скворцов пултарулăхĕ пирки те çаплах калама тивет.

Уяра тивĕçлипех калав ăсти, теççĕ. Тарăн шухăшлă калавсенче автор сăнарсен психологине шалтан уçса кăтартать. Сăмаха ытлашши вакламасăр, кĕскен калать. «Çыру», «Пĕр сăмах», «Мăйăр хуппи» тата ыттисене те асăнма пулать. Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă текен шухăш пуçа пырса кĕрет вĕсене вуланă хыççăн.

Е тата писатель çырнă очерксене илер. Вĕсенче те хăйне евĕрлĕ илем тĕнчи тыткăнлать вулакана. Ыттисем асăрхаманнине, тӳрех куçа курăнманнине кăтартма тăрăшать очеркист. Очерксен чĕлхи илемлĕ те сăнарлă. Аçта-ăçта кăна çитсе курман-ши Хветĕр Уяр. Юлашки çулсенче çеç-ха акă Индире, Шри-Ланкара, Венгрире пулса таврăнчĕ. Кашнинчех хитре очерксем парнелерĕ вулакансене. Акă хăшпĕр кĕнекесен ячĕсем: «Яланах çул çинче», «Çулсем-йĕрсем», «Тăван çĕршыв тăрăх», «Чăваш ялĕсем тăрăх», «Çĕпĕрти чăвашсем», «Шушăра, Саян тăвĕсем патĕнче», «Çул кĕнеки» т. ыт. те.

Пысăк писатель яланах чăн-чăн интернационалист. Хăйĕн тăван халăхне хисепе хуман, ун хуйхи-суйхине туйман çын ытти халăхсене те сума сумасть. Хветĕр Уяр çырнисенче, украин поэчĕ Павло Тычина сăмахĕсемпе каласан, «пĕрлĕхлĕ йыш туйăмĕ» туллин тапса тăрать. Максим Горький, Александр Фадеев, Демьян Бедный, Гарин-Михайловский тата ытти вырăс писателĕсем пирки вăл хитре очерксем сахал мар çырчĕ. Асăннă çыравçăсенчен хăшпĕрисем патша саманинчех пусмăрти чăвашсен хутне кĕрсе пичетре çырнă, патша тарçисен элеклĕ сăмах-юмахне тăрă шыв çине кăларнă. Тăван халăхăмăр ячĕпе тав тăвать вĕсене халь чăваш писателĕ çав пархатарлă ĕçшĕн.

«Шушăра, Саян тăвĕсем патĕнче» очеркне писатель Владимир Ильич Ленин ссылкăра пурăннă вырăна çитсе курсан, аслă çулпуçăмăр утса çӳренĕ сукмаксене йĕрлесен, унти сывлăшпа сывланă хыççăн хавхаланса çырнă. «Пĕр кĕнеке çырассишĕн кăна миçе пин километр тумарăм пуль эп»,—тет писатель «Çул йыхравĕ» очеркĕнче. Çав асамлă çул йыхравĕ памасть те ĕнтĕ ăна мăкланса, пĕр вырăнта хытса ларма.

Яланхи пекех çанă тавăрса, хавхаланса ĕçлет паян та Уяр писатель, кунсем иртнине пăхмасăр. Çĕнĕ калавсемпе очерксем хайлать. Ĕçлеме вăл чăн та васка-

масăр ĕçлет, чун хĕрмесĕр (гонораршăн çеç) пĕр йĕрке те çырмасть. Ĕçне яланах тиркевлĕ хаклать, хăйĕнчен хăй çав тери нумай ыйтать. Ĕçтешĕсенчен те — çаплах.

Уяр творчество ĕçĕ пирки çырнисене те вулама кăмăллă, вĕсенче тимлĕ куç паллисем, çĕнĕ сăнавсем сахал мар. «Çакна асăрханă эп. Хăшпĕр писателĕн кĕнекине вулатăн та автор хăйĕн чи çӳлти «тӳпипе» пынине сиссе тăратăн. Унтан çӳлерех, унтан тарăнрах нимĕн те юлман писателĕн. Вăл ку кĕнекене хăйĕн пĕтĕм пултарулăхне панă. Паллах ĕнтĕ, пур енчен те мар пуль, пĕр енчен çеç пуль. Çав кĕнекене кирлĕ енчен тата пăртак çӳлерех хăпармалла пулас пулсан, авторăн сывлăшĕ пӳлĕнĕччĕ, аяларах анма та пĕвĕ çитмĕччĕ». Тĕрĕс калать писатель, сахал мар пирĕн унашкаллисем те. Уяр кĕнекисем вара пирĕн проза тӳпине палăртаççĕ тенĕ пулăттăм эп. «Чĕлхе ăсти», «психолог», «стилист» теççĕ час-часах Хветĕр Ермиловича хăйĕн ĕçтешĕсем. Ку чăн та çапла. Çамрăк çыравçăсене пулăшас енĕпе те сахал мар ĕçлет писатель, вĕсен алçырăвĕсене вуласа, усăллă сĕнӳсем парать. Вĕрентекене час-часах тĕрлĕрен творчество семинарĕсенче курма пулать, проза секцийĕн ĕçне те хутшăнать вăл. Унăн вырăнлă сăмахне, ырă суннине ăша хывма тăрăшаççĕ çамрăксем. «Федор Ермилович мĕн калĕ», «Уяра вулаттарса пăхсан лайăхчĕ» тенисене тĕрлĕ ӳсĕмри çыравçăсенчен илтме пулать.

Польша писателĕ Ян Парандовский писатель ĕçне вăтам ĕмĕрсенчи алхимиксем нимрен ылтăн тума хăтланса асапланнипе танлаштарать. Çак сăнарлă та витĕмлĕ танлаштару сăпай та ĕçчен, пысăк культурăллă писатель-коммунист Федор Ермилович Уяр çинчен шухăшланă май асăма килчĕ. Кунçулĕ те, шăпи те, кĕнекисем те, хăй ӳкернĕ сăнарсем те, килĕнчи пуян библиотеки те — пурте унăн хăйне çеç тивĕçлĕ майлă. Пысăк ăстана нихçан та ремесленникпа арпаштармастăн. Ремесленник килопа, пăтпа виçет таварне е лавпа турттарать. Ăста вара пĕрчĕн-пĕрчĕн, тĕпренчĕкĕн шырать. Вăл чунра шăратать-çке-ха ылтăнне.

Кунçул пӳрнинчен иртеймĕн — кама мĕн панă!

1984

«ФАУСТ» ЧĂВАШЛА

Нимĕçсен генийлĕ поэчĕ Иоганн Вольфганг Гете çырнă «Фауст» трагеди чăвашла пичетленсе тухрĕ.

Кирек хăш чĕлхе пуянлăхĕпе вăйĕ куçарура та витĕмлĕ палăрать. Çакна ĕнентерекен тĕслĕхсем пирĕн поэзире те сахал мар ĕнтĕ. Хăшпĕрисене çеç аса илер: Лермонтовăн «Калашник хуçа çинчен хывнă юрри» (К. В. Иванов куçарнă), Пушкинăн «Евгений Онегин» романĕ (куçараканĕ П. П. Хусанкай), «Борис Годунов» трагедийĕ (Митта Ваçлейĕ куçарнă) тата ытти произведенисем. Куçарăвăн чи пысăк ăсталăхĕпе палăрса тăраççĕ ку произведенисем.

«Фауста» куçараканĕ Наум Андреев (Урхи) профессионал-поэт мар. «Апла пулсан, епле хăю çитерсе пуçăннă-ха вăл çак ĕçе?»—теме пултараççĕ вулакансем. Вĕсене çакăн çинчен ăнлантарма васкамасăр, Гете трагедийĕн хăйнеевĕрлĕхĕ çинчен пĕр-ик сăмах каласа хăварни вырăнлă пуль тетпĕр.

«Фаустăн» пĕрремĕш пайне Гете 1806 çулта, иккĕмĕшне 1831 çулта пичетленĕ. Трагедие автор 1774 çултах çырма тытăннă. XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче пичетленме пуçланă трагеди, Европăри нумай халăхсен искусствипе литературине хăватлăн витĕм кӳрсе, малалла аталанма пулăшнă. Мĕншĕн тесен Гете этем пархатарне, унăн шыракан ăсне мухтать, этемлĕхĕн пуласлăхне ĕнентерет. Этемпе çутçанталăкăн пĕтĕмĕшле аслă çыхăнăвĕ, тĕнче тытăмĕн никĕсри ыйтăвĕсем Гетене канăç паман. Трагеди философиллĕ тарăн шухăшсемпе пуян. Çавăнпа та ăна ытти чĕлхесене куçарма пачах та май килмест тесе шутланă хăй вăхăтĕнче. Çакна тӳрре кăларма йывăр пулман ĕнтĕ çав тапхăрта, мĕншĕн тесен никам та мар, шăпах нимĕç халăхĕ классикăлла философие чĕртсе ярса аталантаракан халăх пулнă-çке-ха.

Вунтăххăрмĕш ĕмĕрĕн малтанхи çурпайĕнче Гете произведенийĕсене вырăсла куçарса пичетленĕ. Нимĕç поэчĕ уйрăмах Пушкина пысăка хурса хаклана, ăна хăйĕн ылтăн перине ярса панă. Пушкин çырнисенче Гете витĕмĕ пурри сисĕнет. Ăнсăртран мар ĕнтĕ Белинский час-часах Пушкина Гетепе танлаштарнă, çав вăхăтрах икĕ поэт пултарулăхĕн уйрăмлăхне кăтартнă. Пушкин чăн малтан туйăмсене хускатса, вĕсене аталантарма пулăшать тенĕ аслă критик. Ку енĕпе вырăс поэчĕ вăйлăрах пулнине палăртнă вăл. «Гетен вăйлă

енĕ — хăватлă шухăш, вăл çутçанталăка ӳкерсе кăтартнипе çеç çырлахмасть, унăн чи шалти, пытарăнчăк вăрттăнлăхĕсене уçма та мехел çитерет»,—тенĕ Белинский. Акă мĕнпе уйрăлса тăраççĕ иккен Гете çырнисем.

Ман шутпа, Наум Андреев (Урхи) «Фауста» куçарнă чух çакна пĕртте асран вĕçертмен. Трагедин шухăш-туйăм тĕлĕшпе калама çук пуян та аслă тĕнчине «чăвашлатас» ĕç çăмăл мар. Сăвă техникипе такмак виçине чухлакан кашни сăвăçшăнах вăйçемми мар ку. Тăхăрвунна çывхарса пыракан Н. Андреев хăйĕн ăмсанмалла пархатарлă пурнăçне чăваш чĕлхин пуянлăхне тĕпчес ĕçе халалланă. Ку енĕпе юлашки çулсемччене ăнăçлă ĕçлерĕ вăл. Анчах та, калас пулать, «Фауст» пек тарăн шухăшлă трагедие куçарнă чух чĕлхе пĕлни çеç çителĕксĕр-ха. Çакă пурнăçа пурăнма мĕн пĕчĕкрен пухнă ăс кирлĕ, тенĕ чăвашсем. Н. Андреев (Урхи) тăван халăхăн ĕмĕрсем пухнă ăс-хакăлне, унăн философиллĕ ăнкарăвне тымартан тĕпченĕ. Çав иксĕлми пуянлăхпа вăл куçару ĕçĕнче усă курнă. Кунсăр пуçне, çакна та палăртмалла. Трагедие куçарма ăна çырнă вăхăтри Германин обществăлла тата политикăлла аталанăвĕн çул-йĕрне, историпе культурăлла лару-тăрăвне, искусствине тĕплĕн пĕлни питĕ кирлĕ пулнă. Куçарăва çак енчен сăнаса пăхсан, Н. Андреев (Урхи) пысăк эрудициллĕ историк пулни те витĕрех курăнать. Вăл оригинал тексчĕн мифологипе, космогонипе, библипе çыхăннă ыйтăвĕсене ирĕккĕн, тĕплĕн ăнлантарать. Куçаруçă авалхи грексен литературине те лайăх пĕлни сисĕнет.

Ку таранччен «Фауста» темиçе поэт те вырăсла куçарнă ĕнтĕ. Вĕсен шутĕнче Соколовский, Холодовский, Пастернак. Н. Андреев (Урхи) вĕсен куçарăвĕсене нимĕç оригиналĕпе танлаштарса пăхса, ăнăçлăрах вариантсем çине ытларах таянса куçарнă. Тăлмач нимĕç чĕлхине ятарласа вĕреннĕ.

Манăн «Фауст» трагедин содержанине каласа парас тĕллев çук, ăна пурнăçлама кунта май та килмен пулĕччĕ. Куçару ăсталăхне тата тĕрĕслĕхне тĕплĕн тишкерсе тухасси те — тĕпчевçĕсен ĕçĕ. Эпир кунта трагеди конфликчĕн кульминацийĕ саманчĕпе çыхăннă пĕр пĕчĕк сыпăка çеç илсе пăхасшăн.

Фауста таса та хăватлă туйăмпа савакан пĕр айăпсăр Маргарита тĕрмере. Тин çуралнă пепкине — пĕрремĕш савăшун телейсĕр калчине — хăех вĕлернĕ иккен вăл. Акă ун патне, ăна çăлас шутпа, Фауст килсе çитет.

Анчах та асап-хуйха пула Маргаритăн тăнĕ арпашăнма пуçланă ĕнтĕ, вăл Фауста палач тесе шутлать:

Кам ирĕк пачĕ-ха сана,
Палач, çапла хĕн кăтартма
мана!
Ирччен пар пурăнма! Тăхта!
Ыран вĕлермелле вĕт! Мĕн ытла
Ирех килсе кĕрен кунта!
Эп çамрăк, çамрăк! Ак ыран ирпе
Сасартăк вилĕп чĕрĕ вилĕмпе!
Чиперччĕ эп, çавна пула
Пĕтетĕп: тусăм пурччĕ çывăхра,
Халь вăл манран пит катара!
Пуç кăшăлĕ арканчĕ, çеçкисем саланчĕç...
Вăйпа ан чăмăрта капла!
Мана сан вилĕмрен çăласчĕ.
Хĕрхен, сана эп ним усал туман,
Хам ĕмĕрте сана пачах курман.

Маргаритăн куçĕсем хăрушшăн йăлкăшаççĕ, вăл хăйпе хăй калаçать. Фаустпа Маргарита пурнăçĕнчи чăн-чăн трагедиллĕ саманта тăлмач оригиналти пекех ӳкерсе кăтартнă. Кунашкал ӳкерчĕксем куçарура тăршшĕпех. Ытараймасăр, пĕрин хыççăн теприне илсе кăтартас килет вĕсене. Вуласа тухсан, кăшт сывлăш çавăрса, шухăшласа ларатăн та çĕнĕрен вулама-киленме пуçлатăн. Ытла хитре, шухăш-туйăма пăлхатакан асамлăх пытарăннă трагедире, çырнă чухнех чăвашла çырнă тейĕн ăна.

Куçару чĕлхи пирки те ятарласа калаçмалла. Мĕн чухлĕ çĕнĕ сăмахпа пуянлатать тăван чĕлхемĕре тăлмач! Унăн шалти тымарĕсене лайăх туять вăл. Чăвашла куçарнă «Фауста» вуланăçемĕн тĕлĕнетĕн: мĕнле-ха ку çĕнĕ сăмахсене Н. Андреевчен (Урхиччен) никам та асăрхаман е «çуратман»? Манăça тухма ĕлкĕрнĕ сăмахсене те, вырăнти калаçу лексикине те вырăнлă, пĕлсе ĕçе кӳлнĕ куçаруçă.

Чăн та, тĕнче литературин тӳпинчи произведение куçарасси яп-яка та тип-тикĕс пулса пыраймĕ, кунта уйрăм çитменлĕхсем тупăнаççех. Çав çитменлĕхсем ытларах сăвă техникипе çыхăннă (куçаруçă профессионал-поэт мар терĕмĕр-çке). Сайра хутра ритм такăнни тĕл пулкалать е ытти çакнашкал вак-тĕвек. Тен, çĕнĕ сăмах енчен хăшĕ-пĕрисем вăхăт савипе саваланиччен кăштах туратлă-йӳплĕ пекрех туйăнĕç. Анчах та çав кăлтăксем куçару ĕçĕн пахалăхне нумаях чакармаççĕ.

«Фауст» трагедие чăвашла вуланă май тăван чĕл-

хемĕр хăвачĕпе мăнаçланас туйăм çуралать. Çакă вăл тăван культурăмăрăн ӳсĕмĕ. Чикĕ леш енчи ырсунмансемпе идеологилле тăшмансем хамăр çĕршыври чăваш пек вак халăхсен культурин çитĕнĕвĕсене паян кун та чакарса кăтартасшăн-ха. Вĕсем тем тĕрлĕ суя сăмах та сарма хатĕр. «Пĕлесчĕ, Пушкинăн форми енчен илемлĕ те ритм тĕлĕшĕнчен кĕвĕллĕ поэмисем бурятмонгол, коми, якут тата чăвашăн кăнттам чĕлхипе куçарсан мĕнле пулса тухнă-ши?»—тесе «тĕлĕннĕ», сăмахран, французсен Андре Пьер текен буржуаллă çыравçи вăтăр çул каялла. Мул хуçисен çакăн йышши тарçисем хăйсен хура ĕçне паян кун татах та чеерех тума тăрăшаççĕ. Вĕсене пирĕн çитĕнӳсем канăç памаççĕ, вĕчĕхтереççĕ. Ан тив, юрлаччăрах хăйсен кивелнĕ юррине. Пирĕн улăпла утăмсене вĕсем пурпĕр чараймаççĕ.

Пултарулла тăлмач, чĕлхеçĕ, сăпай та ăшпиллĕ çын Н. Андреев (Урхи) «Фауста» чăвашла куçарса, хăйне валли ятран тенĕ пекех палăк лартса хăварчĕ. Куçаруçă-ăсчах нумаях пулмасть тăхăрвуннăран иртсе, çĕре кĕчĕ. Унăн ячĕ тăван чĕлхемĕр пурăннă чухне манăçмĕ.

1979, 1986

ЙЫХĂРСАН ИНÇЕТЕ КĔРЕН ПАРĂС

Хальхи вăхăтра, шкул реформине анлăн пурнăçа кĕртсе пынă тапхăрта, тăван чĕлхепе тăван литературăна вĕрентес ĕçĕн пĕлтерĕшĕ нихçанхинчен те пысăк. Апла пулсан, илемлĕ литература ăстисен умне самана пысăк задачăсем çине-çинех кăларса тăратать. Мĕншĕн тесен чуна парса, пысăк ăсталăхпа вĕрентмелли литература хăй те пуç таймалла пысăк пулмалла. Шкулпа литература хушшинчи çыхăнусене тачăлатасси — хальхи пурнăç хистевĕ. Мĕнле сывлать паянхи шкул? Çĕнĕ варкăш сывлăшĕ хуçаланма пуçланă-и унта? Вĕренӳ ĕçне çĕнĕлле йĕркелесси мĕнлерех пырать? Тăван чĕлхепе литературăна вĕрентесси кирлĕ пек пулса пырать-и? Нумай-нумай ытти ыйтусем те шухăшлаттарма тивĕçлĕ çыравçăсене. Майĕ-мелĕсем те сахал мар вĕсен: сăнарласа ӳкерсе те, публицистикăлла çивĕч статьясемпе очерксенче те калама пултараççĕ хăйсене мĕн савăнтарнипе пăшăрхантарнине, чуна ыраттар-

нине. Тӳрех калас пулать, халлӗхе пирӗн чӑваш çыравçисем çителӗклӗ таран тимлемеççӗ-ха шкул темине. Ку ӗç малашне те çаплах пулса пырсан, инерципе кайсан, нацилле чӑваш литературин хевти чакма тытӑнмӗ-ши? Кунта чӑн малтан мана ак мӗн шухӑшлаттарать. Инженерсемпе тухтӑрсем те, экономистсемпе космонавтсем те тата ытти нумай-нумай специалистсем те кирлӗ çӗршыва. Анчах та кунпа пӗрлех чӗлхепе кӗвӗ-юрӑ ӑстисем те, художниксемпе сӑвӑçсем те малашне те тухсах пыччӑр тӳсӗмлӗ те ӗçчен чӑваш халӑхӗ хушшинчен. Нумайӑшӗ вӗсенчен паян шкул парти хушшинче лараççӗ-ха, пӗлӳ пухаççӗ. Культурӑпа экономика аталанӑвӗ вӗсенчен килӗ малашне. Илемлӗ, сӑнарлӑ, янравлӑ чӑваш сӑмахӗпе коммунизма пырса кӗрер, тенӗччӗ Петӗр Хусанкай. Хамӑр çӗршыври тӑванла культурӑсем аталанса, кулленех илемленсе пынӑ чух Çеçпӗлпе Хусанкай шанчӑкне факел пек йӑтса пуласлӑха талпӑнасси— пурсӑмӑрӑн тивӗçӗ те.

Писатель кӗнекине вуласа, эпир пурнӑç пирки шухӑшлатпӑр, автор пире мӗнпе те пулин пулӑшасса кӗтетпӗр. Çавӑнпа та кӗнекери сӑнарсен чӑнлӑхне пурнӑç чӑнлӑхӗпе тӗрӗслетпӗр. Çав чӑнлӑхсӑр кӗнеке авторӗн ӗçӗ ним тума та кирлӗ мар. Коммунизма çывхарса пынӑ май этем факторӗн пӗлтерӗшӗ ӳссех пырать. Çавӑнпа та ӗнтӗ пирӗн общество уменчи чи пысӑк задачӑсенчен пӗри вӑл — ӑстаӈӗпе те, ӳт-кӗлеткипе те килӗшӳллӗ, лайӑх аталаннӑ граждансене пӑхса çитӗнтересси. Паян яслие е ача садне çӳрекен ачасенчен кашниех пысӑк саспаллипе çырӑнма тивӗçлӗ Гражданин пултӑр. Пулас ӑрусен «тӗкӗрне» пӑхса, эпир пулас литература шӑпине курма тивӗç. Сӑмахран, ача сачӗсенче чӑвашла калаçма хӑнӑхтарасси мӗнле йӗркеленсе пырать-ха пирӗн? Уйрӑмах — хуласенче? Çакӑн пирки шухӑшланӑ май, Чингиз Айтматов нумаях пулмасть «Литературная газета» хаçатра пӑшӑрханса каланӑ шухӑшсене тепӗр хут асилтересшӗн. «Фрунзере кӑркӑс шкулӗсен шучӗ пӗртте ӳсмест, çав вӑхӑтрах çӗршер çӗнни лартаççӗ. Республикӑн тӗп хулинче кӑркӑс чӗлхиллӗ ача сачӗсем уçма тахçанах вӑхӑт çитнӗ. Çакна пурнӑçлама никам та чармасть ӗнтӗ, анчах кам та пулин ӗçшӗн хыпӑнни те сисӗнмест. Хальхи лару-тӑрусенче çак ыйтусене татса пани халӑхшӑн шутсӑр пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулни каламасӑрах паллӑ-çке. Харкам хӑйӗн базисӗр мӗнле наци культури пулма пултартӑрха»,—тет çыравçӑ. Чӑн-чӑн интернационалист, тӗнчипе

паллă литератор Ч. Айтматов ленинла наци политикипе Конституци гарантилекен танлă та ирĕклĕ правасем пирки çеç калать-çке-ха кунта. Хамăра илсен, пире валли те тем чухлех çакăнта шухăшласа пăхмалли.

Саманипе пĕрлех этемĕн ăскăмăлĕ те, чунĕ те кăткăслансах пыраççĕ. Илемлĕ литература, самана тĕкĕрĕ пулнă май, çĕнĕрен те çĕнĕ задачăсем умне пырса тухать. Чи йывăр çĕклем чи талантлисем çине тиенет. Теприсем вара тахçанах кивелнĕ сăнарĕсене кĕнекинчен кĕнекине сĕтĕреççĕ, çĕр хут та каланă шухăшсене «чăмлаççĕ». Хăшпĕр чухне писатель çырни, вăхăтăн вĕтĕ али витĕр тухса, çĕнĕрен çуралнă пек, тăван культурăн ылтăн çӳпçине кĕрсе вырнаçать. Вăхăтсăр çĕре кĕнĕ Юрий Скворцов шăпах çавнашкал çыравçăсенчен пĕриччĕ. Вăл ытларах çитĕннисем валли çыратчĕ пулин те, ăна ача-пăчан юратнă писателĕ теме май килет. Ун калавĕсемпе повеçĕсенче чылай чухне шкул пурнăçĕ тарăн сăнланатчĕ, ачасен шалти туйăмĕсене, вăрттăн пурнăçне уçса пама пултаратчĕ автор. Çакнашкаллисенчен пĕрне, «Славик» ятлă калава, «Хатĕр пул» вулаканĕсемпе пĕрле васкамасăр вуласа тухас шухăш пур. Вăтам тата аслă классенче вĕренекенсем валли çырнă «Хĕрлĕ мăкăнь» повеçре те кăмăла тытăнлакан асамлă илем сахал мар. Вăл нумаях пулмасть Мускавра вырăсла пичетленсе тухрĕ.

«Славик» калав чăваш литературинче çеç мар, авторăн хăйĕн пултарулăхĕнче те кăшт уйрăлса тăрать. Çапла калани тĕрĕс пулнине мĕнпе çирĕплетсе пама пулĕ-ши? Акă, эппин, чăн малтан калав геройĕн, Славикĕн, сăнарне тимлĕнрех сăнаса пăхăпăр. Вунтăватă çулхи Славик, хулари музыка училищин иккĕмĕш курсне тин çеç пĕтернĕскер, консерваторие вĕренме кĕме хатĕрленет. Композитор пулас ĕмĕт хавхалантарать ачана; музыкăн универсаллă хăватлă чĕлхине туять те, шанать те вăл. Сăмахпа калайманнине фортепьянăпа е сĕрме купăспа ĕнерсе асапланать, чун кĕввине куçарма хăтланать. Вĕçĕ-хĕррисĕр, çырлаху кӳмен асап ĕнтĕ ку. Чăваш прозинче Ю. Скворцовчен çакнашкал психологизмла «эксперимент» тума кам та пулсан мехел çитернине астумастăп эпĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ писатель пултарулăхĕнче музыка мĕнле вырăн йышăннине ятарлă тема лартса тĕпчени те вырăнлă пулĕччĕ. Славик чун-чĕринче кĕвĕ çуралнине, вăл кăмăл çуначĕсемпе çĕкленсе, пĕр пысăк илем тĕнчи пулса тăнине психологизмла тарăнлăхпа, витĕмлĕ сăнласа кăтартать

автор. Пирвайхи çĕнĕ юрăн шап-шурă тасалăхĕ пур çав çепĕç кĕвĕре, анчах та ăçта-ши ун пуçламăшĕ, ăçтан килсе ӳкрĕ вăл ача чунне, ăна пăлхатса та тухатса? Халлĕхе уçăмлă мар-ха вăл, тин çеç чун тĕпĕнчен сăрхăнма пуçланă. Славик аса илет: ирхине çенĕке тухнăччĕ... Юнашар шурă кĕпеллĕ хĕр иртсе кайнăччĕ, çавăнтан варкăшса юлнăччĕ иккен хир фиалки шăрши. Чечек шăршипе музыка хушшинче мĕнле çыхăну пурри Славике шухăшлаттармарĕ ытлашши, халь вăл пĕтĕмпех асăмлă кĕвĕ тыткăнĕнче. Автор калаври музыка темине юрату темипе пĕтĕçтерсе тарăнлатать: Славик чĕринче кĕвĕпе пĕрлех пирвайхи таса юрату та çуралать. Тĕрĕсрех каласан, тен, кĕвви хăй те юрату туйăмĕнчен хĕлхем илсе амаланса каять. Ан тив, çитĕннисен куçĕпе пăхсан, кăшт айванлăх та пур пек туйăнĕ ача çавăн пек хăтланнинче. Вăл чăн-чăн романтик, хăйĕн ĕмĕтне кăвар кайăка хăвалană пек хăвалать. Пурăнса курнисен, ав, хăйсен хуйхи-суйхи, тĕллевĕ-ăнтăлăвĕ, вак-тĕвек кулленлĕх «серепинчен» хăтăлайманни те пур. Славик, курăсăн, çав «ваклăхран» инçетре, вăл çутă ĕмĕтсен çутă тĕнчинче, кĕрен парăссем еннелле туртăнать. Çĕр çинчи кулленхи пурнăç урапин кустăрмисем вара яланхи йĕрпех чупаççĕ: Эльвирăпа Георги акă мăшăрланма хатĕрленеççĕ. Вĕсен хутшăнăвĕнче темле вăрттăнлăх пурах Славикшĕн: чăн-чăн таса юратăвах-ши ку е çынран катăк пулас мар тесе, ĕмĕрхи йăлана пăхăнса тунă утăм çеç-ши?

Кунта каллех эпир Ю. Скворцов психологизмĕн тарăнлăхне туйса илетпĕр. Акă, курăр-ха, çывăхланнă Эльвирăпа Георги çыхăнăвĕсене мĕнле сисĕмлĕн, шалтан çутатса кăтартать вăл. Хĕрпе каччă, хăйсене тĕллĕн çеç илсессĕн, кăсăклантармаççĕ те тейĕн автора: Славикĕн барометр пек сисĕмлĕ чунĕ туйтарать пире, вулакансене, кашнийĕн кăмăл-туйăм пахалăхне, хăйне майлă еккине те. Эльвирăшăн Славик — тасалăх символĕ, юмахри принц. Ача куçне тинкерсе пăхас-тăк, хĕр хăй Георгие чун-чĕрипех парăнса савваннине те, хăй чĕрине кавча тухма ирĕксĕрленине те ăнланса илме пултарĕччĕ — йăлтах çырнă унта. Чăннипех пĕрешкел çывăх чунсем мар Эльвирăпа Георги. Хĕр кăмăлĕ уçăрах та ăшпиллĕрех пулас. Акă пĕчĕк çеç деталь. Сăмах май каласан, Ю. Скворцов шутсăр витĕмлĕ детальсемпе усă курма пĕлет. Çакна тин çеç çӳлерех асăннă хир фиалкин шăрши те çирĕплетсе парать. Е акă, вăрманта Славикпе Эльвира кăпчанкă тĕми айĕнче кайăк

йăвине асăрханине илер. Тĕлĕнмелле ӳкерчĕк ку. «Славике пуринчен ытларах чĕпĕсене кăтартнă чух хĕр епле çуталса-кăмăлланса кайни, ун пичĕ-куçĕ епле хĕм сапни тĕлĕнтерчĕ». Акă вăл Славик уçайман вăрттăнлăх. Эльвира хĕртен хĕрарăм пулса, хăй те ача çуратма хатĕрленет (çутçанталăк пăнă инстинкт), тен, çак сар сăмсаллă чĕпĕсенче хăйĕн пулас пепкине курать вăл. Акă чĕпĕсемпе йăпанакан Эльвира, çывăхра ура сасси илтĕнсен: «Георги килет... Ăна ан кăтарт. Илемсĕр халь вĕсем... Вăл кулма пултарать»,—тет. Мĕншĕнха хĕр хăйĕн каччине шанмасть? Тен, Георги чунĕ кăнттамрах, савнийĕ унран çак пĕчĕк вăрттăнлăха та пытарать пулсан.

Ю. Скворцов пурнăç пулăмĕсене çиелтен ӳкерсе кăтартнипех çырлахмасть, вĕсене тымартан тĕпчет, шала кĕме тăрăшать яланах. Çавна пула ĕнтĕ вăл ӳкерекен сăнарсен характерĕсем кăткăс, чĕрĕ çынсенни пекех ĕнентерӳллĕ. Скворцов-художник этемĕн шалти е тулашри сăнсăпатне схемăлатасран асăрханни паха, чылай кĕнекесенче тĕл пулакан хура тата шап-шурă сăрсемпе çеç сăрланă кĕлетке-портретсене вăл, паллах, сивленĕ. Калав кульминацийĕ хĕрсе çитнĕ саманта сăнланинче те сисĕнет, сăмахран, ăста психолог аллин йĕрри. Акă вăл хайхи кĕтнĕ туй. Пĕчĕк йĕрсемпех драматизмла саманта чĕртсе тăратать автор. Эльвира чунĕ ĕсĕкленине фортепьяно каласа туй халăхне ташлаттаракан Славик сисĕмлĕн туять, анчах мĕншĕн-ха, мĕншĕн хĕр куççуль витĕр кулать, хавассăн курăнма тăрăшать? Кĕрсе пăхаймасть-çке-ха Славик хĕр чунне, пĕлеймест унта мĕн пулса иртнине. Пурах-тăр çав сăлтавĕ йĕме, унсăрăн ма-ха качча тухакан мĕн авалтанах хĕр ĕмĕрĕпе, чĕре чечек пек çурăлнă тапхăрпа хӳхлесе сывпуллашнă? Славикшĕн пулсан, Эльвира çеçкери çĕмĕрт вулли пек, шап-шурă пĕркенчĕк тăхăннăскер — хăй ĕмĕчĕсемпе лăпкаса, ачашласа çуратнă сăнар. Пӳрнепе сĕртĕнме те хăю çитермелле мар пек ăна. Анчах та, кур халĕ, «Георги ташланă хушăрах аяккалла тинкернĕ хĕре питĕнчен чуптуса илчĕ. Эльвира карт! сиксе хирĕç пăхрĕ». Славикĕн çакăншăн кĕвĕçме сăлтав çук та темелле, анчах та...

Ĕмĕт тӳпинче ярăнса вĕçекен кайăка персе ӳкернипе пĕрех ку уншăн. Çапла çав, чыспа тасалăх ăнланăвне те çĕр çинчи пурнăçран илмен-тĕр вăл. Çуначĕсене те ĕнтсе курман-ха чечек çинчен чечек çине вĕлтĕртетсе вĕçекен лĕпĕш. Тинех ĕнтĕ калавăн сӳтрĕмĕ патне илсе

çитерчĕ автор. Çумăр пĕлĕчĕсем капланса, тавралăх хуралса килчĕ тейĕн тăруках. Акă аслати кĕрслеттерчĕ мар-и, çиçĕм йăр-ярлатрĕ. Унтан пĕр тикĕс ăшă çумăр чашлаттарма пуçланăн туйăнчĕ. Ташлакан, савăнăçлă, хуйха маннă халăх ăнланса иличчен, Славик картишне тухса вирхĕнчĕ. Мĕн пулса иртрĕ-ха? Акă мĕн курать вăйăçа шырама пахчана тухнă Эльвира.

«Славик пахча хыçĕнчи пысăк хурăн вуллине хăрах аллипе ыталанă та, тепĕр алă туни çине пуçне хурса, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтренсе тăрать». Вăл пичĕ тăрăх йăрлатса кусса анакан куççульрен те вăтанмасть ĕнтĕ тинех. Хăйĕн туйăмĕсенчен мăшкăлланă пек, вĕсене таса мар урапа таптанă пек йышăнчĕ вăл юлашки самантра пулса иртнине пĕтĕмпех. Тата хăйшĕн çеç те мар, Эльвирăшăн пăшăрханса намăсланчĕ пулас вăл.

«Мĕн тери хаяр эсир!—терĕ вăл сасартăк...—Эсĕ те çавсен хушшинче! Мĕн тупрăн эсĕ çавăн пек пушă этемре»? Айăплу сăмахĕсем кусем, хăйне тивĕççĕр шайри Георгие качча тухнишĕн те, чун-кăмăл тасалăхне, шăнкăрти çăлкуçне пăтратнă пек, упраса çитерейменшĕн те тивеççĕ Эльвирăна çак сăмахсем. Сисет хĕр вĕсенче тĕрĕслĕх пуррине. «Мана çапах та хĕрхен эс... Ан вăрç [illegible]